Т 33
9537. чув.





ИВАН ТЕНЮШЕВ

# ҪЫХМАН ҪАПĂ ШĂПĂР МАР





Национальная библиотека ЧР
4-009537

3

ЛИСТОК СРОКА ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач

95 37. чув

Иван Тенюшев

# Ҫыхман ҫапă шăпăр мар



ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1965

ПРОВЕРЕНО
20 __ 13 СЕН 2007
9537 чув
Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР



# Усӑк хӑлхасем

Ял ҫыннисем паян-ыран туй пуласса кӗтетчӗҫ. «Ялта водопровод тумасӑр авланмастӑп-ха, арӑмӑн ҫинҫе пилӗкне шыв кӗвентипе авмастӑп»,— шӳтлетчӗ колхоз электрикӗ Кӗҫтук. Чӑнах та, водопровод туса пӗтерчӗҫ кӑна, туй хыпарӗ яла сарӑлчӗ те. Кӗҫтук Раис фельдшерицӑна качча илме шутлани ҫинчен ҫынсем ырласа калаҫрӗҫ. «Ҫӳпҫи те лайӑх, хупӑлчи те аван. Йышне кура хурӑнташ: иккӗш те пултаруллӑ»,— текелерӗҫ ватӑсем.

Хӗр ашшӗ Хветут мучи лайӑх кӗрӳ тупӑннӑшӑн савӑнчӗ, Хветура аппана вара ялти ятлӑ хӗрарӑмпа хурӑнташланасси хӗпӗртеттерчӗ. Пулас кӗрӳ амӑшӗ — ялти чаплӑ ҫын-ҫке-ха. Вӑл сыснасем пӑхать. Ял ҫеҫ мар, Кулине инкене Шупашкар та пӗлет ӗнтӗ. Нумай пулмасть вӑл Пӗтӗм Союзри выставкӑна кайса курчӗ. Мускавран таврӑнсан вара клуба пухӑннӑ колхозниксене мӗн курса ҫӳренисем ҫинчен каласа пачӗ. Вӑл каланӑ тӑрӑх, Латви ССРӗнчи Фридрихсоне ятлӑ пӗр хӗрарӑм сысна амисене ҫулталӑкра виҫӗ хутчен ҫӑвӑрлаттарать-мӗн, пӗр амаран 44 ҫура илсе ӳстернӗ иккен.

— Паллах, унашкал пирӗн те тума пулать,— терӗ Кулине инке.

— Тумалла ҫав!..— вӑртах сиксе тӑчӗ ун чухне хыҫалти ретре ларнӑ Хветура аппа.

— Эс трибунӑ патне ирт-ха, трибунӑ патне,— асӑрхаттарчӗҫ ӑна президиумрисем. Анчах Хветура аппа ӑна-кӑна итлесе тӑмарӗ, сӑнне колхоз председателӗ пухура доклад тунӑ чухнехи пек хаярлатрӗ те сӑмахне малалла тӑсрӗ:

— Пирӗн пурин те Кулине пек ӗҫлес пулать. Унсӑрӑн мӗнле-ха... Пурте пӗр тикӗс ӗҫлемелле. Кулине выльӑха

юратса пăхать, çампа ун ĕçĕ ăнать те. Асăрханă-и эсир вăл килти пăрушне кĕтĕве епле хăнăхтарнине? Асăрхаман пуль çав. Пăхасса ăна пурте пăхаççĕ, курма вара пуртех курмаççĕ Çуркунне пирвайласа кĕтӳ хăваланă чухне пăру хыççăн чупса кам хăшкăлман пуль... Кулине вара кĕтӳ хăвалама нихçан та патак тытса тухмасть, çамрăк выльăха хăй хыççăн ертсе пырать. «Ан юл манран, Чернуш»,— тет вăл йăваш сасăпа пăрушне. Чернушĕ вара, хуçине хăнăхнă ăслă йытă евĕр, Кулине хыççăн пĕр утăм юлмасăр пырать. Кулине фермă сыснисене епле пăхнине курасчĕ эсир... Выльăха юратмалла çав ăна, юратмалла, вара тин вăл алла пăхакан пулать...

Хветура аппа ку сăмахсене каланăранпа Пăлара шыв нумаях та юхса иртеймерĕ — Кулине хăй ывăлĕпе пĕрле ун килне хĕр килĕшме пырса кайрĕ.

Кĕçтукăн çывăх юлташĕ Кĕркури туй ячĕпе хăйсен килĕнчи пурăнас йытта вĕлерсех пăтти-патти параппан тунă, тет. Те ку упи-супи сăмах кăна, те чăн, анчах усăк хӳреллĕ Хураçка юлашки кунсенче пач курăнми пулчĕ. Шел шеремет йыттине, ытла та лайăхчĕ, ыр çын сурăхĕ пекех йăвашчĕ, пĕр кĕрсе выртсан, крыльца айĕнчен туха та пĕлместчĕ, ют çын кĕрес-тухас пулсан та, хăр-хам тесе сас памастчĕ. Хураçкинчен те ытларах Кĕркурие хăйне шел. Вĕренеймест-çке купăс калама, апăрша! Вăййа тухсан та, туя-мĕне кайсан та, вăйăçăран пĕр утăм хăпмасть, çапах купăс майне-шывне тавçăраймасть, çемми çемĕ пулаймасть, кĕвви кĕвве кĕреймест. Çамрăксем хăйне ĕнтĕ шӳтлесе «вăйăçă ассистенчĕ» тесе тăрăхлакан пулчĕç. Купăс калайман вырăнне Кĕркури чĕкеç юррине ытла та лайăх ӳкерсе илнĕ. Вăл чăх сăхса ĕлкĕрмелле мар хăвăрттăн: «Пĕчĕкçеççĕ питлĕ-куçлă, эреветлĕ-теветлĕ, хӳри вĕçне туй килнĕ, çийĕ-пуçĕ чăп-чăпар-р-р!» тесе калама пуçласан, шăп та лăп чĕвĕлти чĕкеç юрри пулса тухать. Маттур йĕкĕт çав Кĕркури, кутăруçăн ав Кĕçтукпа пĕрле электростанцие çӳреме пуçларĕ, электричествăна пушкарасшăн, электрик пулма ĕмĕтленет. Юлташăн туйне каяс ĕмĕт кăна таталчĕ ун.

Хĕре çураçса, тепĕр эрнерен туй тума та палăртса хунăччĕ ĕнтĕ. Анчах инкек-синкек куçа курăнса килмест çав, тепĕр чух ура айĕнченех siксе тухать. Куншăн Хветут мучи те мар, Хветура аппа айăплă. Хветут мучин кăмăлĕ катса çиес сар çу пекех. Хăй каларĕш, вăл, ку таран пурăнса, чăх ури те хуçса курман. Пĕр кун Кулине

инке шыв арманне кайсаччĕ. Инкен черечĕ Хветут мучи хыççăнччĕ.

— Эсĕ кĕрсе ларах арман пӳртне, черет çитсен, хамах кĕрсе чĕнĕп,— тет ăна ăшшăн Кулине инке.

Вара Хветут мучи арман пӳртĕнче ĕлĕкхи çинчен тем вăхăтченех пуплесе ларнă.

— Пĕлместĕр çав эсир ĕлĕкхине,— тенĕ вăл ӳпкелесен сасăпа.— Пирĕн касса «Кукăр хӳре касси» тетчĕç. Вăл касса пуçлаканни, тăпри çăмăл пултăр, ман хамăн асатте Пракахви пулнă. Вăл, аран-аран хăртакаласа, мунча евĕрлĕ хура пӳрт лартнă, ал чăмăрĕ кĕмелĕх пĕчĕк тĕнĕ каснă. Шурă пӳрт, хура пӳрт, çил хапха сăмаххисене мантăмăр ĕнтĕ халь. Эх, çав ĕлĕкхи пурнăç... Асаттен выртса тăма тӳшек харри пулман, тухса кĕме типтер тумтир пулман. Выльăх-чĕрлĕх усрама мар, кил картийĕ пулман иççук. Мĕн пур выльăхĕ те пĕр ускăн йытă кăна пулнă. Пĕр çуркунне асаттен шăл хушшине хумалли пĕтсе çитет. Выçăпа аптрать апăрша. Вара килĕнчи пĕртен пĕр чĕрчуна та пусса çиет. Техĕмĕ пулман, паллах, вăл какайăн, иттуш çинĕ. Çакăн хыççăн вара вăл никĕсленĕ касса та «Кукăр хӳре касси» теме пуçланă. Хăй ĕмĕрĕнче асатте тăраниччен çăкăр çисе курайман. Çапла пĕр телейсĕрех çĕре кĕнĕ...

Кулине инке çирĕм пăт ыраш, вунă пăт тулă авăртса пĕтеричченех халапа çапса ларнă Хветут мучи. Старик тухманнипе Кулине инке хăй хыççăн кумăшне пĕрме тулли тулă тултарттарнă. Çав вăхăтра тин старик арман пӳртĕнчен мĕшĕлтеткелесе тухнă.

— Ну, Кулине, эпĕ авăртам та, вара эсĕ авăртăн,— тенĕ вăл. Кулине инке хи-хи-хи! кулса янă.

— Эпĕ авăртрăм ĕнтĕ, халь вăн кума авăртать, вара эсĕ авăртăн,— хуравланă вăл Хветут мучие.

Мучи, эккей! текелесе, пĕççине кăна шарт çапса илнĕ, пĕр сăмах та шарламан. Каларăм-иç, кăмăлĕ лайăх ун. Хăйĕн карчăкне Хветура аппана та нихçан усал сăмах каламасть. Пĕррехинче кăна сассине кăштах хăпартма тивнĕ. Пурăнан пурнăç пĕр пăрнăçсăр пулмасть ĕнтĕ. Карчăкĕ ирхи апата çăкăр касса хунă та: «Ку малти пулмалла, тачкарах пиçнĕ»,— тенĕ. Кăнтăрлахи апатра: «Ку кайри пулас, çунарах кайнă»,— тӳрре тухма пăхнă карчăк. Хветут мучи вара чăтайман, карчăкĕнчен çилĕллĕн çапла ыйтнă: «Ялан малти те кайри санăн, варринчине хăçан çитеретĕн?»

Ял хушшинче Хветура аппана шăрчăк хĕрарăм теççĕ, теприсем тата вĕтĕрти тенине илтме пулать. Таçтан шутласа кăларнă унашкал сăмаха, тĕлĕнмелле. «Тет» сăмахăн теçетки те çур пус тăмасть, теççĕ, çапах хам илтнине каламасăр хăварам мар. Пĕррехинче хирти пăрçа çине сапмалли темле им-çамсем илме Хветут мучи район центрне колхоз агрономĕпе — çырла пек чипер хĕрпе юнашарах ларса кайнă имĕш. Кайран вара Хветура аппа кĕвĕçнипе Хветут мучие тип мунча кĕртнĕ пулать. Çилли сĕврĕличчен курнăçма тивнĕ пулсан, хĕре те ăшши-пăшши çакланатчех, теççĕ. Анчах эпĕ тĕрĕссипе епле пулнине пĕлместĕп, çын сăмахĕ тăрăх ĕнентерсе калас йăла çук ман. «Тет» сăмаха ĕненес-тĕк, пирĕн касри ĕлĕк манашкăра çӳренĕ Униççе карчăк пĕр чăхха çичĕ яшка тунă пулать.

Эпĕ çакна лайăх пĕлетĕп: ватăсене пĕрне — кăштăрти старик, тепĕрне вĕтĕрти карчăк теççĕ пулин те, ялта пысăк хисепе хураççĕ, ма тесен — ĕçчен тата тӳрĕ кăмăллă çынсем вĕсем. Сатур этемсем. Кăçал икĕ ватă улт çĕр ĕç кунĕ турĕç. Улт çĕр ĕç кунĕ — ку колхозра пысăк пуянлăх. Хветут мучие тĕл пулсан, правлени председателĕ Михаил Петрович та сума суса ăшшăн сывлăх сунать, лутакарах кĕлеткеллĕ Хветут мучи вара çĕлĕкне хывса пуç тайнипе ответлет. Çук, начар çынсем мар ку ватăсем, килне кĕрсен — кĕреке тулли сăй пур, яла тухсан — ырăпа асăнма ырă ят пур. Мĕн тĕрĕс, çав тĕрĕс, чăн сăмахăн суйи çук, тӳрĕ сăмахăн кукри çук.

Пулас тăхлачăсем хушшинче хирĕçӳ пачах кĕтмен çĕртен тухрĕ. Эх, çав усăк хăлхасем! Хветура аппа вĕсене курас мар-тăк, нимĕнле хирĕçӳ те пулмастчĕ, ахăр. Фермăра колхозниксене сысна çурисем сутасси çинчен колхоз радиоузелĕ урлă пĕлтерсен, Хветура аппа, хирти ĕçрен тинрех таврăннăскер, килĕнчен хаваслă кăмăлпа тухрĕ. Пулас тăхлачинчен чи лайăх çурасем ним чăрмавсăрах туянса килесси пирки вăл пĕртте иккĕленмерĕ.

— Кăтартсам-и ĕнтĕ, Кулине, хăш çурасене туянма пулать? Ман Хветут мăшăрĕпе ӳстерме шутлать-ха,— терĕ вăл Кулине инкене ăшă сăмахсемпе сывлăх суннă хыççăн.

Сысна амисене хупнă пӳлмĕксем çумĕпе Хветура аппа Кулине инкепе пĕрле мăнаçлăн пăхкаласа утрĕ. Хветура аппа — кăвак çитсă кĕпе, Кулине инке — кăвакпа пĕветнĕ пӳс халат тăхăннă, иккĕшĕ те шурă тутăр çыхнă. Хы-

çалтан пăхсан, вĕсене амăшĕпе хĕрĕ теме пулать: Хветура аппа, çинçе те лутра кĕлеткеллĕскер, çирĕп шăмшаклă Кулине инкен хул пуççийĕ çÿллĕш кăна. Лутри, чĕвенерех утаканни — хĕрĕ ĕнтĕ, шухăшласа илетĕн ирĕксĕрех. Анчах сăнпа танлаштарсан, Хветура аппа — амăшĕ пек, Кулине инке ун хĕрĕ пек пулса тухать: Хветура аппан типшĕм пичĕ пĕркеленнĕ ĕнтĕ, Кулине инкен пичĕ вара тулли-ха, сăнĕнче юн тĕсĕ çиçет. Тĕрĕссипе, вĕсем — иккĕш те пĕр çулалли хĕрарăмсем.

Хветура аппа куçĕсем вăл кунти йĕркелĕхпе кăмăллă пулнине палăртрĕç. Вăл йĕркесĕрлĕхе чăтма пултараймасть. Ун пÿрчĕн ăш-чикĕ кирек хăçан та тирпейлĕ, кантăк каррисем юр пек шурă, кăмаки çуталса кăна тăрать, сентре çинчи савăт-сапа тап-таса. Унашкал çурта пырса кĕме те кăмăллă. Хветура аппа витере хăй юратакан йĕркелĕхе курчĕ. Кунта та таса, çутă. Стенасене, маччана, пÿлмĕксене шур тăмпа шуратнă, бетон урайне пăчкă кĕрпи сарнă, ура айĕнче вăл пÿлмери вир пек чăштăр-чăштăр тăвать.

— Епле-ха апла: урай та типĕ, сывлăшĕ те нÿрлĕ мар? — тĕлĕнчĕ Хветура аппа.

— Э-э, эс ав мĕн пирки,— тăруках тĕшмĕртсе илеймерĕ ун ыйтăвне Кулине инке.— Халь сыснасене кивĕ витере тăрантаратпăр, вĕсем валли хăйне евĕр столовăй уçрăмăр. Ҫапла тирпейлĕрех.

Кулине инкен хĕрĕнни пек хĕмлĕ куçĕсем чăл-чăл çунаççĕ, вĕсем пÿлмĕксенчи сыснасем çине ăшшăн пăхапăха илеççĕ: «Кур, çак чунсене эпĕ çитĕнтеретĕп»,—тенĕнех туйăнаççĕ. «Куратăп, лайăх куратăп, ахальтен мар ĕнтĕ сана Мускава выставкăна ятăмăр»,— хуравлаççĕ ăна Хветура аппа куçĕсем.

Кунта пÿлмĕксем ретĕнех. Кашни пÿлмĕкрех ама çумĕнче тап-таса та чăп-чăмăр çурасем йăшăлтатаççĕ, ачашшăн năриклете-năриклете илеççĕ. Акă, Хветура аппа, пĕр пÿлмĕке кĕрсе, пĕчĕк çурана аллине тытрĕ те унăн хĕп-хĕрлĕ «пилĕк пусне» пÿрнипе тĕксе пăхасшăн пулчĕ. Сысна çури кăмăлсăрланнăн năрик-năрик çухăрчĕ те Хветура аппа аллинчен вĕçерĕнчĕ тарчĕ. Пулас тăхлачăсем хыттăнах кулса ячĕç. Ытла та илемлĕ çав Кулине инке кулли. Унăн тути кăна мар, пĕтĕм сăнĕ кулать, куç шăрçисем те, пит çăмартийĕсем те тĕкĕр пек йăлтăртатса илеççĕ.

— Ку ман киле пырасшăн мар курăнать! — текелесе, Хветура аппа тепĕр пÿлмĕк патнелле çывхарчĕ.

— Вăт ку сысна-тăк сысна! Çурисем еплерех тата! — тĕлĕнчĕ Хветура аппа.

Пÿлмĕкре теçетке ытла çурасем хушшинче пысăк та çÿллĕ ама мăн кăмăллăн тăрать. Хăй шап-шурă, хăлхисем вăрăм та усăк. Çурисем те шап-шурă, вĕсен те хăлхисем, амăшĕнни пекех, вăрăм та усăк. Кунашкаллисене Хветура аппа халиччен курманччĕ-ха. Ытармалла мар лайăх ку ама çурисем. Хветура аппа вĕсене пĕрре пăхсах кăмăлласа пăрахрĕ те хăйне ик çурине пама ыйтрĕ. Кулине инке пичĕ çинчи йăлтăр кулă тăруках çухалчĕ.

— Кăмăлна йывăра ан ил, Хветура, анчах кусене параймастăп,— терĕ вăл çирĕппĕн.

Хветура аппа куçне чарсах пăрахрĕ, сайралса юлнă куç харшийĕсем çÿлелле çĕкленчĕç, пит çăмартийĕсем çине пăт-пăт хĕрлĕ ункăсем сиксе тухрĕç.

— Ак тамаша, пирĕншĕн сысна çури те шел эппин,— терĕ вăл пĕр хушă кăн-н пăхса тăнă хыççăн.

— Ĕç унра мар, Хветура. Ку амана кăçал кăна туянса килнĕ. Ун ăратне малтан колхозра ĕрчетесчĕ-ха.

— Тĕлĕнтеретĕн эс мана, Кулине,— терĕ Хветура аппа чĕрре кĕнĕ пекрех.— Сан шутупа, колхозăн çеç лайăх ăратлине усрамалла-им вара? Пире япăххи те юрать иккен... Пули-пулми таваршăнах манит суса пама тăрухмаха тухман-ха.

— Эс пустуйранах апла-капла ан калаç-ха. Уншăнах йÿçлĕ-тутлă пулас марччĕ...

Анчах Хветура аппа тарăхсах кайрĕ, ун çан-çурăмĕ вĕриленчĕ, çамки çине сивĕ тар пăчăртатса тухрĕ.

— Хветура та Хветура, тетĕн, май мар хитре калаçатăн,— сасартăк сассине улăштарчĕ Хветура аппа.— Чĕлхÿпе çума ай-ай ăста эсĕ. Маншăн сысна çури те шел пулсан, эппин, эп те саншăн хĕр ÿстермен. Сыснусемпех савăнса пурăн, туй сăри туса ан чăрман. Ман хĕре ан хĕрĕн! Ан хĕрĕн!

Хветура аппа çапла пăтăр-пăтăр каларĕ те, алăка шалтлаттарса хупса, тухах кайрĕ. Кулине инке аллисене сарса пăрахнипех тăрса юлчĕ.

— Мĕн амак пулчĕ ăна? Е хамăн чĕлхем япшар пулаймарĕ-ши? — мăкăртатрĕ ун тути.

Пĕр пус та кăмăла хăварать, пĕр çăвар та çичĕ юта кăларать, тесе ахаль каламан çав ваттисем. Хветура

аппа вётӗр-вётӗр утнăçемӗн ун çилли тăвăлса пычӗ. Пичӗ çинчи пăт-пăт хӗрлӗ пăнчăсем çухалчӗç, сăнне кăвак тӗс çапрӗ. Вăл уттине хăвăртлатнăçемӗн хăвăртлатрӗ, тарласа чăм шыва ÿкрӗ, кăпăк татăлманни кăна. Кунашкал мăшкăл курассине пӗлнӗ пулсан, Хветура аппа килӗнчен те тухас çукчӗ, иçмасса.

— Пиллӗкмӗш хăвăртлăхпа таçтан çӗр çӗмӗрттерсе килет ӗнтӗ, Хветура аппа? Уру тупанӗнчен вут тăкăнса пырать,— чарса пуплесшӗн пулчӗ унпа колхоз шоферӗ. Хветура аппа, куç харшисене пӗркелентерсе, ун çине хаяррăн пăхса илчӗ те, леш ун çулӗ çинчен йăпăртах пăрăнса тăрса юлчӗ. Автомашинă сигналне илтекенсем те çул çинчен ун пекех хăвăрт пăрăнмаççӗ.

Çула май Хветура аппа, медпункта вăркăнса кӗрсе, çынсем пуррине пăхмасăрах хăйӗн хӗрне асар-писер ятласа тăкрӗ, ун сассипе медпункт кантăкӗсем чăнкăртатса çеç тăчӗç. Амăшӗ хăйне хăтăрнă вăхăтра Раис, ним тума аптраса, çÿллӗ кӗлеллӗ пушмак тăхăннă пӗр ури çинчен тепӗр ури çине пускаларӗ, хутланчăкӗсем çук çӗртенех кӗлеткине ятуллă кăтартакан кӗрен платйине якаткаларӗ.

— Качча каясшăн хăв кастаратăн эсӗ! Ыр çын хӗрӗ каччă хыççăн хăй чупнине ăçта куртăн, ăçта илтрӗн? Сана аçу-аннÿ апла вӗрентмен, сан аçу-аннÿ ун пек пулман! Хăв пан улми çисе ÿснӗ пек хитре, ăсу вара пӗр пуслăх та çук. Атту Кӗçтук та мар, Костя теме пуçларăн. Ман умра ун ятне урăх асăннă ан пул! — юнаса хăварчӗ вăл хӗрне.

Электростанци çумӗнчи тăкăрлăкпа тӗк татнă пек вирхӗнсе пынă чух Кӗçтукӗ те ун куçӗ тӗлнех пулчӗ. Кӗрÿ пулас çын сывлăх сунса калană сăмахсене Хветура аппа хăлхине те чикмерӗ.

— Йывăççинчен улми аякка ÿкес çук! Эс те аннÿ хăраххнех пуль-ха! — тÿрех персе ячӗ вăл Кӗçтука.

— Тăхта, Хветура аппа, пат чӗлхе пахча урлă, теççӗ, эс лăпкăн калаç-ха. Мӗн пулнă ара? — ăса кӗртме пăхрӗ ăна кӗвенте пек хытса тăнă Кӗçтук. Анчах шăртланса çитнӗ чух Хветура аппа çын мӗн каланине тăнлать-и вара.

— Сирӗнпе калаçса çăвар тутине пӗтерни кăна. Памасп сана Раиса! Пирӗн хӗре качча илме сирешкел ăçтиçуксен çӗнӗрен çуралас пулать-ха! Пирӗн хӗр вӗреннӗ çын вăл!

Хветура аппа, çапла пат татса каласа, каччă чĕрине çĕçĕсĕрех суранлатрĕ те малалла вĕтĕртетрĕ. Килне çитме хыпаланнипе шыв кӳлленчĕкĕ тавра çаврăнса чăрманма шутламарĕ, ун урлă тӳрех каçма тăчĕ, анчах ури шуса кайрĕ те шыв çине шап! турĕ. Çын ан куртăрччĕ тесе, хăпăл-хапăл сиксе тăнă Хветура аппан кĕпи аркинчен таса мар шыв пăт та пат тумларĕ. Халĕ ĕнтĕ ун çиллин чĕресĕ тулса тăкăнмах пуçларĕ. Вара вăл, килне çитсен, мĕн пур çиллине туй сăри тума лаçра шан майлакан Хветут мучи çине ячĕ. Утне çитеймесен туртине çакланать çав. Шан старик аллинчен шăн-шан сирпĕнсе кайрĕ, пăтаран çакнă ала кĕптĕр-кептĕр персе анчĕ. Старик шан лартма та пĕлмест-мĕн, картишне шăлма та манса кайнă иккен, шăпăрĕ те кĕрĕс-мерĕс çеç имĕш, ăна та çыхма пĕлмест, пӳрнисене мăлатукпа шаккамалла... Мĕн кăна каламарĕ вăл старике. Карчăкне мĕн уртарса янине Хветут мучи тем тери тăрăшсан та пĕлеймерĕ. Карчăкĕ хăй çавнашкал мар-и? Шăртне пĕр тăратсан, унпа калаçиччен калаçманни, çилли сĕврĕличчен ун патне пырса та ан перĕн. Хветут мучи кĕççе тытрĕ те сарайне сӳсмен юсама кайрĕ. Бригадăри ут таврашне пĕтĕмпех вăл юсаса тăрать.

Халăх çăварĕ — уй хапхи, теççĕ çав. Часах яла туй пăсăлни, Кĕçтукпа Раис хушшинчен хура кушак каçса кайни çинчен мăкăр-мăкăр сăмахсем сарăлчĕç. Ку хавха «вăйăçă ассистенчĕ» Кĕркури хăлхине те пырса кĕчĕ. Мĕнех тăвăн, çын çăварне çĕлесе лартаймастăн вĕт. Каçпа Кĕçтукпа Раис, яланхи пекех, шăкăл-шăкăл калаçса клуба пырса кĕни, кино пĕтиччен иккĕш юнашар ларни кăна ял çыннисемшĕн тĕлĕнмелле пулчĕ. «Вăйăçă ассистенчĕ» Кĕркури вара вĕсенчен пĕртте хăпа пĕлмерĕ.

Хветура аппа çилли хаяр кĕвелĕклĕ. Килĕнче те, ĕçре те мăшт-машт туса çӳрет. Нимĕнпе те çырлахтараймасть старикки ун кăмăлне. Чипер апат çисе ларнă çĕртех Хветура аппа хăйĕн старикки çине шăмарса пăхса илет те: «Кăп-кап хыпкала, мăраланса çисе ан лар»,— тесе хурать. Ĕнер каç колхоз правленине кайса ларнăшăн та старике пăскăртса илчĕ, карчăк ăна: «Кĕл алласа çӳриччен килте урлă выртакана тăрăх çавăрса хурасчĕ»,— тесе хăтăрчĕ. Анчах старик хăнк та тумасть, чĕлĕмне кăна лăпкăн мăкăрлантарать тата хăйĕн ĕçне тăвать: ут таврашĕсене юсать. Карчăкĕнчен вăрттăн Кĕçтук патне электростанцие кĕрсе тухрĕ вăл.

— Ман карчăк сăмахĕсемшĕн ан пăшăрхан эс, ачамккă. Ун характер çавнашкал. Хамăр пур чух покамĕç ан хăра, майлаштарăпăр. Ак, хăйĕн мехелĕ çитсен, карчăк кăмăлĕ çаврăнĕ те, туйна та туса пăрахăпăр,— терĕ вăл йĕкĕте, аллине ун сарлака хул пуççийĕ çине хурса.

— Чăн сăмах-и ку? — хĕпĕртесе ыйтрĕ Кĕçтук.

— Чăн сăмах!

— Эппин кӳр аллуна!

Ашă хыпарпа çунатланса кайнă Кĕçтука старик хăйĕн карчăкĕн «характерĕ» çинчен каласа пачĕ:

— Пĕлес пулать ман карчăка. Лайăх хĕрарăм вăл. Анчах хутран-ситрен кĕске туртасем хушшине кĕрсе тăрать. Колхоз пуçланнă çулхине пулчĕ-ха вăл. Ман Хветура çил-тăвăл миххине салтрĕ ячĕ. Ара, колхоза кĕрсе таврăнтăм мар-и çав каçхине... Эккей, ма çĕр çăтмасть ку чĕлĕм чăпăкне? Каллех питĕрĕнсе ларчĕ...

Старик чĕлĕм чăпăкне тасатрĕ те малалла каларĕ:

— Таврăнсан, чиперех салтăнса выртнăччĕ, Хветура темшĕн хыттăн-хыттăн пускаласа çӳрет, урай хăмисем шăтăрт та шатăрт тăваççĕ. Эккей, тетĕп: ку ырра мар. Чăнах та: тытăнчĕ мана колхоза кĕнĕшĕн пăскăртма. Эпĕ пур — итлесе çеç выртатăп, сывлăша та кăлармастăп. Ятларĕ, ятларĕ, кайран çапах юнашар пырса выртрĕ. «Пĕтрĕ-и?»— тетĕп. «Пĕтрĕ»,— тет. «Тен, тата юлчĕ каламалли?»— тетĕп. «Çук!»— тет. Ирхине акана каймаллаччĕ. Ман Хветура апат хатĕрлесе шур тутăрпа чĕркерĕ те ялтан тухиччен ăсатса ячĕ. Лайăх хĕрарăм!

Хветут мучи «философийĕ» тăрăх, çынсене тăватă ушкăна уйăрма пулать. Пĕр йышши çынсем чĕлхепе тем те тăваççĕ, ĕçĕнчен ним те çук. Иккĕмĕшсем чĕлхепе ним те тăваймаççĕ, ĕçпе савăнтараççĕ. Виççĕмĕшсем чĕлхепе те, ĕçпе те савăнтараймаççĕ. Тăваттăмĕшсем вара чĕлхе тĕлĕшпе те аптрамаççĕ, ĕçпе те савăнтараççĕ. Мучи шучĕпе, ун карчăкĕ шăп та лап çак юлашки ушкăна кĕрет.

Çилли кăна вăраха пырать унăн. Виç кунтан та Хветура аппа сысна фермин картишне хура пĕлĕт пекех тĕксĕм сăнпа пырса кĕчĕ. Сысна çури туянмалла пулмасан, вăл фермăна ура та ярса пусас çук. Витен уçса хунă алăкĕнчен паллань сасăсене илтсен, Хветура аппа тăпах чарăнчĕ. Фермă заведующийĕпе çав ăçтиçук Кулине тата ун ывăлĕ Кĕçтук пуплешеççĕ-мĕн.

— Малтан кӳршĕ колхоза кайса вĕренсе килем, вара туса та пама пултарăп,— илтĕнет Кĕçтук сасси.

— Тем пекехчĕ туса парсан, тем пекехчĕ,— кĕрлет шалта заведующин хулăн сасси.— Айта эппин, анпӳне колхоз правленийĕ парнеленĕ çурасене парса ярам.

«Хăй валли чи лайăх çурасем парса ярать акă Кулине,— шухăшласа илчĕ Хветура аппа.— Кусĕнченех сурса хăварам-ха ăна пĕрех хут».

Ура сассисем усăк хăлхасен пӳлмĕкĕ еннелле кайрĕç. Кĕçтук кĕç-вĕç чи лайăх çурасем йăтса тухасса сывламан пек шăпăрт кĕтсе тăракан Хветура аппана Кулине шалта заведующипе хирĕлсе калаçма пуçлани тĕлĕнтерчĕ.

— Э-э, çук, çук, ан та калаç... Хăш тăрлавсăрĕ шухăшласа кăларнă кунашкал премие? Пуç таврах çавăрса шухăшланă-ши ăна вăл? Колхозра ĕрчетмен, валеçме тытăннă та. Малтан колхозра ĕрчетмелле ку ăрата, колхозра...

Алăк хыçĕнчен хурчкалла пăхса тăракан Хветура аппан сăнĕ тăруках улшăна пуçларĕ. Те вăтаннипе, те урăх сăлтавпа, сăнĕ хĕрелсе кайрĕ, кăкăрĕ тĕлне чăмăртаса тытнă аллисем хăйсем тĕллĕнех аялалла усăнчĕç. Витене вăл йĕпе чăх евĕрлĕ пырса кĕчĕ, кунти çынсем патне хуллен кăна çывхарчĕ.

— Мĕтри Иванчă,— сасартăк йăвашлатрĕ сассине Кулине инке, хăйсем патне пырса тăнă хĕрарăма асăрхаса.— Усăк хăлхасем Хветурана пит килĕшнĕ. Пĕр икĕ çурине ăна пама юрамĕ-ши?

Хветура аппа мăнаçлăн тӳрленсе тăчĕ, хăй тĕшне лайăх ăнланакан çын пек аллине танлăн кăкăрĕ тĕлне тытрĕ.

— Çук ĕнтĕ, мана урăх аманне парăр,— терĕ вăл, унтан иккĕленерех çапла ыйтрĕ:— Ну, мĕнле, Кулине, туй сăри лайăх йӳçет-и?

# Капла тата лайăхрах

Кĕрхи вăрманта чĕрĕп çăмха пек йăпăр-япăр çаврăнса выртнине эсир курнах ĕнтĕ. Çав вăхăтра унăн урисем курăнмаççĕ, тути-çăварĕ ăçтине те чухлаймастăн. Шăртне тăратса хурать те, пырса ан перĕн вара. Пулнăпĕтнĕ йĕплĕ çăмха. Нимĕн те калаймăн, чĕрĕпĕн пурнăçĕ çапла.

Пухура сăмах илсен, пирĕн ялти Микихвер шăпах йĕплĕ чĕрĕп пулса тăрать. Уйрăмлăхĕ пĕрре çеç: чĕрĕпĕн шăрчĕ йĕплĕ, Микихверĕн — сăмахĕ. Хытах пĕçертет вăл критикă вучĕпе. Пĕр калама тытăнсан, чăтса кăна лар. Хăмсарса тăмасть, тӳрех çапать. Тата çакăнтан та тĕлĕнмелле: ăçтан кăна курса ĕлкĕрет вăл ĕçри йăнăшсемпе çитменлĕхсене! Тумхахсемпе кăлтăксене те асăрхамасăр хăвармасть.

Хирте тем пысăкăш лаптăк çинчи пăрçана симĕслех çулса пăрахнине курсан, Микихвер икĕ аллине шарт çапрĕ. Ăçта-ши пуçлăхсен куçĕсем? Ку тараиччен пурăнса та, хăçан пăрça çулмаллине пĕлмеççĕ. Вĕренеççĕ-вĕренеççĕ — усси çук. Симĕс пăрçаран кĕлетре мĕн пулассине аса та илмеççĕ пулас. Тепĕр тесен, çулччăрах. Мĕн чухлĕ нумайрах çулаççĕ, çавăн чухлĕ пысăкрах ответ тытма тивĕ правленинчисене.

Хиртен таврăнсан, Микихвер колхоз правленине кĕрсе чăрманмарĕ. Ыйтăва хăçан тата ăçта хускатмаллине лайăх пĕлет вăл. Айăплă ĕç тунине тăрă шыв çине кăларма виç кунтанах май килсе тухрĕ. Ку кунхине правлени ларăвĕ пулчĕ. Унта Микихвер çăварĕнчен вут-хĕм пĕрхĕнчĕ, çулăм сирпĕнчĕ.

— Эпир те бригадир пулнă, анчах унашкал ухмахла ĕçлемен. Капла пирĕн пӳлмесем çап-çутă пулĕç. Лайăх

тырра пулса çитиччен çулса сая яракансене ним иккĕленсе тăмасăрах суда памалла. Бригадирне халех кăларса çапас пулать,— сĕнчĕ вăл.

Правлени членĕсем Микихвер сăмахне тем пирки кударах итлерĕç. Вата агроном Иван Иванович пĕрремĕш бригадă бригадирне, хуп-хура мăйăхлă Сантăра, чеен куç хĕссе илчĕ. Унтан хуллен кăна çапла каларĕ: «Асăрхан, çултараканĕ эсĕ. Сана халех кăларса çапаççĕ, пире хăçан хупасси паллă мар-ха». Итлессе вара ку сăмахсене пурте илтрĕç, питсем çинче пурин те чееленсе кулни çиçсе илчĕ. Комсомол комитечĕн секретарĕ Володя Спиридонов, правлени членĕсенчен чи çамрăкки, тӳссе лараймарĕ, сасăпах кулса ячĕ.

— Пĕр ыйту пур. Çулса кушăхтармалли меслет çинчен Микихвер пичче илтнĕ-ши, çук-ши?

Правлени членĕсем Микихвер каланине хăлхана пачах чикмерĕç. Вĕсем çаплах кун йĕркинчи ыйту пирки калаçрĕç.

Лару хыççăн Иван Иванович агроном Микихвер патне пычĕ те аллине ун хулĕ çине хучĕ.

— Никифор Капитонович, вăхăтăр пур-и? Айтăр хире пĕрле тухса курар.

Вĕсем çулса пăрахнă пăрçа патне çитсе тăчĕç. Микихвер пăхать те хăй куçне хăй ĕненмест: çулнă чухне пăрçа симĕсчĕ, халĕ вара хăмăр тĕслĕ. Хутаçри пĕрчĕсем те хытнă. Пăсăласси-çĕресси асра та çук. Хăмăл шăрши сăмсана ыррăн çапса тăрать. Эппин, пăрçа çулсан пулса çитнĕ. Ана тепĕр вĕçĕнче Елизар Васькинăн СК-3 комбайнĕ кĕрлет, вăл пакуссенчи пăрçана подборщикпе пуçтарса çапать.

— Аптрамасть вĕт пăрçа,— тет кăмăллăн Иван Иванович.

— Хам ас тăвасса кунашкаллине курманччĕ те, илтменччĕ те,— тĕлĕнчĕ Микихвер, унтан иккĕленерех çапла хушса хучĕ:— Анчах Атăл хĕррине çитмесĕрех атта хывар мар-ха. Кайран мĕнле пулĕ...

— Мĕнле пуласси паллă: пӳлме тулли пăрçа пулать,— кулчĕ Иван Иванович.

Микихвер ку ана çинче маларах та пулса курнăччĕ, мĕн курнине колхозниксен черетлĕ пухăвĕнче тĕпĕ-йĕрĕпе каласа панăччĕ. Ун чухне арăмĕпе юнашар ларнă çĕртен трибунă патне тухрĕ те вăл васкамасăр калама пуçларĕ:

— Тăватăм кун пăрçа çумĕпе иртсе пыратăп. Симĕсле пăрçа лайăх пулаканччĕ, тутанса пăхам-ха, терĕм. Ăçта унта... Сип-симĕс пыйтă ларса тулнă, хутаççи те палăрмасть. Пуçлăхсем мĕншĕн пĕртте кайса пăхмаççĕ-ха, иçмасса? Кун çинчен хаçат çине çаптармалла вĕт!

Пухура ларакансем критикăна алă çупса е урăхла майпа ырласса кĕтнĕччĕ Микихвер. Унашкалли пулмарĕ. Çынсем ун çине чарса пăрахнă куçĕсемпе тĕлĕнсе пăхнине çеç асăрхарĕ вăл.

Пухăва ертсе пыма суйланă Иван Иванович агроном çеç критикăна хапăл туса йышăнчĕ.

— Çавă-ха çав,— терĕ вăл,— хирте питех çӳресе каяймастпăр. Çитсе курман кĕтессем те юлкалаççĕ. Вăхăтра асăрхаттарнăшăн тавтапуç. Пăрçа çинчи пыйтăна курсан та, складра гексахлоран пулман пирки тăруках турттарса килеймерĕмĕр. Ĕнер пăрçа çине аранах гексахлоран сапрăмăр. Ас ту, Никифор Капитонович, ана çумĕпе тепре иртес пулсан, симĕс пăрçа тутанма ан шутла, тем килсе тухĕ,— терĕ лăпкăн Иван Иванович.

Микихвер арăмне — Тарье аппана агрономăн кашни сăмахĕ йĕплĕ пек туйăнчĕ. Мĕнле вăй кăларчĕ пулать-ха Микихвере трибунă патне? Пĕли-пĕлми сăмах персе яма чĕлхинчен ăна кам туртрĕ-ши? Ларасчĕ çапса лартнă юпа пек. Пăрçа çине гексахлоран ĕнерех сапрĕç, çавна та курман, суккăр тунката. Пулать çав çын! Пĕлмесен, хамран ыйтасчĕ хуть...

Мăшăрĕшĕн вăтанса, Тарье аппа тем тĕрлĕ те шухăшларĕ. Кайран, пухуран таврăнсан, упăшкине хытă тустарчĕ. «Эсĕ пухура каланă сăмах хĕрарăмсем çăл патĕнче çапакан халапа та тăмасть. Санпа пĕрле пухăва кайсан, намăс курни кăна».

— Хăвăн каламаллаччĕ тата, эпĕ калани вырăнлă мар пулсан! — хăйса сăмах хушрĕ ăна хирĕç упăшки. Анчах урăх ним те каламарĕ, татах тавлашсан, мĕн пулассине вăл лайăх чухлать. Ача-пăча та вылясан-вылясан çапăçса каять. Унăн Тарйи те, ятласан-ятласан, турчка ярса тытать. Хальхинче те çавăнтан шикленсе, чĕртес чĕлĕмне чĕртеймесĕрех, Микихвер картишнелле туххса шăвăнчĕ. Вут çурмалли каска çине вырнаçса ларсан тин чĕлĕмне чĕртсе ячĕ, тĕтĕм ункисем тунă май хăй çаплах пăлтăр алăкĕ еннелле пăха-пăха илчĕ.

— Çук çав,— шутларĕ вăл хăй ăшĕнче,—ман Тарьене ниепле те юраймăн. Мĕн тĕрлĕ критиклесе те, ун кă-

мăлне çырлахтараймарăм пулать. Аçта кайса кĕрĕн, чăтас пулать ĕнтĕ.

Кĕр çитрĕ. Пĕр кунхине Микихвер колхозри партком секретарĕн пӳлĕмне хашкаса пырса кĕчĕ. Хăйĕн хулăн кĕпи витĕр лачкам тар çапнă.

— Суккăр пуль çав фермăрисем... Пăла кукринчи йӳçлĕхре пăру путса ларнă. Туртрăм-туртрăм... Аçта унта! Кăларăн ăна пĕччен...

Микихверĕн тĕкĕр пек йăлтăркка аттине курсан, Егор Сергеевич çавăнтах ура çине тăчĕ.

— Айта, кайрăмăр.

— Кайрăмăр,— килĕшрĕ Микихвер.

Пăла кукăрĕнче вĕсем Тарье аппана курчĕç. Вăл аллинчи вăрăм хулла çавăркаласа тăрать. Хăйĕн алли çумне хăва хулли симĕсĕ çапнă. Ун патĕнче юшкăнланнă пăру вилли выртать. Хăй хура, çамки хушка. Çакна асăрхасан, Микихвер çан-çурăмĕ сăр-р туса илчĕ.

— Таçта çӳретĕн эсĕ, Микихвер... Вăн пăру путса вилнĕ. Иртенпе шыраса хăшкăлтăм, эпĕ кунта çитнĕ çĕре Чернушкăн хӳри кăна курăнса тăрать,— терĕ Тарье аппа пусăрăнчăк сасăпа.

Егор Сергеевич ун çине хĕрхенсе пăхрĕ.

— Ан кулян, Тарье аппа. Вилни вырăнне тепре пулать. Никифор Капитоновича та ятламалли çук. Вăл та таçта чупса çӳремен. Путнă пăрăва туртнă-туртнă та кăларайманнипе ман патăма чупса пынă. Ферма пăрăвĕ тенĕ вăл...

— Ан суйса тăрăр. Сире суйни килĕшмест. Эпĕ киличчен пăру патнелле çын ура йĕрри ӳкмен. Ара, тăхта... Пăру путнине кура тăркач пырса пăхмасăрах çаврăнса кайнă эппин? Анчах кам-ха вăл апла хăтланаканни? Микихвер-и? Апла-иç эсĕ! Фермăра ĕçлекенсене критиклеме чупрăн пуль-ха...

Тарье аппа аллинчи хулла аяккалла вăркăнтарчĕ те упăшки патне вăрт-варт пырса тăчĕ. Унччен те пулмарĕ, хайхискерне çат! çапрĕ питĕнчен.

Критикă хĕрӳленсе кайнине Егор Сергеевич асăрхаманçи пулчĕ.

Кĕпе аркинчен çĕлесе янă пек, яланах амăшĕпе пĕрле çӳрекен пĕчĕк Петя кăна ашшĕ хутне кĕчĕ:

— Анне, ан тив аттене!

Путса вилнĕ Чернушкăна выльăх масарĕ çине пытарнă хыççăн Микихвер хăйне арăмĕ çупкăпа е турчкапа

«критиклесрен» тата та ытларах шикленекен пулчĕ. Апла пулин те, вăл ĕçри çитменлĕхсене асăрхама пăрахмарĕ. Юрамасть, колхозниксем ăна ревкомисси членне ахальтен суйламан вĕт! Шанăçа тӳрре кăларас пулать. Тепĕр енчен, пурнăç шăпи ăна Тарье аппа турчкинчен хăех сыхларĕ темелле.

Юр ӳкрĕ. Фермăра ĕнесене çаплах сивĕ шывпа шăвараççĕ иккен. Çакна Микихвер хăй куçĕпех курчĕ. Вăл çавăн хыççăнах общежити çуртне кĕчĕ, унта комплекслă бригадă бригадирĕн помощникне Эрхипе шыраса тупрĕ те ай-ай пăсăрлантарчĕ ăна.

— Эсĕ,— терĕ,— мĕн пăхатăн? Кунта катемпи вырăнĕнче-и е ĕç тума лартнă çын-и?

Фермăна тепĕр икĕ кунтан кĕрсен, Микихвер тĕлĕнчĕ те, савăнчĕ те: ĕнесем умĕнче ăшăтнă шыв пăсланса тăрать, çурăлнă валашка вырăнне урăххине лартнă.

Çавăн чухне Микихвер савăнăçлă Эрхипе айккинелле чĕнсе илчĕ те унăн аллине хытă чăмăртарĕ, чеен кулса çапла каларĕ:

— Виçĕм кун эпĕ фермăра пулман, пулсан та ăнакăна курман,— Унтан шăппăнрах çапла хушса хучĕ:— Анланас пулать, мĕн тесен те, эпĕ ревком членĕ-çке-ха.

Техникăна юсакан мастерскойра Микихверĕн чылай пăшăрханмалла пулчĕ. Кунта тракторсене график тăрăх юсаççĕ, анчах плугсем çинчен мансах кайнă пулмалла. Вĕсене пĕтĕмпех юр шăлса лартнă.

— Виççĕ выртса та пĕрре тĕлленместĕр, ахăр, плугсем çинчен... Ас тăвăр, кăçал та çуркунне пулать,— юнаса хăварчĕ Микихвер тимĕрçĕсене.

Тепĕр эрнерен пухăва кайнă чухне вăл Кузнецов тимĕрçе тĕл пулчĕ.

— Сывлăх сунатăп, Никифор Капитонович! Рапорт парам-и: плугсене юсаса пĕтертĕмĕр вĕт. Лайăх-и?

— Питĕ лайăх. Эппин сире паян критиклеме сăлтавĕ çук.

— Капла тата лайăхрах.

— Чăн та, капла лайăхрах çав,— килĕшрĕ Микихвер. «Паян Тарье мана çурăмран турчкапа «критиклеме» сăлтав пулассăн туйăнмасть те-ха»,— вĕлтлетсе иртрĕ шухăш Микихвер пуçĕнче. Унăн пичĕ çинче йăлтăр кулă выля пуçларĕ.

2—2690

Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР

9537 чв

# Пукра

Укахви аппа, район центрĕнче ĕçлекен ывăлĕ патне хăнана пырсан, иккĕмĕш куннех тунсăхлама пуçларĕ. «Çырла пек çу кунне нимĕн тумасăр сая ярατăп-çке капла! Уксах-чăлах пек, пӳртре лермалла-и вара ман?»— ӳпкелешрĕ вăл алăкăн-тĕпелĕн утнă май.

Тепĕр кунне вара, кăшт та пулсан ĕçлĕ пулас тенĕ пек, чăланта çакăнса тăракан сурăх тирне хул хушшине хĕстерчĕ те пасаралла уттарчĕ.

Пасара çитнĕ-çитменех Укахви аппана тир пухакан агент Ухватов Унтри куршанак пек çыпçăнчĕ.

— Ку пасарта мансăр пуçне тир илекен урăх çын çук. Уçăмлă çын эпĕ, инке, уçăмлă! — çине-çинех кăшкăрчĕ Ухватов. Хăй çавăнтах кӳпшек аллипе Укахви аппан хул хушшинчи сурăх тирне туртса та илчĕ.

— Высши сорт! — терĕ Унтри тире кутăн-пуçăн çаваркаласа.

Укахви аппан куçĕсенче кăмăллă кулă çиçсе илчĕ. Унăн ывăлĕ Никандр хăй ĕмĕрĕнче сахал мар сурăх пуснă, тирне те çавăн чухлех сӳнĕ. Пĕр тире те пăсса сая ярас çук вăл. Епле сӳмеллине те, ăçта типĕтмеллине те лайăх пĕлет.

Унтри тире урапа çине йăпăр-япăр сарса хучĕ те ал тупанĕпе шăлкаланçи турĕ.

— Пĕрремĕш сортпа каймасть, шелмĕ! Шăп варринчен пукра шăтарнă, мур илесшĕ! Пĕр пайăрка çăм юнланнă тата...

Укахви аппа, те ытлашши тинкерсе пăхнăран, пукра шăтарнă вырăна та, юнланнă çăм пайăркине те тупаймарĕ. Çак самантра Унтри хуçса пухмалли метрне тир урлă-пирлĕ выляткаласа илчĕ.

— Темшĕн ку тир акăш-макăш пĕрĕнсе ларнă. Сурăхĕ те чышкă пек кăна пулнă курăнать те...

Ку сăмахсене илтсен, Укахви аппа куçĕсем чарăлсах кайрĕç. Унтри çакна асăрхаманçи пулса, хăйĕннех печĕ:

— Иккĕмĕш сорт. Пĕр тенкĕ те 20 пус. Ме, квитанци çине алă пус та укçине халех ил.

Укахви аппан куç хăрпăкĕсем татах та çӳлерех сиксе ларчĕç, пичĕ хĕр чухнехи пекех хĕрелсе кайрĕ. Пĕр вăхăт аптăраса тăнă хыççăн агент аллинчен тире карт туртса илчĕ.

— Чипер тире нихçан та 3—4 тенкĕрен кая сутса курман. Эсĕ манран пуспа мар, тенкĕпех сăптăрса юласшăн капла!

Унтри тарăхнă хĕрарăм мĕн каланине питех итлесе-йӳплесе тăмарĕ, тепĕр еннелле çаврăнчĕ те çамрăк хĕрарăм аллинчен пăру тирне япăшт кăна ярса илчĕ.

Тепĕр ирхине, ывăлĕ ĕçе кайма пуçтарăнсан, Укахви аппа темĕнле айăпа кĕнĕ сасăпа çапла каларĕ:

— Вăйран тайăлтăм иккен. Ĕнер, ав, пасара çитсе килме те ӳркентĕм. Эсĕ, Никандр, çав тире агент патне хăвах кĕртсе паратăн пуль, ачам.

Амăшĕ тир çинчен аса илтерсен, ывăлĕ телефон трубкине ярса тытрĕ.

— Хатĕрлев кантурĕ-и? Кам? Надеждин калаçать. Ман хваттере кĕрсе тухăр-ха, чĕр тавар пур,— терĕ вăл такама телефон тăрăх хăйне хирĕçлеме юраман сасăпа.

Никандр ĕçе тухса кайсан вăхăт нумаях та иртмерĕ, калинкке уçăлса хупăнни илтĕнчĕ. Пӳрте никам та мар — Ухватов Унтри кĕчĕ.

Укахви аппапа Унтри, пĕрне-пĕри палласа илсе, пĕр авăк юпа пек хытса тăчĕç. Çапах та Унтри çухалса каймарĕ, самантрах хăйне хăй алла илчĕ.

— Мана пирĕн директор Никандр Николаевич кĕрсе тухма хушнăччĕ те...

— Директор? Никандр-и? Никандр хатĕрлевçĕсен директорĕ-и? Илтнĕччĕ çав вăл таçта, сутăçсем патĕнче, пуçлăхра ларать тенине?!— ик аллине шарт çапрĕ Укахви аппа. Унтан ывăлĕ ĕçе тухса каяс умĕн телефонпа калаçнине аса илчĕ. Ку калаçури «чĕр тавар» тир иккенне тин ăнкарса илчĕ вăл.— «Чĕр тавар» шырамастăр пулĕ те? Айтăр, кăтартса пăхам...

— Лайăх тир... высши сорт,— терĕ Унтри, тире аллипе тытнă-тытманах. Йăрă куçĕсемпе çенĕк йĕри-тавра

пăхса çаврăнчĕ те юрăхлă вырăн урăх пулманран тире урайнех сарса хучĕ: — Никандр Николаевич хăй сӳнĕ пулас, ниçтан та шăтарман.

— Никандр шăтарман та, пукра тем тунă е́нгĕ? — куçне хĕссе ыйтрĕ Укахви аппа.

— Аçта? Курăнмасть-çке. Тап-таса тир.— Унтри атă кунчи ăшĕнчен метрне тӳртса кăларчĕ.

— Пĕчĕкрех çав тирĕ. Виçмелĕх те çук,—татах та ытларах хĕсрĕ куçне Укахви аппа.

— Никандр Николаевич пасарта мĕнле сура́х туянмаллине пĕлет, пăру пеккине шыраса тупнă! Çăвĕ пилĕк кĕренкерен кая мар тухнă пуль? — хăйĕнчен тăрăхлашне асăрхаманçи пулать Унтри. Унтан кăранташне кăларчĕ те квиганци çырма пуçларĕ.

— Высши сортпа каять,— мăкăртатрĕ вăл çырнă май.— Пысăкăшĕ пур вара! 5 тенкĕ те 30 пуса ларать. Ме, квитанци çине алă пус та укçине халех ил.

...Кăнтăрлахи апат хыççăн Укахви аппа тăруках яла тухса каясси çинчен пĕлтерчĕ.

— Акă, сана, ывăлăм, 5 тенкĕ те 30 пус. Ку укçана Ухватов Унтри парса хăварчĕ. Пасарта вăл мана çав тиршĕнех пĕр тенкĕ те 20 пус парса мăшкăлларĕ. «Пукра шăтарнă», тет. Хăй пукра вăл, мур илесшĕ! Выльăх тирне кăна мар, çынсен тирне сӳме те аван пĕлеççĕ иккĕн сан агентсем, ди-ректор!

Ывăлĕ машинăпа ăсатма пулнине пăхмасăр, Укахви аппа тăван ялне çуранах тухса утрĕ.

---

# Пурте йӗркеллех

Хӑҫан та пулин пирӗн ялти Виталий Петрович Лекарев фельдшерпа курса калаҫнӑ-и эсир? Ҫук пулсан, ан пӑшӑрханӑр: ӑна пӗрре курсах паллама пулать. Пӗвӗпе лутра хӑй, кӗлеткипе ҫӗмел пек сарлака. Тӑршшӗпе урлӑшӗ шӑп пӗр маях килет. Лутра этем ҫӳллӗ пукан ҫинче ларма юрататъ, теҫҫӗ. Шантарсах калатӑп, ку сӑмахсем пачах Лекарев ҫинчен мар. Тӗлӗнмелле лайӑх, кунӗ ҫын вӑл, пирӗн Виталий Петрович. Нихҫан та хыпӑнса ӳкмест. Чирпе пынӑ ҫынран малтан килтисен сывлӑхӗ пирки ыйтса пӗлет, унтан пурнӑҫ кустӑрми епле пынине тӗпчет. Пациенчӗсем вара ӑна-кӑна пӗртте чухламаҫҫӗ. Фельшертан хӑйӗн сывлӑхӗ мӗнлине ыйтсанах, унӑн кӑмӑлӗ йӑлт урӑхланать, вӑрах кӗттермесӗрех чирлӗ ҫынна пӑхма пуҫлать. Анчах пӗлмеҫҫӗ мар-и ҫакна. Ытла та тӑрлавсӑр вӗсем, пӗр хӑйсемшӗн кӑна пӑшӑрханаҫҫӗ.

Пурӑнан пурнӑҫра тӗлӗнмелли те пулкалать. Яланах лӑпкӑ фельдшер юлашки вӑхӑтра палӑрмаллах улшӑнчӗ. Паян та, акӑ, ӗҫ вӗҫленес умӗн темшӗн-ҫке канӑҫне тӑнчах ҫухатрӗ. Лара-тӑра пӗлмерӗ вӑл, пӗрмай алӑкӑнтӗпелӗн каллӗ-маллӗ кумрӗ. Унтан алла хаҫат илчӗ, анчах вулани-туни пулмарӗ, минутсерен кантӑкран пӑхрӗ, тӳсӗмсӗррӗн такама кӗтрӗ.

Фельдшер пунктне шкул завучӗ Викентий Викентьевич тата математикӑ учителӗ Георгий Иванович кӗрсе тӑчӗҫ. Георгий Ивановичӗ хул айне шахмат хӑми хӗстернӗ. Унтан Виктор тракторист хашкаса ҫитрӗ.

— Тайма пуҫӑм ялти чи ӑста шахматистсене! Парӑр мана та пӗр-ик хут вылямa, унсӑрӑн вилетӗп...— кӗнӗ-кӗменех евитлерӗ вӑл.

Тусёсем вăрах кĕттерменнипе хĕпĕртенĕ Лекарев сĕтел сунтăхне çутă уçăпа чăнкăрт! усрĕ те шахмат хăмипе фигурисене кăларчĕ. Ана хирĕç кăвакара пуçланă çӳçлĕ завуч вырнаçса ларчĕ. Шахмат хăми умне ларсанах, унăн хура сăнĕ çуталса кайрĕ, сăрă куçĕсем сарлака куç харши айĕнчен куларах пăха пуçларĕç.

— Ну-с, Витамин Петрович, пуç мимине вентиляци тăвар-ха эппин. Батали пуçланчĕ тесе шутлăр, иду на Вы,— терĕ вăл, король умĕнчи пешкăна малалла куçарса.

— Посмотрим эсир мĕне пултарнине...— кăркка пек хăпартланса илчĕ фельдшер. Хăйĕн ятне урăхлатнине Виталий Петрович хăлхине чикмерĕ, мĕншĕн тесен апла чĕннине хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ вăл.

Виктор çамрăк учительпе Георгий Ивановичпа вылять.

— Ха! Хă! Королевăна хăмсаратăр? Аллăр кĕске! Ак кăтартам-ха сире хăвăра пĕр камит...— пуплет вăл пĕрмай.

— Вăт-тăк мыскара! Пешкă мăйăр хуппи мар-ха, панă чухне илес! — хĕпĕртет ун партнерĕ.

— Тăхтăр-ха... Анваскăр... Кăштах тормоз çине пуçăр. Унсăрăн рами-мĕнĕпех кĕрсе ларатăр. Шах короле...

Виктор пĕрре ура çине сиксе тăрать, унтан каллех вырăнне ларать. Шахматла хĕрсе вылянă вăхăтра лăпкăн ларма пулать-и вара! Вăл ăс-тăнпа çеç мар, пĕтĕм шăм-шакĕпе, мĕн пур чун хавалĕпе вылять. Хĕрӳлĕх енчен Георгий Иванович та унран юлсах каймасть. Мĕн калăн, шеп выляççĕ иккĕшĕ те. Вăййи те вĕсен вăраха пымасть. Çавна май çĕнтерӳ савăнăçĕ те, парăну хуйхи те ирхи тĕтре пекех хăвăрт сирĕлет. Парти вĕçленмессерен е учитель, е тракторист енне шăрпăк пĕрчи пырса выртать. Каç пулнă çĕре кашни еннех тăватшар пĕрчĕ шăрпăк хурăнчĕ. Ку вăл вăйă шучĕ 4 : 4 пулнине пĕлтерчĕ.

Фельдшерпа завуч хушшинче вăйă урăхларах пырать. Пытармалли çук, пиçмест вĕсенчен хăвăрт вылясси. Ку таранччен те пĕр парти пĕтермен. Викентий Викентьевичĕ аллисемпе пуçĕнчен ярса тытнă та шахмат хăми çине çаплах куç сиктерми пăхать. Чылайччен шухăшласа ларсан, вăл шурă ладьяна ерипен çӳлелле çĕклет, сывлăшра вăрах тытса тăнă хыççăн хайхи, фигурăна çыпăçтарса хурса, хура корольпе юнашар çирĕппĕн пырса лартать.

— Мат сире, тăванăм! — тинех сăмах хушать. вăл.

— Неснай, мат-ши вара? — иккĕленет Лекарев. Вăл серепене лекнĕ король валли çамки тирне картлантарсах çăлăнăç шырать, анчах ăна пĕрех капитуляци тума тивет.

— Мĕнле, хатĕрлерĕр-и? — шăппăн кăна ыйтрĕ Викентий Викентьевич. Çак сăмахсене илтсен, трактористпа унăн партнерĕ те пуçĕсене ялт! çĕклерĕç. Ĕнер Лекарев çур литр спирт ĕçтерме пулнăччĕ-çке-ха...

Фельдшер пасăрхи çутă уçăпах сĕтелĕн аялти сунтăхне уçрĕ, унтан пĕр бутылкă çутти тата селедкă кăларчĕ. Бутылкă мĕншĕн тăп-тулли пулнине, магазинта ун пек сутманнине нихăшĕ те асăрхамарĕ, этикеткă çине «Водка» тесе çырнине вара пурте пĕр харăсах шанчăка çухатнă сăнпа вуларĕç.

— Çук-им? — ыйтрĕç виççĕшĕ те.

— Ăçта унта... Акушеркă жалобă парасшăн. Лавккаран туянса килтĕм ак. Анчах çăкăр çук.

— Пирĕн паян çеç пĕçернĕ те, кайнин усси пулмĕ: пĕр таврăнсан, мана Раис кăларса ямастех,— мĕскĕннĕн пуçне усрĕ Виктор.

— А эсĕ пирĕн пата кай. Раис пĕр çур çăкăр кивçен ыйтма ячĕ, те. Анчах ман арăмпа калаçнă чухне тăмсай ладья пек тӳрĕрен ан пер, конь евĕрлĕ кукăр-макăрсем тукала, вара ĕç ăнатех,— сĕнчĕ Викентий Викентьевич.

Виктор тепĕр темиçе минутран завуч хваттерĕн алăкне пырса шаккарĕ.

— Кам унта? — илтĕнчĕ Зоя аппан ыйхăллă сасси.

— Викентий Викентьевич килте-ши? Çук-и? Çавах та кĕрем-ха...

Завуч хăйĕн çемйипе ку ялта пĕр çулталăка яхăн кăна пурăнать-ха. Нумай пулмасть Виктор унăн арăмне пĕр сысна çури туянтарнăччĕ. Викентий Викентьевич канашне асра тытса, вăл пӳрте кĕрсен, малтан сысна çури епле ӳсни çинчен ыйтрĕ.

— Кăштах чирлекелет-ха,— хуравларĕ Зоя аппа.— Пĕлме çук: тем çитмест ăна...

— Çитменни-мĕнни, пирĕн ялта пĕр йăла пур: выльăх туянсан, хуçине мĕн те пулин парса яраççĕ. Унсăрăн выльăх алла иленмест, теççĕ.

— Апла иккен. Манăн мĕн парса ярас-ши? — хыпăнса ӳкрĕ Зоя аппа.

— Эпĕ хам авалхи йăласене ĕненместĕп. Мана ним те кирлĕ мар. Ячĕшĕн пĕрер чĕлĕ çăкăр, ик-виç сухан парса ярăр эппин...

— Панă пекех пултăр ĕнтĕ. Тыт-ха çур çăкăр, акă суханне те ил...

— Эпĕ сысна çури сывлăхне пĕлме çеç кĕрсеччĕ. Сывă юлăр-ха эппин, Зоя аппа,— тесе хăварчĕ Виктор. Хăй фельдшер пунктне çитичченех чарăнайми кулса пычĕ.

Çăкăра вакласа хаçат çине хурсан, Лекарев çуттине тăвата стакан çине пайларĕ.

— Вăт тăк куç! Тумлампа виçнĕ пек. Кашни стаканра пĕр пек! — мухтаса илчĕ фельдшер ĕçне Викентий Викентьевич.

— Ан та кала. Аптекăри пекех: хĕрĕх кĕренке лăпах пĕр пăт,— йăл кулчĕ Георгий Иванович.

— Вăл-ку юрĕ-ха. Пыр ытла та типсе кайнă. Янклаттарар пĕрре шахматистсен сывлăхĕшĕн! — çĕклерĕ стаканне Лекарев. Георгий Иванович та унăн шухăшне хăйне майлă ырласа илчĕ:

— Ĕçес-тĕк ĕçес! — тенĕ кушак çурисем, хăйсене шыва путарма илсе кайсан.

Чанк та чанк тутарчĕç ялти «гроссмейстерсем» стакансене.

— Тетрадьсем тĕрĕслемеллеччĕ те, паян пулмасть ĕнтĕ! — ассăн сывларĕ Георгий Иванович.

— Председательпе тĕл пуласшăнччĕ, ырана хăварма тивет,— кулянса илчĕ Виктор.

— Ĕçес! — терĕç вĕсем çавăн хыççăнах.

Учительпе тракторист стакансенчи шĕвеке сывламасăр туххăмрах çавăрса хучĕç. Вĕсен сывлăшĕ питĕрĕнсе ларчĕ, карланкисене темскер вутла çунтарчĕ.

— Ах, парăрччĕ шыв,— терĕ аран-аран Георгий Иванович, Виктор тумбочкă çинчи графин патне хăй тăрса чупрĕ.

Лекарев хырăмне сăтăра-сăтăра ахăлтатать. Викентий Викентьевич вара çаплах мĕншĕнне-мĕнне ăнланаймасăр ларать. Унтан тем тавçăртрĕ пулмалла, стаканри шĕвеке кăшт тутанса пăхрĕ те каялла лартрĕ.

— Спирт. Тап-таса спирт,— терĕ вăл тӳлек сасăпа.— Эпир çамрăксем пек таса халлĕн ĕçме пултараймăпăр çав...

Лекаревпа завуч, хăйсен пайне шывпа хутăштарса, техĕмлĕн, васкамасăр ĕçрĕç, çиййĕнчех çăкăрпа селедкăна пĕтĕрме пикенчĕç.

Ку вăхăта «таса халлĕн» ĕçекен паттăрсем те сывлăш çавăрса ячĕç.

— Пулать те иккен улталанма...—хăйне хăй ӳпкелерĕ Виктор.— Кунашкалли ман пурнăçра иккĕмĕш хут пулчĕ ĕнтĕ. Авланнă çулхине пĕрре çапла акаран питĕ ывăнса таврăнтăм, ман Раис йăл кулчĕ те çур стакан эрех тултарчĕ пачĕ. Акăш-макăш вырăнлă пулчĕ ку. Тепĕр кун хам ыйтнипе ĕçтерчĕ. Виççĕмĕш кун каçхи апат çиме лартăм та курах кайрăм: стаканпа эрех хатĕр ларать. Вăт мĕнешкел ăслă ман арăм, тетĕп. Тытрăм та ӳпĕнтертĕм хайхине. Ĕçсе ярсанах пĕлтĕм: стаканра шыв пулнă иккен. Пĕлтĕм, анчах кайран пулчĕ. Арăм ахăл-ахăл кулать. Ну, тетĕп, кирлĕ мар тек сан эрехӳ...

— Эпĕ тата шепрех мыскара илтсеттĕм. Вăт мыскара-тăк мыскара! — тутлă апат çиме ларас умĕнхи пек чăп тутарчĕ тутисене Георгий Иванович.— Пирĕн касри Çерук аппа пĕр вăхăтра шалт аптăрать: унăн Элексантăрĕ килтен тухса каять те çухалать, тухса каять те, çухалать. Лешĕ вулав çуртне доминолла выляма çӳренĕ иккен. Пушар дружинин начальникĕ, кладовщик, хуралçă тата ку хăваланă та хăваланă «качакана». Ара, пĕр выляма пуçласан, кун иртнине те сисместĕн. Пĕрре апла пулать, тепре... Пĕлет хайхи Çерук аппа мĕншĕн упăшки килтен писнине. Бригадир наряд пама пынă: Элексантăр пичче килте çук. Ирпе çимесĕрех тухса кайнăскер, кăнтăрлахи апата та таврăнмасть. «Ерçеймест ман старик. Апатпа каяс пулĕ»,— шут тытать Çерук аппа. Чĕресе яшка ярать, тутăрпа çăкăр çыхать. Кунăстине те манмасть, пĕр мă-ă-нă пуç илет. Ара, шеремет качакисене ку апат кирлех ĕнтĕ. Пырать çаксĕр урампа таплаттарса.

— Ăçта каятăн капла? — ыйтаççĕ тĕл пулакансем.

— Старик патне апатпа каятăп-ха,— ответлет хăй хĕрарăм.

— Э-э... Ĕçрен пушанаймасть пулĕ-ха... — хĕрхенсе илеççĕ ĕçчене лешсем.

— Пушанаймасть çав. Вулав çуртне качакасем кĕрсе тулнă, тет, çавсене хăвалать,— пĕр кулмасăр пĕлтерет Çерук аппа. Домино ăстисем кĕтмен-туман çĕртен кĕçех вăл вулав çуртне кĕрет тăрать.

— Илтнĕ эпĕ ку историе. Çерук аппа тăрăшни кăлăхах пулнă. Элексантăрĕ вулав çуртĕнче апатланма килĕшмен, тет,— кулса ярать Виталий Петрович. Тракторист ĕнтĕ кула-кула хăшăлтие ернĕ, ал тупанĕпе хырăмне сăтăра ларать.

— Ун чухне вӑйӑ «встать» командӑпа та пӗтмен, тет, ҫапах Элексантӑр пичче хӑйӗн арӑмӗ кӗрсенех тӑнӑ та тухах кайнӑ. Ҫавӑнтанпа сивӗннӗ вара вӑл доминоран,— вӗҫлет хӑй калавне Георгий Иванович. Кунта Викентий Викентьевич та хӑй шухӑшне каламасӑр чӑтаймасть:

— Ай-вай намӑс пулнӑ ӗнтӗ Элексантӑра... Ирӗксӗрех пите кӗҫҫе ҫӗлӗн.

— Ну, ку пире простӑ нихӑш енчен те тӗкӗнмест,— ҫирӗппӗн каласа хурать Виталий Петрович.— Пирӗнпе унашкалли пулма пултараймасть. Пирӗн вӑйӑ — культурӑллӑ вӑйӑ. Выляма та ӑна культурӑллӑ выляс пулать. Апат ҫинӗ май тутланса пырать, шахмата вылянӑҫемӗн выляс килет. Шахмат вӑл, тусӑмсем, шахматах. Ахӑ. Мӗн вӑл шахматистсӑр шахмат? Пушӑ вырӑн, патаксӑр нуль. Шахматистсем пулмасан, шахмат ҫук вара. Шахматист шахмат пур чухне шахматистах пулса юлать. Вӑл ялти чи ӑслӑ, чи хисеплӗ ҫын,— тӑк! чышрӗ фельдшер чышкипе кӳпшек кӑкӑрне. Ку ӗнтӗ: «Пӗлӗр эпӗ камне»,— тенине пӗлтерчӗ пулас.

Виталий Петрович манерӗпе каласан, ӑслӑ сӑмах ӑслах ӗнтӗ вӑл. Ҫавӑнпа тусӗсем унпа хаваслансах килӗшрӗҫ, килӗшрӗҫ те тепӗр хут выляма ларчӗҫ.

— Сыпкӑҫа юратсах каймастӑп эпӗ. Безусловнӑ. Анчах...— фельдшер шӗвӗр пӳрнине ҫӳле ҫӗклерӗ, ӑна сывлӑшра вылянтарса илчӗ,— анчах... эрех ӗҫсен, манӑн пуҫ мими тӗлӗнмелле урӑлса каять, нихҫанхинчен те лайӑхрах ӗҫлеме пуҫлать.

Автансем пӗр хутчен те, ик хутчен те авӑтрӗҫ. Кантӑкран кӑвак ҫутӑ ҫапрӗ. Шахмат хӑмисем ҫинче кӗрешӳ ҫаплах хӗрсе пырать-ха.

— Тӑхтӑр-ха, Георгий Иванович, эпӗ самантлӑха тула тухса кӗрем,— терӗ Виктор.

Вӑл тӑрса тухма тӑчӗ, анчах темшӗн-ҫке пӳрт алӑкӗ уҫӑлмарӗ. Тракторист тӗреклӗ хулӗпе алӑк ҫине мӗн пур вӑйран талпӑнчӗ — анчах усси пулмарӗ.

— Алӑка такам тул енчен питӗрнӗ пулас,— ҫаврӑнчӗ вӑл тусӗсем енне. Лешсем ун сӑмахне пачах хӑлхана чикмерӗҫ. Пӗр вӑхӑт вӗтеленсе тӑрсан, вӑл алӑка малтан чышкипе, унтан урипе хыттӑн шаккама та тапма тытӑнчӗ. Тинех тусӗсем ун патне чупса пычӗҫ.

— Эсӗ мӗн, пӗтӗм яла вӑратма шутларӑн-им?

— Питӗрнӗ алӑка...

— Э, ку нимех те мар. Халех кантӑк илсе тухатпӑр.

Шахматист тавçăруллă пулмалла. Эпир-и? Эпир вутра та çунмăпăр, шывра та путмăпăр. Ăçта-ха пуртă?

Темле шырасан та, пӳртре пуртă тупăнмарĕ. Санитаркă ăна çенĕкре хăварнă пулас. Пӳрт алăкне те вăлах питĕрме пултарнă. Вăйăран таврăннă май, хĕр хăйне шанса панă хуçалăха тĕрĕслеме кĕнĕ те фельдшер алăка питĕрмесĕрех хăварнине асăрханă, ахăр. «Эх, çав Виталий Петровича, çӳренĕ çĕрте сывăрма хăçан пăрахĕ»? — хăтăрса илнĕ пулĕ вăл ун чухне пункт заведующине.

Ку чăнах та çапла пулнă-ши е урăхларах-и, туссем халлĕхе пĕлеймерĕç-ха. Вĕсем пӳртрен епле тухасси пирки шахматистсен çивĕчлĕхĕпе шухăшларĕç. Виктор, хăй те сисмесле, умывальник айĕнчи таз çине пăхкалама пуçларĕ.

— Эх, эсир те çав, меммесем! Пĕлместĕр мĕн тумаллине! Турчăка пуртăран мĕнпе кая? — çат тутарса илчĕ вăл хăйне çамкинчен. Хăй çавăнтах турчăка тимĕрне алăпах тӳп-тӳрĕ туса аврĕ те ăна фельдшера тыттарчĕ.

— Мейĕр, кăларăр кантăка.

— Кларăм-иç шахматистсем акăш-макăш тавçăруллă тесе. Хулленрех, хулленрех пус! — терĕ Виталий Петрович хăйпе пĕрле кĕрмешекен завуча. Шăршăнса ларнă рамăна тăпсаран иккĕн харăс хытă хирнипе кантăк çат! ванса кайрĕ, турчăка аври пат! татăлчĕ, фельдшерпа завуч çамкисемпе тăрст! çапăнчĕç.

— Аллăрпа ан хыпашлăр, мăкăль кăвакарса тухать,— асăрхаттарчĕ медик юлташне.— Страннă: мĕншĕн кантăксене халичченех икĕ хучĕпе лартнă-ха эпĕ? Çук, капла тухса пулмасть. Никĕс пĕренисене пĕрерĕшне сӳтер мар-ши?

— Каларăн тата... Пĕтĕм ял кулĕ... Тупрăм! Тупрăм! Кăмака мăрйи тĕлĕнче икĕ кĕске хăма пур, çавсене илес те мачча çине тухас, унтан çенĕкелле сикĕпĕр.

Виктор асăннă хăмасем тĕлне сĕтел лартрĕ, хăй ун çине йăпăр-япăр хăпарса тăчĕ. Аялта юлташĕсем вăл мĕн тăвасса çăвар карсах пăхаççĕ. Карт! çĕклерĕ Виктор пĕр хăмине, шапăр! турĕ тăпра ун юлташĕсем çине.

— Фу,— сурчĕ урайне Георгий Иванович,— ман çăварта тем кăчăрт-кăчăрт тăвать.

Туссем тăваттăшĕ те мачча çине хăпарса тăрсан, çенĕке малтан сиксе анма пĕри те васкамарĕ, пĕри тепĕрне хĕтĕртрĕ.

— Сикесси сикĕпĕр те, Микишпе Никиш мыскарине

курас марччĕ,— хыҫса илчĕ ĕнсине Виталий Петрович.

— А мĕн пулнă вĕсемпе? — харăсах ыйтрĕҫ туссем фельдшертан. Хистесех ыйтнăран ăна каласа памах тиврĕ.

Пĕррехинче Микишпе Никиш Пăвана пасара кайнă иккен. Хваттере кĕрсен, хуҫи вĕсене кăмака ҫине выртгарнă. Ĕшеннĕ Микиш хăвăрт ҫывăрса каять те тĕлленме пуҫлать. Вĕсем Никишпе пĕрле шыва кĕме кайнă пек, иккĕшĕ те ҫара пакартан ҫыран хĕрринче лараҫҫĕ пек.

— Чăмам-и, Никиш? — ыйтать Микишĕ.

— Чăм, Микиш! — ответлет юлташĕ.

Унччен те пулмасть, чиперех харлаттарса выртнă Микиш кăмака ҫинчен ҫат! тăвать урайне.

— Э, пирĕн Микишĕнни пек пулмасть,— терĕ Виктор ним иккĕленмесĕр. Паҫăртанпах тула тухма васкакансКер, талт! сикрĕ вăл мачча ҫинчен, шапăр! кĕрсе ӳкрĕ урай ҫуса лапăртаннă шывлă шайккана. «Ай-вай!» — терĕ вăл хăй ăшĕнче, анчах сасăпа ним те шарламарĕ, шайккине кăна стена ҫумнерех куҫарса лартрĕ.

— Сикем-и, Виктор? — илтĕнчĕ ҫӳлтен Георгий Иванович сасси.

— Сикĕр, Георгий Иванович, тулĕк стена ҫумнерех.

Курманнин курасси пурах ҫав. Георгий Иванович тусĕ сĕннĕ пекех турĕ те шăпах шайккана ҫакланчĕ.

— Тьфу! Эпĕ темле лапăрчăка кĕрсе ӳкрĕм пулас! — каллех лачлаттарса сурчĕ Георгий Иванович.

— Ан калаҫăр кирлĕ мара. Мĕн лапăрчăкĕ пултăр унта! — ҫийĕнчех хирĕҫлерĕ ăна Виктор. Хăйĕн тумтирĕ ҫинчен шăршлă шыв пăт та пăт тумлани ҫинчен вăл пĕр сăмах та шарламарĕ.

Георгий Иванович инкек кӳнĕ шайккана айккине илсе лартнăран фельдшерпа завуч мачча ҫинчен парашютсăрах чипер сикрĕҫ.

— Ха, алăпа пĕртте тĕкĕнменччĕ, ҫамка ҫине ҫавахмăкăль тухса ларнă. Чăх ҫăмартинчен каях та мар! — хыпарларĕ тусĕсене Викентий Викентьевич.

— Манăн ун пысăкăшех мар, примернă кедр мăйăрĕ пек кăна,— яланхи пекех лăпкăн диагноз лартрĕ хăйĕн травмине Виталий Петрович. Унтан ҫапла хушса хучĕ:

— Атьсемĕр, нимĕншĕн те ан пăшăрханăр, пурте йĕркеллех.

Чăнах та-ҫке, кунта апла-капла шухăшламалли пачах ҫук. Георгий Иванович вĕр-ҫĕнĕ костюмне лапărта-

нăшăн пĕр вырăнсăр пăшăрханать, Виктор та кăлăхах ассăн сывлать.

— Турчăка аврипе хăналамĕ-ши сана Раис? — ыйтать Георгий Иванович.

— Раис-и? Çук. Авалхи техникăна хисеплемест вăл. Иртнĕ вырсарникун электроутюг ярса тытрĕ те ун шнурĕпе пĕрех туртса çапрĕ пуç урлă. Ничава, вирлĕ çакланать. Чĕн чăпăркка пĕр хĕрринче тăтăр. Ну, сывă пулăр-ха.

Çапла вĕçленчĕ туссен ку каç шахмат баталийĕ. Хăйсем каларĕш, пурте йĕркеллех. Вĕсем качака хăвалакан Элексантăр мар çав. Кăмака çинчен чăмакан Микиш те мар. Пĕр сăмахпа каласан, чăн-чăн шахматистсем! Шахмат вара — чи культурăллă вăйă, выляма та ăна тăватă тус пекех «культурăллă» выляс пулать.

# Марье Марак

Хĕрпе каччă Советсен çурчĕ çумĕнчен сылтăмалла пăрăнчĕç те шăкăлшăкăл калаçса утрĕç. Хăйсем иккĕшĕ те савăнăçлă. Пичĕсем çинче йăл-йăл кулă хĕвелĕн йăлттам шевли пек йăлтăртатать. Вĕсене мĕн хĕпĕртеттернине шутласа та пĕтереймĕн. Паян хăйне профессор мухтанăран Борис çунат хушнă пекех туять. Çитменнине тата лекцисем пĕтсен Марье ăна ăсатса яма чĕнчĕ. Çакă каччăна пушшех савăнтарчĕ.

Институт мастерскойĕ хыçĕнчи йывăçсем çинчен кĕренленнĕ çулçăсем шĕлтĕртетсе çĕрелле ӳкеççĕ. Çанталăк янкăр уяр. Тунсăхлаттаракан кĕрхи хĕвел ытла та тараватлăн ялкăшать.

Утса пынă майăн тем аса илчĕ Марье, сасăпах кулса ячĕ.

— Хăвăн сăввуна ас тăватăн-и, экзамен парса таврăнсан çырса янине?..— терĕ вăл именчĕклĕн, унтан чарăнса тăрсах сăвă калама тытăнчĕ:

> — Хĕвел çиççе тухсан ирпе,
> Вăл савăннă чух уй-хирпе
> Хĕвел çине пăхсассăнах
> Сана куратăп уççăнах.
>
> Аса илетĕп сан ятна,
> Куратăп кăмăллă сăнна.
> Апчах аса илен-ши эс?
> Çакна мĕнле-ши мап пĕлес?

Сăвва хавхаланса каланă май, хĕр хăмаç пек хĕрелчĕ, куç шăрçийĕсем выля тăчĕç. Борис чеен кулкаласа итлерĕ, унăн ниçта та ничетленмен сăввине хĕр пăхмасăр

калама пĕлни каччă кăмăлне кунти хурăнсенчен те çӳлĕрех çĕклерĕ.

— Ĕненсем, тусăм, эпĕ саншăн сăвă çеç мар, поэмă та çырма хатĕр! — хĕмлентерчĕ вăл куçĕсене.

— Тупрăн ĕнтĕ тăрăхламалли...— тарăханçи пулчĕ Марье, анчах чăннипе хĕр çилленме пачах шутламанни унăн тарăн кăвак куçĕсенче уççăнах палăрчĕ.

Бориспа Марье, пĕр район çамрăкĕсем, педагогикă институтне кĕме экзамен тытнă кунсенче çывăхлашрĕç, халĕ вара пĕр-пĕринчен уйрăлма та пĕлмеççĕ.

Марье — кăмăла килмелле хитре хĕр. Вăл сап-сарă çӳçне икĕ хулăн çивĕт туса малалла уртса янă, çивчĕ те йăрă куçĕсем йăл-йăл çунса тăраççĕ. Пуçне çăмăллăн çĕклесе савăккăн кулнă чух тин ӳкнĕ юр пек шурă шăлĕсем курăнаççĕ те, хĕр çине пăхнăçемĕн пăхас килет. Йăлтăртатакан кĕрен платйĕ, çӳхе шурă плащ унăн çинçе кĕлеткине çав тери ятуллă кăтартаççĕ. Платйĕ çухине, çанă вĕçĕсене шап-шур чĕнтĕр тыттарнă. Пуçне вăл йăмăх хĕрлĕ калпак тăхăннă. Алăра тытса çӳремелли сумки те çавăн тĕслех, тĕкĕр пек йăлтăркка.

Алла-аллăн тытăннă çамрăксем, ачалла сиккелесе, хуллен пусма картлашкисем тăрăх Бауман урамне анаççĕ. Марье аялалла пăхса илчĕ те кĕтмен çĕртен тăпах чарăнса тăчĕ.

— Анне! Анне килнĕ вĕт! Ав, аялта тăрать! — вĕçен кайăк пек вĕçесле хĕпĕртесе, кăшкăрса ячĕ вăл; вара хĕр Бориса аллинчен ярса тытрĕ те, икĕ çамрăк картлашкасем тăрăх аялалла чупрĕç.

Хăй килĕштерекен хĕрĕн амăшĕ патне çывăха пыма Борис хăяймарĕ. Хĕр амăшĕн мăйĕнчен пырса уртăннине, унтан иккĕшĕ тунсăхлăн калаçнине вăл аякран именчĕклĕн сăнаса тăчĕ.

— Иртнĕ эрнерех килмеллеччĕ те, мехел çитимарĕ... Э юрĕ, хăшне-пĕрне тата хваттерте пуплĕпĕр. Эсĕ сумкуна хама пар та çак кутамккана йăт, эпĕ куштере тытса пырам,— сĕнчĕ хĕрне ăшшăн амăшĕ.

Марье сăнĕ тăруках улшăнса кайрĕ.

— Хăвах йăтса пымăн-ши, анне? Ытла тусанлă... Уй, эсĕ хăв та тусан ăшне путнă иккен!

Хĕр çапла хуравларĕ те хыпалансах плащне ал туртрипе шăлма пикенчĕ. Амăшĕ ик пĕççине шарт çапрĕ:

— Ай-ай, эс тӳр пилĕке тухса кайнă. Аннене пулăшам-ха, тесси-мĕнни çук сан.

Тарăхса каланă сăмахсене Борис та илтрĕ. Илтрĕ тĕ, унăн куçĕ умне çулла хăйсен ялĕн урамĕнче мĕн курни тухса тăчĕ.

Пасар кунĕ пулчĕ вăл. Марьепе унăн амăшĕн Сухви аппан урапи хирĕç килекен лавсенчен пăрса иртнĕ чухне кĕпер юпинчен çакланчĕ те, малти тĕнĕл шатăрах турĕ. Ку инкек лăпах Бориссен çурчĕ тĕлĕнче пулчĕ. Марье, пасарта туяннă хаклă туфлине аллинчен ямасăр, амăшĕ çĕнĕ тĕнĕл тупса киличченех вырăнтан тапранмасăр ларчĕ, вара тин урапа çинчен анчĕ те, айккинерех кайса, амăшĕ лаша тăварнине лăпкăн пăхса тăчĕ. Урапа ешĕкне йăтма хĕрарăм вăйĕ çитеймерĕ куран, хĕрне пулăшма чĕнчĕ.

— Уншăнах платйĕне варалаймастăп,— пулчĕ ответ.

Хăтăрмаллипех хăтăрчĕ вара тӳр пилĕк хĕрне амăшĕ. Чăтса тăраймарĕ Борис çавăн чух, Сухви аппана пулăшма пычĕ. Вĕсем иккĕн хуçăк тĕнĕле çĕннипе çăмăлах ылмаштарса лартрĕç.

— Ну, синьоринă, сирĕн экипаж хатĕр те ак! — тăрăхласа илнĕччĕ ун чухне Борис хĕре.

Паян вăл Марьене çилленмеллипех çилленчĕ. Хĕре хыттăн ятлас килчĕ ун, анчах амăшĕ умĕнче аван мар. Вăл Сухви аппана алă пачĕ, ун кутамккине йăтса пыма пулчĕ.

— Пастай, эпĕ сана паллатăп-иç. Эсĕ Туçари Çăнахвун ывăлĕ вĕт-ха... мана тĕнĕл ылмаштарса лартма пулăшаканни,— хĕпĕртенĕ пек пулчĕ Сухви аппа.

Марье, тантăшĕсем пек, общежитире мар, хулари куккăшĕ патĕнче пурăнать. Вĕсем виççĕн урампа çавăнталла çул тытрĕç. Калаçма юратакан Сухви аппа халь пайтахчен ним шарламасăр пычĕ. Унăн кăмăлне тăван хĕрĕ хуçрĕ. Çитменнине тата, ку ют çын умĕнче пулчĕ. Чăн ĕнтĕ, Çăнахвун та, ун ывăлĕ те такамсемех мар, çапах аван мар пек.

Ытла ачаш ӳстерчĕ çав хĕрне. Упăшки фронтра вилсен, Сухви аппашăн пĕртен пĕр хĕрачи пушшех хаклăрах пулса тăчĕ, ăна чунтан-чĕререн юратса пăхрĕ. Ашшĕ çуккишĕн кулянасран, тăлăха юлнăшăн хурланасран ăна пукане пек чипер тумпа çӳретрĕ, уншăн укçа-тенкĕ пĕртте хĕрхенмерĕ. Хĕрачи кăмăлне хăварас марччĕ тесе, тепĕр чухне хăйне кирлĕ япалана та туянмарĕ. Марье ял хушшинче çын тĕлĕнмелле çӳретĕр, тантăшĕсем ăмсанмалла хӳхĕм ӳстĕр! Ваттисем ĕлĕкренех çамрăк тиха

пилӗкне авма хушман та, Сухви аппа хӗрачине ӗҫ яхӑнне ямарӗ. Пуҫӗнче сывлӑх, ал-уринче вӑй пур чухне хӗрӗ ӗҫленине пӑхса лармалла-им ун? Пӗртен пӗр тӗпренчӗке хӗрхенмелле мар-им вара! Ёлкӗрӗ-ха ӗҫлеме.

Ҫаярахпа Марье хӑй те ӗҫрен пӑрӑна пуҫларӗ, час-часах ҫапла калама пӑхрӗ:

— Ёнене шӑварма ас тӑваймарӑм, анне. Люся килсе ларчӗ те, гитарӑ каларӑмӑр... Урайне хӑвах сӗр-ха, эпӗ магазина ҫитсе килем, паха лентӑсем килнӗ, тет...

— Ачаш ӳстертӗм ҫав хӗрӗме,— хаш сывларӗ Сухви аппа. Ҫапах та унӑн пуҫӗнчи йывӑр шухӑшсем хула урамӗпе пыруҫӑн майӗпен-майӗпенех сирӗлчӗҫ.

Вӑл Бориспа Марьерен студентсем мӗне вӗренни, епле пурӑнни ҫинчен тӗпчеме тытӑнчӗ, ялти хыпарсене каласа пачӗ. Вӑрӑм ҫул килсе ӗшеннӗскер, уринчи атӑ йывӑррине асӑнчӗ.

— Эй, атту-мӗнӳ, ахалех тӑхӑнтӑм, пушмакпа кӑна килес мӗн.— Унтан ассӑн сывласа илчӗ: — Ватӑлатӑп ҫав, ӗлӗкхилле правур ҫӳрейместӗп ӗнтӗ. Ҫамрӑк чухне пирӗн ура тупанӗнчен вут тӑкӑнатчӗ. Халь вӑн вӑйӑмхалӑм йӑпӑлтах пӗтрӗ.

— Тепӗр хӗр-упраҫран та ирттеретӗн-ха эс, Сухви аппа. Ҫул килсе ывӑнни вӑл нимех те мар. Суха тусан, ырӑ ут та ӗшенет,— терӗ именереххӗн Борис.

Борис Сухви аппа сӑмахне пӳлмерӗ, кирлӗ чухне кӑна хӑйӗн шухӑшне кӗскен каларӗ. Вӑл нумай итлерӗ, сахал калаҫрӗ. Сухви аппа ун ҫине ӑшшӑн пӑха-пӑха илчӗ: каччӑ хӑйне сӑпайлӑ тытни ӑна килӗшрӗ, ахӑр.

Унпа калаҫнӑ вӑхӑтра Борисӑн та кӑмӑлӗ ҫаврӑннӑ пек пулчӗ. Хваттерте ларнӑ вӑхӑтра вӑл кулкалама та пуҫланӑччӗ ӗнтӗ, анчах хӑйне ӑсатма тухсан Марье ялан-хилле ним сӑлтавсӑр ҫӑмӑлттайла ахӑлтатни каччӑна тепӗр хут тарӑхтарса ячӗ. «Эсӗ мӗн ман умра шӑпӑрлан пек шӑл йӗрсе тӑратӑн?» — тесшӗнччӗ вӑл Марьене Горький ҫырнӑ «Хӗрпе вилӗм» произведенинчи сӑмахсемпе. Каласса вара ҫав шухӑшах урӑх сӑмахсемпе каларӗ.

— Кунашкал мӗн пирки савӑк-ха эсӗ? — терӗ вӑл хӗре хаяр сасӑпа.— Аннӳ хушнине итлеменшӗн савӑнатӑн-и? Кутамкка тулли ҫӑкӑр-тӑвар аннӳ хӑв валли тертленсе илсе килни ним те мар-и вара саншӑн? Намӑс пур-и сан е ҫук-и?

Борисӑн каламалли татах та нумайччӗ, анчах Марье

урăх итлесшĕн пулмарĕ, вăрт çеç тӳртĕн çаврăнса тăчĕ. «Тупнă ятламалли», тени пулчĕ ĕнтĕ ку. Ун çан-çурăмĕ вĕриленсе кайрĕ. «Мĕн вара, мана хăй куçĕнчен пăхтарасшăн-и вăл? Хăйне кура мар...» — терĕ хĕр хăй ăшĕнче, куç харшисене мăльт-мальт сиктеркелесе пĕрĕнтерчĕ те хваттерне кĕрех кайрĕ.

Борис салхуллăн общежити еннелле утрĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл кĕрхи хĕвеллĕ кун илемне те асăрхамарĕ, чĕрине тем тăвăлса капланнăн туйăнчĕ.

Çак кунран вара Бориспа Марье хушшинчи туслăха çăра тĕтре карса илчĕ. Марье Бориспа калаçми пулчĕ, лекцисенче унпа юнашар ларма пăрахрĕ. Пĕр каçхине Борис ăна кинона чĕнсе пăхрĕ, хĕр пыма килĕшмерĕ. Хĕр те, каччă та пĕр вăхăт кичем çӳрерĕç. Марье піснĕренпе Борис хăйне çаратса кайнă пек туйрĕ. Переменăсенче вăл час-часах грузинсен «Светлячок» ятлă юррине ĕнĕрлекелесе ларчĕ.

Тĕрĕссипе калас-тăк, Марье шухăшлă çӳресси вăрахах пымарĕ. Пĕр лекцинче хĕрпе юнашар вырнаçнă Йăкăнат ун тетрачĕ çине вăрăм хӳреллĕ кушак ӳкерсе хучĕ, унтан шӳтлĕн: «Хăвăрăн тетрадĕртен куç кĕретĕнех кулнине епле тӳсетĕр?» — тесе çырса пачĕ. «Эп тӳсместĕп-çке. Хут тӳсет. Ман шутпа, хут кирек мĕне те тӳсме пултарать»,— хуравларĕ хĕр Йăкăната. Пуçланса кайрĕ вара иккĕшĕ пĕр-пĕрне хутсем çыра-çыра парасси. «Кунашкал ăслă та хитрескер — кам хĕрĕ-ши эсĕ?» — çырчĕ Йăкăнат тепĕр хут татки çине.— «Тăван аннен!»— кĕскен çеç ответ пачĕ хĕр. Вăл каччă çине вăрттăн пăхапăха илчĕ, ăна Бориспа танлаштарчĕ.

Йăкăнат йăм-йăм кăвак костюм, сип-симĕс пурçăн кĕпе тăхăннă, чăпар галстук çыхнă. Сăнĕ питĕ çепĕç. Кăмăлĕ яланах савăк, пĕр вĕçĕмсĕр шӳтлесе калаçать, час-часах хихиклетсе кулать. Борис тумĕпе-сăнĕпе Йăкăнат патне хăнана та пыраймасть: сăнĕ шуранка, шухăшлă, хура куç харшийĕ çав тери çăра. Вăл нумай калаçмасть, кашни сăмахнех ватă çын пек уйласа калать, хутран-ситрен кăна кулать. Вăл тутипе те мар, ăслăн пăхакан куçĕпе кулать. Йӳнĕ материрен çĕлетнĕ костюмпа çӳрет, галстукĕ те йӳнĕскер çеç. Марье шутланă тăрăх, Борисăн лайăх енĕ — хăйĕн йӳнĕ тумĕпе тирпейлĕ çӳреме пĕлнинче кăна. Чăн ĕнтĕ, студентсем хушшинче «Йăкăнат-аристократ» текен хавха сарăлнă. Анчах ку нимех те мар. Çамрăксен йăли çапла. Ав, вĕсем

яланах ăшă тутăрпа çӳрекен Матрена Староверовăна «тетя Мотя» тесе витлеççĕ, хĕрлĕ çӳçлĕ Макçăма «пушар çӳç» тесе тăрăхлаççĕ. Тепĕр тесен, пĕчĕк чух Марьене хăйне те куç уçма памастчĕç: «Марье Марак, шӳрпи шарак, пăтти пылак»,— тесе кăшкăратчĕç. Вăтам шкулта вĕреннĕ чухне «Ту-тут Марйи» ят сарăлнăччĕ. Ку пĕтĕмпех Марье «сигнал» сăмаха манса кайса, пĕр ачаран: «Ку машинăн ту-тучĕ çук-шим?» — тесе ыйтнинчен пуçланнăччĕ. «Çук, тем тесен те, Йăкăнат — сăпайлă та маттур каччă, вăл мана Борис пек кашни утăмрах кӳрентерес çук»,— шухăшлать Марье.

Комсомол комитечĕ «Мĕн вăл чăн-чăн илем?» ыйтупа диспут ирттерчĕ. Диспутра Йăкăнат та сăмах тухса каларĕ.

— 1934 çулта «Молодая гвардия» журналта Николай Островскин «Хурçă епле хĕрнĕ» романĕ пичетленнĕ,— терĕ вăл кăкăрне мăнаçлăн каçăртса.— Ун чухне яшкĕрĕм, çав чаплă произведение вулас тесе, библиотекăсенче вăрăм черете тăнă. Кĕнеке алла çаклансан, ăна вуласа тухмасăр та алăран яман. Ĕмĕр çамрăк Павка Корчагин халĕ те пирĕн чĕресене тыткăна илет. Мĕншĕн-ши? Мĕншĕн тесен вăл пур енчен те илемлĕ çын. Павка çунса тăран чĕрипе, тĕрĕспе суяна ăнланан ăс-хакăлĕпе, юлташа пулăшма хатĕр кăмăлĕпе килĕшет. Сăн илемĕ хăй тĕллĕн ниме те пĕлтермест-ха. Çын чунĕпе те илемлĕ пулмалла. Çынсем пĕрне-пĕри ĕçре те, вĕренӳре те пулăшмалла. Çавăн пек тăвакансем кăна чăннипех илемлĕ.

Диспутра тухса калакансем нумай пулчĕç, анчах Марьене Йăкăнат сăмахĕсем уйрăмах килĕшрĕç. Диспут хыççăн хĕр Йăкăнат çине татах та ăшшăнрах пăхма тытăнчĕ.

Йăкăнат та Марьене кăмăллать пулас: хĕрпе пĕрле пĕрремĕш хут кинона кайсанах ăна ачашшăн «Мариç» тесе чĕнме пуçларĕ. Халиччен ăна капла никам та чĕнменччĕ-ха. Килĕнче ăна Марье тесе чĕнеççĕ, институтра тантăшĕсене вăл: «Эпĕ Маруся ятлă», тесе пĕлтернĕччĕ. Мариç!.. Капла чĕнни ытла та аван-çке. Кунашкал çепĕç ята шухăшласа калама пĕлнĕ каччă ырă та таса чĕреллĕ пулни пирки иккĕленме те кирлĕ мар.

Йăкăнат Марьене кинона е театра чĕнекен пулчĕ. Хĕр хăйне тархаслаттарса тăмарĕ. Тусшăн вăхăта хĕрхенме юрать-и вара. Вĕсене занятисенче те кичем мар. Акă,

лекци çырса пынă хушăрах Йăкăнат хĕре çĕтĕлтерес шутпа ун тетрачĕ çине ункă ӳкерсе хурать. Марье çилленсе тăвать:

— Вăт çиçтюк! Çĕпĕç суначĕ! Тупнă çиçмелли! — тет ăна хĕр, телейлĕн йăлкăшса. Йăкăначĕ те савăнăçлăн кулать.

Юлашки вăхăтра Марье практикăллă занятисемпе семинарсенче тухса калами пулчĕ, занятисене час-часах ним хатĕрленмесĕр пычĕ. Çакă Бориса хытах пăшăрхантара пуçларĕ, унăн хĕрпе калаçса пăхмаллах, комсоргçке-ха вăл. Анчах Марье хăй мĕн шутлĕ-ши? Пуçпех хытă çилленмĕ-ши? Мĕн пулать-килет, юлташа юлташла асăрхаттармаллах. Тӳрĕ сăмахшăн çилленме кирлĕ маррине ăнланса илетех вăл.

— Марье, тăхта-ха, ман санпа калаçмалли пур,— терĕ пĕррехинче Борис, ăна аудитори алăкĕ умĕнче чарса.— Эсĕ вулав залĕнче те, кабинетсенче те пач курăнми пултăн-çке... Хваттерте хатĕрленетĕн-им?

— Санашкал ялан вулав залĕнче чакаланса ларма кĕл чăххи мар эпĕ!

Хĕр вăртах çаврăнчĕ те аудиторие кĕрсе кайрĕ. «Манпа кунашкал сиввĕн калаçмастчĕ вĕт-ха! — тĕлĕнчĕ Борис.— Хăçантанпа кунашкал пулса тăчĕ-ши вăл?»

Марье хăйне «Эпĕ кăна-им!»— тесе лăплантарма тăрăшрĕ пулин те, Борис асăрхаттарса калани ăна шухăша ячĕ. Вăл кинона, вечерсене сайрарах çӳре пуçларĕ, экзаменсене хатĕрленме пикенчĕ. Анчах нумаях вĕренме май килмерĕ çав ăна. Часах пĕрремĕш семестр вĕçленчĕ, зачетсем, унтан экзаменсем те пуçланчĕç. Зачетсене вăл чиперех пачĕ, анчах икĕ экзамента «вăтам» паллăсем илчĕ. Халĕ ĕнтĕ унăн пĕртен пĕр тĕллевĕ — юлашки экзамена ăнăçлă парасси.

Юлашки экзамен — вырăс фольклорĕ. Экзамен пама килнĕ студентсем коридорта кĕпĕрленсе тăраççĕ: хăшĕпĕрисем лекцисен тетрачĕсене тĕллĕн-тĕллĕн тепĕр хут вулаççĕ, теприсем юлташĕсемпе хуллен тем калаçаççĕ. Экзамен парса тухнă Йăкăнат таçта манса хăварнă кăранташне шырать. «Те çĕр çăтрĕ, те пĕлĕт»,— тарăхать вăл.

— Çухаличчен пурччĕ-и хуть? — йĕплет ăна пĕри.

— Вăрăмччĕ-и кăранташу? — хĕрхеннĕ пек пулса ыйтрĕ тепри.

— Ун кăранташĕ-и? Пĕлетĕп: вăрăмран кĕскерехчĕ, кĕскерен вăрăмрахчĕ...— шӳтлесе илчĕ лара-тăра пĕлмен Макçăм, унтан алăк патне чĕрне вĕççĕн утса пычĕ, хăлхине çăра уççин шăтăкĕ тĕлне тытрĕ те çăварне карса пăрахсах итлеме тытăнчĕ. Лутра пӳллĕ Анюк ун патне йăпăр-йăпăр утса пычĕ, пĕр кулмасăр:

— Асăрхан, çăварна курак вĕçсе ан кĕтĕр! — терĕ.

— Курак вырăнне эс вĕçсе кĕрсен пырĕччĕ те!

Студентсем ахăлтатса кулса ячĕç, вара староста чăш-ш! тесе шăпланма сĕнчĕ.

Литературă кабинетĕнчен кăвакарса-шуралса кайнă Марье тухрĕ. Вăл экзамен парайманнине студентсем пĕр сăмахсăрах тавçăрса илчĕç. Коридор шăпах пулчĕ, ахăлтисем те шăлĕсене çыртрĕç. «Сĕт çулĕпе кĕмелле пултăр, çу çулĕпе тухмалла пултăр!»— шӳтлесе калатчĕç вĕсем экзамен пама кĕрекен юлташĕсене. Кăтра çӳçлĕ Венера кĕнĕ чух нихăшĕ те пĕр сăмах шарламарĕ. Матрена Староверова кăна — «тетя Мотя» текенни — Венера хыçĕнчен тем пăшăлтатса юлчĕ.

Марьене былинăсем çинчен лайăххăн пĕлменни хуплано иккен. Çакăн çинчен вăл Йăкăната кăна пĕлтерчĕ, анчах унăн пăшăлтатса каланă сăмахĕсене çывăхра тăракансем илтрĕç-илтрĕçех. Марье экзамен парайманнишĕн группăри студентсем пурте пăшăрханаççĕ. Йăкăнат кăна хăнк та тумарĕ, ун пичĕ çинче пĕр шăнăр та хускалмарĕ. Хăй вăл экзаменсене пурне те «лайăх» паллăпа панă та, халĕ тутисене чăмăртаса хурса, Марье мĕн каланине мăн кăмăллăн итлет.

— Эх, ты, мемме! Çавна та пĕлеймен! — терĕ вăл сиввĕн. Марье ку сăмахсемшĕн пачах кӳренмерĕ. Каччăна куçран тĕллесе пăхса:

— Йăкăнат,— терĕ вăл çирĕп сасăпа.— Чăн-чăн тус пулсам, экзамена тепĕр хут хатĕрленме пулăшсам!

Йăкăнат пуçне енчен енне пăркаласа илчĕ.

— Кăмăлна йывăр ан ил-ха, Мариç. Киле хăçан таврăнăп вара? Кирек мĕн кала та, каникула ялтах ирттересчĕ-ха ман. Пирĕн ялта çамрăксем кашни каçах клуба пуçтарăнаççĕ...

Марьепе Йăкăнат татах тем пуплерĕç, çав вăхăтра каччă кĕç-вĕç тапса сикесле пĕрмаях ун-кун пăхкаларĕ. Кĕçех Марье кантăк умне пĕчченех тăрса юлчĕ. Вăл урамалла тинкерсе пăхнăн туйăнчĕ. Анчах сĕнксе тăракан хĕрĕн куççульпе тĕтреленнĕ куçĕ нимĕн çинче те ча-

рăнмарĕ. Йăкăнат диспутра тухса каланине, пĕр-пĕрне пулăшма чĕннине аса илчĕ. Çакна аса илсен, унăн чунĕ пушшех кӳтсе кайрĕ. Хĕр чатаймарĕ, шăппăн ĕсĕклеме пуçларĕ. Борис çакна ун хулĕсем туртăна-туртăна илнинчен пĕлчĕ. Вăл Марье çине паçăртанпах пăхса тăрать ĕнтĕ.

Тахăшĕн ачаш алли хулĕнчен хуллен сĕртĕнсен, Марье нӳрлĕ ал тутрипе куçне хăвăрт шăлса илчĕ. Кăртах турĕ хĕр чĕри: ун хыçне Борис пырса тăнă иккен, хăй тем пирки куларах пăхнă пек туйăнать. Мĕн кирлĕ-ха ăна? Çын инкеке лекнĕшĕн савăнать-ши?

Борис ун патне урăх шухăшпа пырса тăнă-мĕн.

— Марье, манăн пĕр сĕнӳ пур,— терĕ вăл йăваш сасăпа. Хĕр ăна хирĕç ним те каламарĕ, çитменнине ун еннелле çаврăнса та пăхмарĕ. Каччă татах та йăвашрах сасăпа хăйĕн сăмахне малалла тăсрĕ:

— Былинăсем çинчен пĕрле вĕренер мар-и? Ик-виç кун пĕрле ларар та, экзамена чиперех парăн.

Марье каччă çине кăн пăхрĕ. Çав вăхăтра унăн кăвак чечек пек хитре куçĕсем Борисран: «Эс чăнласах калаçатăн-и е шӳтлетĕн çеç-и? Çук шыв тăрăх кимĕ çине лартса яма шутламастăн пуль те?»— тесе ыйтрĕ. «Марье! — хуравларĕ каччă çутă куçĕпе.— Нивушлĕ шанмастăн? Эпĕ сана ырă сунса калатăп-çке».

Хĕр хăйне Йăкăнат мемме тесе каланине аса илчĕ, аса илчĕ те пуçне лăштах усрĕ. Йăкăнат сăмахĕсен пĕлтерĕшне вăл халь тин тĕшмĕртрĕ пулас. Пĕр енчен, ку сăмахсем ăна хытах тарăхтарса ячĕç; тепĕр енчен, ăна намăс та: хăй мемме сăмаха илтме тивĕçлĕ пулнишĕн намăс, вĕренес вăхăта пустуй янккаса сая янишĕн намăс. Мĕншĕн Борис питлемелли сăмахсем пĕртте каламасть-ха? Ытла та лăпкă-çке вăл. Куçĕ те тӳлек пăхать. Çав тери ырă ун сенкер куçĕ; ырă çеç те мар, ытармалла мар хитре. Тăпăл-тăпăл çи-пуçлă, илемлĕ çутанка сăнлă каччă çине тинкерсе пăхнăçемĕн хĕр ытларах та ытларах именчĕ. Юлашки вăхăтра хĕр унран именми пула пуçланăччĕ, халь ку туйăм ун чĕринче каллех вăранчĕ. Йăкăнатпа паллашиччен Марье темшĕн-çке Борисран вăтанатчĕ, ăна куçран тĕллесе пăхма та хăяймастчĕ. Акă халь те çавăн пек пулса тăчĕ. Чĕлхи çыхланса ларчĕ ун, калас тенĕ сăмахне те калаймарĕ. Борис хăйĕн сĕнĕвне тепĕр хут каласан кăна вăл хăюсăррăн çапла ыйтрĕ:

— Ҫилне хăҫан кайăн вара?

— Эс экзамен парсан, пĕрле кайăпăр, ял унччен вырĕнчех ларĕ-ха,— хуравларĕ каччă.

Хĕр сăнĕ майĕпен-майĕпенех ҫуталса кайрĕ, тутисем тăпăл-тăпăл чăмăртанчĕҫ. Борис та ҫăмăллăн сывласа ячĕ. Часах студентпа студентка, килĕштерсе пурăнакан тăвансем пек шăкăл-шăкăл калаҫса, коридор тăрăх юнашар утса кайрĕҫ. Вĕсем ҫăмăллăн утнăран, утмаҫҫĕ — вĕҫсе пыраҫҫĕ тейĕн.

# Пуçлăхра чухне

Хула Совечĕн çуртне Зина пăшăрханса кĕчĕ. Ĕçтăвком председателĕн заместителĕпе паян та калаçаймĕ-ши? Зинăшăн пулсан, çынна тилмĕресси чĕр тамăк, халĕ вара чуна хытарасах пулать. Ыйтăвĕ пысăках та мар, анчах татса памасан, ĕçлеме май çук. Отпуска тухсан, вăл çулталăкри Кольăна хăйпе пĕрле яла илсе кайнăччĕ, ясли заведующийĕ ăна темшĕн-çке каялла йышăнасшăн мар. Ним каласа та ÿкĕте кĕмест, пĕрмай вырăн çукка перет. Ĕçтăвкомра ку ыйтăва татса пармаллах пек, анчах каллех инкек: пуçлăхĕпе ниепле тĕл пулма çук. Пĕррехинче канашлура терĕç. Тепринче ăна аслăрах пуçлăх хăй патне чĕнсе илнĕ иккен. Виççĕмĕшĕнче шкул çулне çитмен ачасен хулари учрежденийĕсем тăрăх тухса кайни çинчен пĕлнипе çырлахмалла пулчĕ. Паян хăй вырăнĕнче-ши хуть?

Ытти чухне заместитель пÿлĕмĕн алăкĕ умĕнче çынсем кĕпĕрленсе тăраканччĕ. Халĕ вара кунта никам та курăнмасть. Нивушлĕ вăл паян та çук? Зина иккĕленеиккĕленех алăк патнелле çывхарчĕ, хуллен кăна йĕс хăлăпран туртрĕ. Зинăн телейĕ хăйпе пĕрлех-мĕн. Пуçлăх кабинетра лара парать. Ача амăшĕ хăйĕн хуйхи çинчен тинех каласа парать ĕнтĕ. Тен, пуçлăх ăшă сăмах калĕ, ыйтăва çийĕнчех татса пама та пултарĕ. Телефон тăрăх ясли заведующине пĕччен хĕрарăмăн ачине тăхтаса тăмасăрах йышăнма хушĕ те, вара ĕçĕ те пĕтрĕ. Çак шухăшсем Зинăн пăшăрханăвне пĕтĕмпех сирсе ячĕç. Вăл алăка хăюллăн яриех уçрĕ.

— Кĕме юрать-ши?

— Тăхтăр наччаслăха! Эккей, телефонпа калаçма та ирĕк памаççĕ! — кăмăлсăррăн хуравларĕ заместитель

хулăн сасăпа. Хăй, пуçне каçăртса хунăскер, телефон трубкине татах хăлхи çумне тытрĕ.

Сасă туса пуçлăха чăрмантарасран Зина алăка асăрханарах хупрĕ, шăппăн кантăк умне кайса тăчĕ. Мĕнех вара, пуçлăх телефонпа калаçса пĕтериччен кĕтме пулатех. Тен, патшалăх вăрттăнлăхĕпе çыхăннă акăш-макăш пысăк ĕç çинчен калаçать. Ара, çаплах ĕнтĕ, унсăрăн кĕме чармастчех.

Ĕçтăвком председателĕн заместителĕ Афанасьев — хăй вăхăчĕн кашни минучĕпе пĕлсе усă куракан çын. Ĕнер каç вăл вăрман хуçалăхĕнчи Егоров инженерпа шахматла вылясаччĕ, вăхăт вăраха кайнăран, вĕсене пĕр партине вĕçне çитермесĕрех пăрахма тивнĕччĕ. Тӳррипе калас-тăк, Афанасьевĕ вăййа тепĕр вăхăта хăварма юратсах каймасть. Ку хутĕнче ăна партнер сывлăш тухмалла мар хĕссе çитернĕччĕ те, партие тепĕр чух тăсма килĕшмеллех пулчĕ. Ирпе ĕçе килсен, Афанасьев вăхăта сая ярса лармарĕ, тӳрех ĕнерхи партие епле выляса пĕтересси пирки шухăша путрĕ.

— Эврика! — терĕ вăл пĕр çур сехетрен. Ал тупанĕпе çамкине çат! çапса илчĕ те телефонисткăна вăрман хуçалăхĕпе çыхăнтарма хушрĕ. Шăпах çав вăхăтра кĕрсе чăрмантарма пăхрĕ ăна пĕр тĕлсĕр-йĕрсĕр çӳрекен хĕрарăм. Пулать çав çын! Таçтаваскать. Çунмасть вĕт. Кăшт та кĕтсе тăрасшăн мар.

— Ирхи салам! — мĕкĕрчĕ вăл телефонпа, трубкăра Егоров сассине илтсен,— Э, хамăн сывлăх пирки шалăпллама пултараймастăп. Пĕлетĕн-и, братец, сана 4 ходран мат! Çук, мĕншĕн каппайланас? Кирек мĕнĕнне те ăна майне пĕлес пулать. Мĕн тетĕп? Çур банкă коньяк санран тухать. Мĕнле майпа мат? Пĕлесех килсен, кĕттерсе ан тăр, срочнă килсе çит.

Телефон трубки аппарат рычагĕсем çине канăçлăн пырса выртрĕ.

Çав хушăра Зина та канăçлăнах кĕтсе тăчĕ. Акă, ырă пуçлăх телефонпа калаçса пĕтерĕ те кабинета хăех чĕнсе кĕртĕ. Ия, çаплах пулать. Часах алăкне уçĕ те: кĕрĕрех, тейĕ, мĕншĕн килнине ыйтса пĕлĕ. Анчах пуçлăх темле сăлтавпа хăйĕн ырă кăмăлне кăтартма васкамарĕ. Темиçе тĕрлĕ ыйтупа шухăшланă май хĕрарăм кĕтсе тăни çинчен манса каймарĕ-ши вăл? Мĕн пулать те мĕн килет тесе, Зина каллех пӳлĕм алăкне уçрĕ.

— Ну, мĕн унта? Çунмасть пуль вĕт? — пуçне çĕклемесĕр ыйтрĕ пуçлăх.

— Çунасси çунмасть те...

— Эппин, тăхта наччаслăха.

Зина каллех кантăк патне таврăнчĕ. Кĕçех ун тĕлĕнчен пĕр вată та мар, яшă та мар хыткан этем вăшт çеç утса иртрĕ, ыйтса-туса чăрманмасăрах тӳрех заместитель пӳлĕмне кĕрсе кайрĕ. Тепĕр минутран алăк шăнкăрт питĕрĕнчĕ шал енчен.

— Эсир Афанасьев патне-и? Йышăнать-ши?—пырса тăчĕç Зинăпа юнашар арçынпа хĕрарăм.

— Йышăнать, ахăр. Тулĕк ун патне пысăк пуçлăх килчĕ пулас, питĕрĕнсе ларсах пуплеççĕ,— хаш сывласа илчĕ Зина. Ку пуçлăх Егоров инженер пулнине тата вăл мĕн çăмăлпа килнине тавçăрма пултарайман çав апăрша хĕрарăм.

Пăртакран кĕтекенсем патне пырса, икĕ рабочи черет йышăнчĕç, унтан артист евĕр бант çыхса янă каччă тата аллине кивĕ сăран сумкă тытнă старик килсе тăчĕç. Черет пысăкланнăçемĕн пысăкланса пычĕ. Унăн вĕçĕ, коридоралла тăсăлса кайса, малта тăракан Зинăна курăнмиех пулчĕ.

Егоров инженер тусĕпе заняти пĕтсенех тĕл пуласси пирки каласса татăлса пӳлĕмрен тухсанах заместитель патне ĕçтăвком секретарĕ кĕчĕ. Ун хыççăн, хул айне хулăн папкăсем хĕстерсе, финанс пайĕн заведующийĕ, главнăй врач-педиатор, хулари театр директорĕ пĕрин хыççăн тепри пуçлăх пӳлĕмнелле ярăнтарчĕç, черетре тăракансем çине çаврăнса та пăхмарĕç. Каялла тухма вара нихăшĕ те васкамарĕ.

Стена çумĕнчи сехет çаплах шаккать те шаккать, унăн йĕпписем малаллах шăваççĕ.

— Тенкел лартасчĕ хуть çакăнта. Пĕрмай тăнипе урасем ним туймиех пулчĕç,—хăй тĕллĕн мăкăртатса илчĕ Зина.

Шăп çав вăхăтра пуçлăх алăкĕ уçăлчĕ. Унтан çынсем кĕпĕрленсе тухрĕç, кĕçех Афанасьев хăй те курăнчĕ.

— Йышăнма пуçлать, ахăр,— пăшăл-пăшăл туса илчĕç черетри çынсем. «Тинех кĕретĕп!»— вĕлтлетрĕ савăк шухăш Зина пуçĕнче. Хĕпĕртенипе тăрса ывăнни çинчен те манчĕ. Ана нумайччен кĕттернĕ пуçлăх та лайăх çын пек туйăнса кайрĕ. Зина ун çине именчĕклĕн пăха-пăха илчĕ. Анчах сивĕ сăн-питлĕ пуçлăх тем пирки ун çине

пěртте пăхмарě, черетри ытти çынсем çине те куç айěн кăна пăхса илчě. Унтан, сăмахěсемпе сулхăн çаптарса, пурте илтмелле çапла пěлтерчě.

— Юлташсем, ěçсем важнах мар. Бюрократ тесе айăплатăр-и е урăх сăмахпа ятлатăр-и, кирек те мěн калăр, никама та принимать тăваймастăп.

— Епле апла? Мěн пирки? Мěншěн пустуй кěттеретěр? — хускалса илчěç çынсем.

— Ачана никампа хăварма çук та...— шапчăкне çухатнăн, мěскěн сасăпа каларě Зина.

— Кăшкăрашнинчен усси çук. Кирек мěнěн те хăйěн йěрки пур. Хăвăрах куратăр, апат вăхăчě çитрě. Кăнтăрларан вара заводри ача садне проверкăна каятпăр. Тепěр чухне килěр.

Ăнланатăп, анчах нимěн тума та пултараймастăп тенěн, Афанасьев аллисемпе апла-капла туса илчě те, касăрăлчăк пуçне тата çӳлерех çěклесе, хăйěн çулěпе уттара пачě. Шак хытнă пек тăракан çынсем чарăлса кайнă куçсемпе пăхайса юлчěç.

— Пыр та калаç унпа... Çын хуйхи çил çинче çав,— ассăн сывларě куçлăхлă старик.

— Тăхта, пуйăс, кутамкка юлать! — шӳтле кăшкăрчě пуçлăх хыçěнчен артистла тумланнă çамрăк.

Пăртакран, тăрса та усси çуккине ăнланса, çынсем икшерěн-виçшерěн салана пуçларěç. Салхулланнă Зина та, хула Совечě çуртěнчен кичем сăнпа тухса, хваттерне сěнкěлтетрě. Кăмăлě хуçăлнăран нихăш ěç патне те алли пымарě унăн. Яра кун уссăрах иртрě. Ырă çынна тěл пулсан — чун уçăлать, усала тěл пулсан — кун пăсăлать, тесе ахальтен каламан çав. Ресторанта официанткăра ěçлекенскер, ачине ырă кӳршěсем патне хăварса, каç кӳлěм ěçе кайрě.

Ěçре унăн чунě кăштах лăпланнă пек пулчě. Клиентсем лайăх кăмăллисем пыра-пыра ларчěç. Пěрисем пěрле апат çиме чěнчěç, теприсем сăра тутанса пăхма сěнчěç. Ялтан килнě старик официанткăна мухтаса илчě: «Ěç патне сирěн алă питě çыпăçать, кин туса киле кěртме те тиркессěм çук»,— терě вăл. Сарлака хул-çурăмлă, тěм-хура çӳçлě лейтенант тутлă апатпа пěрле чипер официанткăна хăйне те кěмěл кашăкпа çăтса яма хатěрри çинчен пěлтерчě.

Клиентсем умěнче куçран ӳкесшěн мар пулса, хăпăлхапăл ěçленě май, Зина хăйěн хуйхине те мана пуçларě.

Пусăрăнчăк шухăш-кăмăл майĕпен-майĕпенех сирĕлсе пычĕ.

Тахăш вăхăтра чи хыçалти сĕтел хушшине икĕ арçын кĕрсе ларчĕç. Пĕри кÿпшек кĕлеткеллĕ, яп-яка пичĕ вĕрсе хăпартнă пек сарлака. Вăл мăнтăр аллисене сĕтел çине хурсан, Зинăна вĕсем тукмак пек туйăнчĕç. Тепри вара типшĕм çын. Сăнĕпе хăй пăхмалăх та çук, тăсмака питне хура тут пусса çерçи çăмарти пек чăпарлатнă, куçĕсем путса кĕнĕ. «Вĕтĕннĕ чун... Пĕр вăрăм туна ĕçсен, теприн валли юнĕ юлмасть»,— йăл кулса илчĕ Зина. Вăл икĕ клиента пĕр-пĕринпе танлаштарчĕ те, ăна ирĕкре саркаланса ÿсекен элес-мелес куршанакпа хÿме айĕнчен шăтса тухнă çинçешке мăян аса килчĕç.

Зина арçынсене иккĕшне те тÿрех палласа илчĕ. Акă ку, самăрри, пуçне хур аçи пек каçăртса çăлтăрсем шутлаканни, ĕçтăвком председателĕн заместителĕ. Тепри камне пĕлмест вăл, анчах ăна та хула Советĕнчех курнă. Çак çынсене асăрхасанах, Зина чĕрине сивĕ пăр сĕртĕннĕ евĕр туйăнса кайрĕ.

Вулакан ан иккĕлентĕр, кусем чăнах та Афанасьевпа Егоров пулчĕç. Вĕсем, пÿрнепе кăчăк туртса, официанткăна хăйсем патне чĕнчĕç. Аллинче тулли поднос пулнипе Зина клиентсене кăштах тăхтама ыйтрĕ. Буфет еннелле утнă чухне унăн пуçне темле каварлă шухăш пырса кĕчĕ пулас, хитре пичĕ çинче чее кулă выляса илчĕ. Çĕнĕрен килнĕ клиентсем патне вăл «кăшт тăхтасан» та пымарĕ, сĕтел ещĕкĕнчи вилкăсемпе çĕçĕсене ал шăллипеваскамасăр сăтăрса тасатма тытăнчĕ. Лешсем ăна каллех хăйсенчен заказ йышăнма чĕнчĕç. Официантки вĕсем енне çаврăнса та пăхмарĕ.

— Тăхтăр наччаслăха! Пăван пекех çыпăçатăр. Эсир столовăя мар вĕт, ресторана килнĕ...— терĕ вăл.

Афанасьевпа Егоров ресторана çĕкленÿллĕ кăмăлпа килнĕччĕ. Ара, çÿр банкă коньяк сыпмалла-çке-ха вĕсен. Çитменнине тата, сăлтавсăр мар, шахмат ваййине вĕçне çитернĕ ягпа. Официанткă вăрах кĕттернине пула çав ырă туйăм иккĕшĕн те ирхи тĕтре пекех сирĕле пуçларĕ, чĕрисене темле ăман вĕчĕлтеттерчĕ. Ытти чухне хăйне мăнаçлă тытакан Афанасьевăн тÿсĕмĕ вĕçнех тухрĕ пулас.

— Мĕн карчăкла кĕштĕртетет çав ăçтиçук хĕрача? Çын мĕшĕлтетнине манăн пĕртте юратас кимест,— терĕ вăл хыттăнах.

— Не обязательнă сразу... Луччă сăнаса пăхăр-ха ун ҫине: мĕнешкел хитре вăл! Славниех темелле,— сăмаха урăххи ҫине пăрма хăтланчĕ Егоров.

Чăнах та, Зина — чипер хĕрарăм. Хăмăртарах тĕслĕ платйĕ унăн йăрăс кĕлеткине тăп-тăп тытать, урине вăл ҫӳллĕ кĕлеллĕ туфли тăхăннă, пуҫĕнче — чĕнтĕр тыттарнă шурă калпак. Сăнĕ тулли уйăх пек ҫутă, куҫĕ ҫурхи тӳпе пек сенкер.

Ҫапах та официантка килĕшмест Афанасьева.

— Э, тупнă сăхланмалли... Тумлантарсан, тунката та пукане,— теейрĕ вăл.

— Нумая кĕтнине сахала кĕтетпĕрех,— лăнкăрт ҫăтрĕ сурчăкне Егоров.— Хамăрăнне ĕҫме килнĕ, такамăнне мар. Ҫын шучĕпе ĕҫме эпĕ вообще юратмастăп.

Афанасьев мăч та хупăнми кĕленче куҫĕпе тусĕ ҫине сӳрĕккĕн пăхса илчĕ.

— Конечнă, пĕрре пулнăччĕ. Лешĕ, трестри Тихонов, пĕлтĕр пире, Ивановпа иксĕмĕре, питĕ лайăх шыва кĕртнĕччĕ. Тепĕр кунне пуҫ ҫĕклеме ҫук ыратать. Мухмăр... Что делать? Хăв пĕлетĕн, ун пек чух кĕсъе тĕпĕ яп-яка. «Каяр Тихонов патне, унăн пулмалла»,— ăс пачĕ Иванов. Кайрăмăр. Откуда ăс ҫитрĕ — хам та тĕлĕнетĕп. «Эсĕ ĕнер ӳсĕрле манран 3 тенкĕ укҫа кивҫен илнĕччĕ, параймастăн-ши?»— тетĕп. «Илтĕн ҫав, унран илсе буфетчицăна тӳлерĕн. Мантăн та-и?»— аса илтернĕ пек пулчĕ Иванов та. Хайхи вара хăйĕн 3 тенкипе Тихонова хăйнех хăналаса хăвартăмăр. Так сказать, интерес пĕр чĕрес пулса тухрĕ.

Егоров хăй мыскарине каланă май вĕҫĕмсĕр хихиклетрĕ, Афанасьевĕ итлесе пĕтерсен аслати сассипе кĕскен ахăлтатса илчĕ.

— Вообще эпĕ те ҫынран ĕҫмен. Простă каласан, майĕ пур-ха вăл. Ҫынсене эпĕ сахал мар ырă тунă, толькă вĕсен эрехĕ кирлĕ мар мана,— пĕлтерчĕ хăйĕн ҫинчен Афанасьев. Унтан каллех кулянма пуҫларĕ:— Вăт лартать пире ҫил хыптарса! Чуна кăларать кĕттерсе...

— Ничава... Кăлăхах пăлханас мар. Акă мĕн тасатмаллине тасатса пĕтерĕ те живă-два пирĕн пата килĕ. Пилĕк ҫăлтăрли те ума туххăмах килсе ларĕ,— тусне лăплантарма пăхрĕ Егоров.

Анчах шурă саппунлă чиперкке пуҫланă ĕҫне пĕтерсен те ҫав-ҫавах вĕсем патне пымарĕ, малти сĕтел хуш-

шине тин çеç кĕрсе ларнă каччăран заказ йышăнчĕ те чаршав хыçĕнчи буфета йăпăр-япăр кĕрсе кайрĕ.

— Ну, мĕн унта? Çунмасть пулĕ те? — хаярран çиç-терсе илчĕ куçне официанткă икĕ клиент тĕлĕнчен вăш-ваш утса тепре иртсе пыруçăн.

Мĕн калать çав чăрсăр хĕрарăм? Ку нимĕнле калăпа та шăнăçмасть-çке. Афанасьев пичĕ кĕç-вĕç çурăласла хĕрелсе кайрĕ. Кĕрĕс-мерĕс кĕлеткеллĕскер ури çине мă-раннăн тăчĕ. Килсĕр-йĕрсĕр, ятсăр-шывсăр сĕтĕрĕнчĕк мар вăл! Мĕн тесен те, хула пуçлăхĕ! Хăйне епле хисеп-леттермеллине пĕлекенччĕ-ха.

— Эсĕ мĕн... мана палламастăн-им? Халех админи-стратора чĕнсе килнĕ пултăр!— хушрĕ вăл, çиллине шă-нарса.

Хаярланнă пуçлăхăн çиллес сăмахĕсем официанткăна йывăç çинчен татăлса ӳкнĕ кĕрхи çулçă тĕшне те тăма-рĕç пулас.

— Кирек те мĕн каласа ятлăр, администратор сирĕн пата тухма ерçеймест. Тепĕр чухне килĕр,— терĕ офици-анткă ним пулман пекех лăпкăн.

Тĕлĕннипе пуçлăхăн çăварĕ хапха сарлакăш карăнчĕ. Кăн-н пăхрĕ сивĕ куçĕпе чăрсăр хĕрарăм çине. Хă, ăçта курнă вăл ăна? Сассине та таçта илтнĕ... «Ачана никам-па хăварма çук та...» — сасартăк чан çапнă пек янăраса кайрĕç ун хăлхинче хăй илтнĕ сăмахсем. Самантрах аса илчĕ Афанасьев ку хĕрарăма ăçта курнине. Аса илчĕ те, çан-çурăмĕ çӳçеннĕ пек пулчĕ. Тепĕр тесен, çак туйăм унăн пурĕ те минутлăха çеç пычĕ. Кĕçех вăл Егоров ен-нелле мăнаçлăн çаврăнчĕ те çапла хушрĕ:

— Çĕкле парăсна залăн тепĕр еннелле . Унта урăх официанткă пулма кирлĕ.

Ресторанта пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса ларма тивнишĕн Афанасьев питех пăшăрханмарĕ. Пăшăрхан-малли кайран килсе тухрĕ: ăна хальхи суйлавра хула Совечĕн яхăнне те ямарĕç. Йĕрки çапла: мĕн акатăн, çав шăтать.

# Çыхман çапă шăпăр мар

Ял çумĕнчи пысăк пĕвен пăртан тасалса пыракан кăкăрĕ тăрăх палăри-палăрми тĕтре каркаланать. Вăл, хумлăн-хумлăн çĕкленсе, ĕне фермин витисем урлă хуллен хыр вăрманĕ еннелле туртăнать. Унта та кунта йывăçсем хушшинчен ирĕлсе пĕтмен юр чăл-чăл шурă саплăксем пек курăнать. Ватă хырсем ним хускалми лараççĕ. Вĕсем ирхи шуçăм вăхăтĕнчи тутлă ыйха уçаймасăр канлĕн тĕлĕреççĕ.

Çынсем йывăçсенчен те маларах вăранаççĕ-мĕн. Ялтан тухса, икĕ çамрăк вăрман еннелле утать. Кусем — пĕр тăвансем: Мĕтрипе Верук.

— Эсĕ каях ĕнтĕ, эпĕ кунта кăштах сывлăш çавăрса ярам,— терĕ Мĕтри вăрман хĕррине çитсен.

Ку вырăнта пиччĕшĕнчен çавнашкал сăмахсем илтме Верук хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ, мĕншĕнне-мĕнне те лайăхах пĕлет, çавăнпа ним шарламасăр вăрман хĕрринчи сукмакпа фермăналла кайрĕ. Мĕтри квартал юпи çумне таянчĕ те çул çине куç илми пăхрĕ. Кĕçех Çĕн урам енчен йăрăс пÿллĕ çамрăк хĕр хăвăрт-хăвăрт утса килни курăнчĕ.

— Сывлăх сунатăп, Лена! — аякранах кăшкăрса саламларĕ ăна каччă.— Эсĕ куратăн-и?

— Курасса чиперех кураканччĕ те, анчах мĕне-ши?

— Пăхсам: пĕве хăйĕн вăрăм çивĕтне вăрман çине уртса янă. Çитменнине тата, сан çивĕт пекех хитре.

— Ан кулса тăр манран, эс кулас çын мар эпĕ,— çиллененçи пулчĕ хĕр. Анчах хăй çавăнтах каччăна алă тăсса пачĕ. Çав вăхăтра унăн пичĕ кĕрен шурăмпуçĕ пек çулăмланчĕ. Кĕçех хĕрпе каччă çума-çумăн фермăналла утрĕç.

Ене ферми капăр хырлăх хĕррине вырнаçнă. Кунта кирпĕчрен тунă пысăк та вăрăм витесем ретĕн-ретĕн лараççĕ. Кормокухньăн çӳллĕ мăрйинчен тĕтĕм мăкăрланать. Кăшт айккинерех общежитин шиферпа витнĕ çĕнĕ çурчĕ илемлĕн курăнать. Водопровод башни, апат хатĕрлекен агрегатсем, выльăх апатне витене турттармалли вагонеткăсем, электричествă çути — çаксем пурте пĕрпĕр фабрикăна аса илтереççĕ.

Фермă патне çитеспе Лена каччăна çамрăк хурăн тĕлĕнче чарса тăратрĕ. Çак йывăç, вăрмантан ирĕк вырăна тухса, пĕчченçи ӳссе ларнă.

— Эсĕ куратăн-и?— Мĕтрие хулĕнчен кăлт тĕкрĕ хĕр.

— Аванах куратăп. Чиперккене чунсăр чун лăскаса кайнă.

— Хуçăк турачĕсем нишлĕ хур чĕппи çуначĕсем пекех усăнса тăраççĕ. Питĕ шел...

— Шел,— килĕшрĕ Мĕтри.

Хĕрпе каччă фермăна кĕчĕç. Унта çынсем калаçни, витресем чăнкăртатни, ĕнесем тунсăхлăн мĕкĕрни уççăнрах та уççăнрах илтĕнекен пулчĕ.

Ирхи ĕнтрĕке сирсе, ял енчен хĕвел çĕкленчĕ. Вăл хăйĕн пайăркисемпе чи малтан хыр тăррисене тараватлăн лăпкаса илчĕ, унтан ачаш çутине хырлăх çумĕнчи ĕне витисен çи виттийĕсем çине ӳкерчĕ. Часах пĕтĕм тавралăх, ылтăн тĕспе çиçме пуçласа, савăккăн кулса ячĕ.

Çанталăк тӳлек. Çурхи сывлăш таса та уçă, хыр вăрманĕнче вăл уйрăмах ырă. Çутçанталăк çĕнелни кăмăла хускатать.

Пăртакран ĕне кĕтĕвĕ вăрманалла кĕрсе кайрĕ. Унта пĕлтĕрхи çулçăсемсĕр пуçне нимех те çук-ха, çапах та ĕнесене уçăлса çӳрени пăсмасть, кайран вĕсем апата лайăхрах çиеççĕ.

Тулли флягăсене ретĕн-ретĕн лартса тиенĕ грузовик, фермă картишĕнчен тухса, çу заводнелле çул тытрĕ.

— Эпир çаврăнса киличченех качча тухса ан кайăрха, хĕрсем! — кăшкăрса хăварчĕ кабинăран Санька.

— Эсĕ авланмаллине аса илмесĕр качча тухма шутламастпăр! — евитлерĕ хурарах сăнлă лутра Верук.

Çывăхри çынсем ахăл-ахăл кулса ячĕç. Пĕр Клава кăна тутине тăп çыртса лартрĕ. Шап-шурă питлĕскер, вăл грузовике куçĕпе пăхса ăсатрĕ те общежити çуртне чупса кĕчĕ.

— Лена, эсӗ мӗн туса тăратăн кунта? Юрату чирӗпе аптăрамарăн пулӗ те?

Тантăшӗ хăйне хирӗç мӗншӗн сăмах хушманнине ăнланайманнипе Клава та кантăкран пырса пăхрӗ. Турник çинче фермăри учетчик Мӗтри упражненисем тăвать иккен.

Клава хуллен кăна тантăшӗн хулӗнчен сӗртӗнчӗ:

— Хăй эсӗ ун çине пăхса савăнса тăни çинчен шутламасть те ӗнтӗ!

— Ай, ӳкет вӗт...— шартах сикрӗ Лена.

— Ха, ним мар «хӗвел» турӗ,— терӗ лăпкăн тепӗр самантран Клава.

Икӗ хӗр çаплах куç илмесӗр кантăкран пăхаççӗ. Каччă, турник çинчен çăмăллăн сиксе, аллине вӗçесле малалла тăсса хучӗ, унтан салтакла хăвăрт тӳрленсе тăчӗ те çамки çине усăнса аннă çӳç пайăркине шăлса вырттарчӗ. Юпа тăрринчен çӳхе пиншакне илсе тăхăнчӗ, аллине пуртă тытрӗ те çăмăллăн утса кайрӗ.

Хӗрсене иккӗшне те пӗр ыйту интереслентерчӗ: учетчик шут шăрçине мӗншӗн пуртăпа улăштарнă-ха? Мӗн шут тытнă-ши вăл?

Вӗсен вăрах кӗтмелле пулмарӗ. Мӗтри хуçăк турачӗсене усса мӗскӗннӗн ларакан çамрăк хурăн патне пычӗ те унăн хăрăк тураттисене асăрхануллăн касма тытăнчӗ.

— Лайăх каччă,— ырларӗ шăппăн Лена.

— Темле çав... Темли-мӗнни, килӗшмест вăл мана. «Вилсе пыракан профессипе ӗçлетӗп, коммунизмра çынсен ӗçне шута илни кирлех те мар», текелет. Верук суса илекен сӗте ӳстерсе кăтартма вăтанмасть вара хăй. Йӗкӗрешсем темерӗн...

— Мӗн-н? Чӗлхӳ вӗçне ма шӗпӗн тухмасть санне!— кӳренсе пӳлчӗ тантăшӗн сăмахне Лена.

— Мӗн шӗпӗн тухмалли унта! Çав лутака Верук чухлӗ те ӗçлейместӗн-и эсӗ? Кирек мӗнле тăрăш, вăл пур пӗр санран иртгерет. Мӗншӗн? Мӗншӗнни паллă: кашкăр пулăшсан, вăрăм туна та лашана ӳкерет. Сана савни тесе шутлать, сӗтне пӗр грам та хушса çырмасть.

— Çитет! Тек ан лăпăртат кирлӗ мара! — тăрăст тапрӗ урине Лена.— Лайăх çынсем çинчен ман умра сӳпӗлтетсе ан тăр!

— «Сӳпӗлтетсе»... Санăн мана чариччен вӗсене чарасчӗ. Хамăн куçпа хам куртăм. Мӗтрийӗ пурăпа Кăтарту хăми çине çырать, Верукӗ юнашар шăл йӗрсе тăрать. Лу-

таки тем каларĕ, шахвăртаймарăм, пиччĕшĕ вара çавăнтах унăн хушамачĕ тĕлне урăх цифрă çырса лартрĕ.

— Авăртах ĕнтĕ, авăртах...

— Татах ĕненмест... Кирек мĕн кала, ахальтен мар апла тăвать. Ак курăн: ăмăртура эсĕ мар, Верук мала тухать. Çĕвĕ машини те, чапĕ те ăна çакланать.

Лена пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Пит çăмартийĕсем кăна вутла çуна пуçларĕç. Тарăхмаллипех тарăхса кайрĕ вăл. Тантăшĕ çакна асăрхасшăн пулмарĕ, çаплах хăйĕнне печĕ:

— Итле, тулĕк сăмах хамăр хушăра пултăр. Мĕтрие тыткăнлас тесен, санăн ăмăртура мала тухас пулать. Қашни кун çур витре сĕт парам та, Мĕтрие те хăвăн çумна çирĕппрех кăкаратăн, çĕвĕ машинине те санах параççĕ. Ас ту, варлин варли тата пур. Фельдшерицă куç хывнă, тет, ăна.

Килĕшӳсĕр сăмахсене Лена урăх итлесе тăмарĕ, сĕт витрисене çума кайрĕ. Тепĕр сехетрен вăл Мĕтрие Верукпа пĕрле Қăтарту хăми умĕнче курчĕ. Вĕсем иккĕшĕ калаçса тăраççĕ. Пĕр тăвансем кайсанах Лена та унта пычĕ.

— Куратăн-и, ăмăртăва тăвансем каллех пĕр çăвартан сурса çутатрĕç,— пырса тĕкрĕ ăна хыçалтан Клава.

Лена, илтмĕш пулса, Қăтарту хăми патне çывăхарах пырса тăчĕ. Унăн ĕнер суни ĕне пуçне 8 килограмччĕ. Верукăн 9 килограм иккен.

Вун пилĕк дояркă, вун пилĕк хушамат. Чи хыçалта— Қлава хушамачĕ. Эх, Қлава, Қлава... Хăв хӳрере сĕтĕрĕнетĕн, тантăшна мала кăларасшăн. Анчах та вăл мана мĕншĕн ун пек тума сĕнчĕ-ха? Ырă сунса-ши е урăх тĕллевпе-ши? Варлин варли пур тесе элеклеме пăхрĕ те, унăн хăйĕн çапла мар-и-ха? Нивушлĕ вăл Санькăна юратать? Верук çине çилĕ тытмасть пулĕ те? Çук, апла пулма пултараймасть. Санькăпа Қлава килĕштернине Лена пачах асăрхаман. Паллах, çĕнĕ çул каçрине шута илме çук. Ун чухне Қлава темле майпа ӳсĕрĕлнĕ кайнă. Санька сӳсленнĕ хĕре килне çитичченех ăсатса янă.

— Сан малти ступицăсенче подшипниксем çийĕнмен пулĕ те? Тем, люфт пур пек,— тăрăхлама пăхнă шофер хĕртен.

— Ик... мĕн лифчĕ пултăр унта... ик...— çине-çинех иклетнĕрен аран-аран каласа янă лешĕ.

— Ик те мар, лифт та мар, люфт. Урусене çирĕпрех пус. тени пулать вăл. Çил вĕрнипех тайкаланмаççĕ ăна.

Япăх пулса тухнăшăн хĕрĕ мар, каччи çул тăршшĕпех кулянса пынă. «Эй-яй-яй! Мĕн тесе ку таран ĕçмелле пулнă-ши? Эй-яй-яй! Сана халь мĕнле каччă юратĕ ĕнтĕ? Аçу-аннŭ те ун пек мар-çке!»— чунтан пăшăрханнă вăл. Хĕр тутисем вĕçĕмсĕрех пĕрешкел сăмахсем пăшăлтатнă: «Эх, Санька, эсĕ нимĕн те пĕлместĕн». Хĕрпе каччă çапла пуплесе пыни тахăшĕн çивчĕ хăлхине кĕнĕкĕнех. Çамрăксем шăл йĕрес шутпа Санькапа Клава умĕнче яйяйлатнине халичченех илтме пулать. Анчах Клава ÿсĕр пулнине Лена хăй куçĕпе курман, аван мар тесе ун пирки хăйĕнчен те ыйтса пĕлмен.

Тепĕр кун Верук вырăнне ĕçе инкĕшĕ пычĕ. Çав кунах Верук ĕнисем çуршар литр сĕт чакарчĕç. Иккĕмĕш кунне ун хушамачĕ тĕлне Кăтарту хăми çинче тата пĕчĕкрех цифрă çырăнчĕ.

Каçпа юлашки ĕнине сăвакан Лена патне Клава пырса тăчĕ. Хăй хул пуççи урлă ал шăлли уртса янă.

— Эх, Ленук! Ытла та айван эсĕ,—пăшăлтатрĕ вăл.— Нимĕн те, нимĕн те пĕлместĕн. Сар ывăл хăйĕн инкĕшĕ. сунă сĕте ÿстерсе çырма хăяймасть çав, тăрă шыв çине тухасран шикленет.

Лена сăмах чĕнмесĕр унран тепĕр еннелле уйрăлса кайрĕ. Пĕр те пĕр шутласан, Верук ĕнисем сĕт чакарнинчен тĕлĕнмелли те çук пек. Унăн инкĕшĕ ку таранччен фермăра ĕçлесе курман, выльăха епле пăхмаллине те лайăххăн пĕлсе çитермест. Çитменнине тата, ĕнисем те хăнăхман алла сĕт антарасшăн мар. Çапах та Лена пуçне иккĕленÿллĕ шухăшсем пыра-пыра тухрĕç, Клава сăмахĕсенче тĕрĕсси те пур пек туйăна пуçларĕ.

Фермăран килне таврăннă чухне Лена вулама кĕнеке илес тĕллевпе ялти библиотекăна кĕчĕ. Ун чухне юнашар пÿлĕмре репетици пыратчĕ. Сетнер рольне Мĕтри вылять иккен, Мальвина фальдшерицă вара Нарспи пулса тăнă. Çакна курсан Лена кĕнеке илмесĕрех каялла тухса вирхĕнчĕ. Унăн чĕри хăвăрт-хăвăрт тапрĕ, тăнлав çинчи юн тымарĕ тăлт та тăлт турĕ. Пит çăмартийĕ çурăлса тухасла хĕрелсе кайрĕ. Сетнер пулма сĕнчĕç те, килĕшмерĕм, терĕ хăй. Мĕншĕн суйнă-ха вăл? Клава каларăш, каччăн çĕнĕ савни тупăнман-ши? Кирек мĕн тесен те, суякан çынра шанчăк сахал. Кулянннăран Лена çĕрле те лайăххăн çывăраймарĕ. Ирпе Мĕтри ăна вăрман хĕррин-

че чылайччен кĕтсе тăчĕ. Анчах хĕре мар, квартал юпине çеç ыталама тиврĕ ăна. Лена фермăна урăх çулпа кайнă.

Ку касçхине Санька шофер та ыйхă вĕçнипе аптăрарĕ. Вăл никама та мар, пĕр хăйне кăна ятларĕ. Кирлĕ мар чухне çын пусĕ тăррине хăпарса кайма хатĕрскер, мĕншĕн хăюсăрланса кайнă-ха вăл? Верук икĕ кун таран ĕçе мĕн пирки пыманнине ыйтса пĕлме те чĕлхи çаврăнмарĕ пулать унăн. Сăлтавне пĕлсен, чун та лăпланатчĕ. Халĕ акă енчен енне çаврăн та çаврăн вырăн çинче. Ирпе ирех ĕçе кайсан, чи малтан вăл, Верук килмен-ши тесе ĕне витине кĕчĕ. Кунта тин çеç сунă ăшă сĕт шăрши сарăлнă. Клава сĕт витрине Лена еннелле тăсса тăнине шофер куç айĕн кăна пăхса иртрĕ. Санькăна асăрхасан, хĕрсем, сехĕрленсе ӳкнĕ пек пулса, иккĕшĕ ик еннелле хăвăрт пăрăнса кайрĕç. Юратнă хĕре курас ĕмĕтпе çунанскер, каччă çаплах малалла утрĕ. Верук ĕнисене каллех инкĕшĕ сунине курсан, вăл вăрт çаврăнчĕ те витерен каялла тухах кайрĕ.

— Пыр, Герман, ыйтса пĕл-ха, мĕн пулнă Верука?— терĕ вăл хăйĕн стажерне тархаслакан сасăпа.— Ну, вăрт-варт пул, пĕлес килет,— хушса хучĕ вăл, лешĕ вырăнтан тапранманнине кура.

Герман — хăйне евĕрлĕ каччă. Çутçанталăк ăна тараватлăн çӳллĕ те сарлака кĕлетке панă, сăмах хутаççине вара хыт кукар пек пушăлла тыттарнă. Чĕлхи çĕтнĕ Герман, теççĕ ăна фермăри хĕрсем. Чăнах та, çынпа сăмах ваклама вăл юратсах каймасть. Юлташĕсенчен те ютшăнарах парать. Хĕрсене пачах асăрхамасть тейĕн. Çинçе пилĕклĕ, çивĕч куçлă, йăпăр-япăр Клавăна тĕл пулсан кăна каччă сăнĕ çутăлнă пек пулать. Хĕре вăл кашни хутрах тимлĕ куçпа ытарайми пăхса ăсатать, анчах хăй пĕр сăмах та каламасть.

Герман хĕлле пĕр вăхăтра Санькăна шалтах тĕлĕнтерчĕ. Ара, хăйне кура мар-и: чĕнсе те чĕнмест, кирек мĕн кала ăна — сивĕ куçпа чалăшшăн пăхайса илет. Шăп та лăп руле пăхăнми пулнă машинă пек хăтланать. Ятласа та пăхрĕ шофер стажерне — усси пулмарĕ. Пĕррехинче Клава Санькана йĕлтĕрпе вăрмана кайса курма чĕнчĕ. Каччи килĕшмерĕ. «Германа чĕнсе пăхмастни, тен, пырĕ?» — канаш пачĕ вăл. Хăй Верукпа пĕрле район центрне концерта кайрĕ. Клавăна вара вăрманта Германпа пĕрле ярăнса çӳреме тиврĕ. Çавăн хыççăн тин

юлташӗ ҫине яланхилле кӑмӑллӑн пӑхакан пулчӗ Герман.

Халӗ вӑл куҫне хӗсрӗ хучӗ.

— Апла эппин. Ан-ла-на-тӑп. Пӗлӗпӗр эппин пикене мӗнле чӗмере пулнине,— тӑсрӗ вӑл кашни сӑмахне. Унтан васкамасӑр витенелле утрӗ.

Верук чирленӗ-мӗн. Япӑх хыпар Санькана пӑшӑрхантарни асӑрхансах каймарӗ. Анчах унӑн машинне тем хӑямат пулчӗ: е бензин юхакан трубкӑна темле ҫӳпӗ ҫакланнӑран мотора ӳпке чирӗ ерет, е машинӑ ҫерҫи ӗҫмелӗх кӳлленчӗк тӗлӗнчех чарӑнса ларать.

Ӗнер ун пек пулчӗ. Паян вара те машини, те шоферӗ тӗрӗс пынӑ ҫӗртенех ҫул ҫухатрӗ: силос тиеме каяс вырӑнне ялалла вирхӗнчӗ.

Хыркасси вӑрман ҫумӗнчи лапам вырӑнта пысӑк тӳр кӗтеслӗх евӗр курӑнса ларать. Икӗ вӑрӑм урам. Иккӗшӗ те ял варринче кӗтес туса тепӗр еннелле тӑсӑлса каяҫҫӗ. Кӗтес пӗр енчи урамсем ӗне ферми патнелле тухаҫҫӗ, тепӗр айккинче вӗсем уялла — ирӗк вырӑналла туртӑнаҫҫӗ. Урамсен тӳр кӗтеслӗхӗн шал енне икӗ хутлӑ клуб, вӑтам шкул, ял Совечӗ, колхоз правленийӗ тата фельдшер пункчӗ вырнаҫнӑ. Ял тӑршшӗпе кӑррипех чус е шифер витнӗ капӑр ҫуртсем лараҫҫӗ. Хӑма хапхасене сӑрласа илемлетнӗ, тӑррисене чӗнтӗрлесе эрешленӗ. Ялӑн кӑнтӑр енче — Хум шывӗ. Ӑна фермӑ тӗлӗнче пӗвеленӗ те, пӗве таппи Қайри кас патнех ҫитет. Хум хӗррине сад чӗртнӗ, паян унта Илле мучин звени хӑрӑк туратсене, тӑкӑннӑ ҫулҫӑсене пуҫтарать. Юнашарах халлӗхе улачӑла курӑнакан хӑмла плантацийӗпе ҫимӗҫ пахчи пур.

Грузовик Хум ҫинче кӗпер урлӑ кӗмсӗртеттерсе каҫрӗ, пӳртсем умӗнчи папка кӑларнӑ ватӑ йӑмрасем пӗрин хыҫҫӑн тепри пуҫ сулса тӑра-тӑра юлчӗҫ. Веруксен ҫурчӗ тӗлӗнче машинӑ тӑпах чарӑнчӗ.

— Мотор чӑхӑмлать, радиаторта шыв вӗре пуҫларӗ,— пӗлтерчӗ вӑл кузоврисене.

Қалинккене уҫсанах Санька картишӗнче хӗрӗн амӑшне асӑрхарӗ.

— Васса аппа, радиатора яма шыв тупӑнмӗ-ши?

— Пур-ҫке! Ак ӑсам та илсе тухам!— вашават кӑмӑлне кӑтартрӗ Васса аппа.

Шыв ӑсма Санька картишне хӑех кӗретчӗ пулӗ, лӑпах ҫав вӑхӑтра урам енчи кантӑк чӑрик! уҫӑлчӗ те, Верук пуҫӗ курӑнчӗ. Тепӗр самантран Санька пӳрт ум пах-

чине кĕрсе те тăчĕ. Вăл хĕвĕнчен чечек çыххи кăларчĕ. ăна хĕре тыттарчĕ. Çыхăра çурхи вăрманта пуринчен малтан шăтса тухнă кăвак çеçпĕлсем. Пĕр чечекĕ те шанман, вĕсене паян кăна татнă пулас. Хĕрпе каччă мĕн калаçни автомашинă çинчисене илтĕнмерĕ, анчах тунсăхланă чунсем пĕр-пĕрин çине мĕнешкел ăшшăн пăха-пăха илнине сĕм-суккăр кăна асăрхайман пулĕччĕ.

— Эй, çамрăксем! Салам пурсăра та! Вăрах чирлесе ачашланма шутламастăп, ыран фермăна пыратăпах!— пурте илтмелле каларĕ Верук. Унăн шурса кайнă пичĕ çинче йăлтăр кулă палăрчĕ, икĕ пит çăмарти çинче икĕ путăк пулса тăчĕ.

Санька каллех хĕре тем çинчен хĕрӳллĕн пăшăлтатса калама пуçларĕ. Хальхинче питĕ савăнăçлине калать пулас, хĕрĕн чакăр куçĕ йăл та йăл тăвать.

— Эй, Санька, ăçта-эсĕ? Акă, яр шыв...—чĕнчĕ Васса аппа.

Санька унăн умне йăпăртах тухса тăчĕ.

— Тавтапуç, Васса аппа. Қаçар чăрмантарнăшăн, халĕ шыв кирлĕ мар ĕнтĕ. Радиаторта шыв вĕреме чарăнчĕ.

Вăл кабинăна кĕрсе ларчĕ те, машинă хăвăрт тапранса кайрĕ.

— Вăт тĕлĕнтермĕш!—хытса тăрса юлчĕ Васса аппа. Хăйĕн чирлĕ хĕрĕ кантăк хупнине асăрхасан, хуллен-хулленех кулса ячĕ:

— Ак сана ме! Радиаторти шыв мар, хăйĕн чĕринчи юнĕ вĕре пуçланă, ахăр, унăн.

Тĕрĕсех чухласа илнĕ Васса аппа: каччă чĕри лăплансанах машинă моторĕ те чăхăмлами пулчĕ. Силоса та ăнăçлах турттарчĕç.

Вăрман шăршиллĕ çеçпĕлсене Верук чылайччен аллинчех тытса ларчĕ, унтан вĕсене çупăрласа илчĕ, кула-кула чуп турĕ те шыв янă кăкшăма вырнаçтарчĕ. Хĕр кăкăрĕнче çепĕçлĕхĕн ăшă туйăмĕ туллин тапса тăчĕ. Амăшĕ хистесен те, урăх выртма килĕшмерĕ вăл. Ана канлĕ те лайăх, алли-урине те вăй кĕнĕ пек. Вăл амăшне кил ăш-чикне пуçтарса тирпейлеме пулăшрĕ, пĕр-ик хутчен пусăран шыв та ăсса кĕчĕ. Васса аппа хĕрĕ çине сăнавлăн пăха-пăха илчĕ. Анчах Верук фермăна кайма шут тытсан, ăна хăтăрайса пăрахрĕ.

— Вĕрĕлме яраймăп-ха. Ларнă пул килте.

Тем тери тархасласан та, хĕрне пӳртрен кăларма ки-

лӗшмерӗ вӑл. Ҫапах Верук пӑртакран каллех амӑшӗ патне пычӗ.

— Шалт аптӑрарӑм ку хӗрпе! Апла та калатӑп, капла та калатӑп — ӳкӗте кӗмест. Кайсам-и, вӗрӗл тепӗр хут! — ҫилленсе кайрӗ хальхинче амӑшӗ. Хӗрӗн ирӗксӗрех, кӗнеке тытса, тӗпеле кайса ларма тиврӗ.

Хӗрӗ ашшӗне хывнине Васса аппа лайӑх пӗлет. «Кусма та хурарах сӑнлӑччӗ, унӑн та пит ҫӑмартийӗ пӑнт пулатчӗ»,— аса илет вӑл иртнӗ вӑрҫӑра вилнӗ упӑшкине. 1944 ҫулта, урине амантсан, Куҫма киле таврӑнса ҫур ҫул пурӑнчӗ. Ун чухне вӗсен аслӑ ывӑлӗ Валерий пиллӗкреччӗ ӗнтӗ. Сывалсан, упӑшки каллех фронта кайрӗ. «Кӗтсех тӑр, тӑшмана ҫӗнтерсенех киле таврӑнатӑп»,— шантарчӗ вӑл кайнӑ чухне. Юратнӑ арӑмне нихӑҫан та улталаман арҫын ку хутра хӑй сӑмахне тытмарӗ. Ӑна арӑмӗ те, вӑрҫӑ пӗтеспе йӗкӗреш ҫуралнӑ Мӗтрипе Верук та киле кӗтсе илеймерӗҫ. «Сидоров Куҫма Берлина штурмланӑ чухне паттӑрла вилнӗ»,— хуйхӑллӑ хыпар илсе килчӗ почтальон.

Тӗм тӗлӗнчи ҫӗр ҫырли хӗвел кураймасть, апла пулин те, вӑхӑт ҫитсен пӗрех пиҫсе ӗлкӗрет. Ҫавнашкал Васса аппа ачисем те ашшӗсӗрех ӳсрӗҫ, ҫапах куҫ тулли ҫитӗнчӗҫ. Тӳррипех каламалла, амӑшне хӑйӗн чӗпписене ҫунатлантарасси ҫӑмӑл пулмарӗ. Халӗ вара амӑшӗн чунӗ ачисемпе йӑпанать, вӗсемпе савӑнать. Валерий вӑн ялти шкулта вӗрентет, кинӗ бригадӑра ӗҫлет. Йӗкӗрешсем иккӗшӗ те фермӑри ӗҫе килӗштерчӗҫ.

Амӑшӗ тӗкӗр умӗнче юсанса тӑракан хӗрӗ патне пычӗ, кӑвак юн тымарӗсене витӗрех кӑтартакан аллине унӑн ҫамки ҫине хучӗ. Ӗнер кӑна Верук ҫамки вутла пӗҫеретчӗ, температурӑ каҫалапа уйрӑмах ӳссе кайнӑччӗ. Паян хӗрӗ хӑйне лайӑхах туять пулас, ҫамки те пӗҫермест. Ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа вӑл савӑк юрӑсем юрлать. Ҫакна кура, Васса аппан та кӑмӑлӗ ҫемҫелчӗ.

— Каях эппин, йӑлӑхтармӑш. Ӗнӳсене кур та хӑвӑрт каялла кил,— тинех ирӗк пачӗ амӑшӗ Верука. Хӑех ӑна тумланма пулӑшрӗ.

Верук фермӑна ҫитнӗ ҫӗре тул тӗттӗмленчӗ. Ӑна хирӗҫ витерен пӗр ҫын тухрӗ. Тухнӑ-тухманах тӑп чарӑнса, шикленӳллӗн ун-кун пӑхса илчӗ. Такам хӑй патнелле утнине тӗшмӗртсен, вӑл хӑпӑл-хапӑл айккинелле утса кайрӗ. Хӗрарӑм иккӗн. Хӑйӗн аллинче тутӑрпа ҫавӑрса ҫыхнӑ витре. Ку лайӑх мара Верук хӑвӑрт тавҫӑрса илчӗ.

— Эй, кам унта? Тахта каштах! — кăшкăрса ячĕ вăл хыттăн. Лешĕ лăпăстатса тарма пикенсен, Верук мĕн пур вăйпа ун хыççăн чупрĕ. Анчах чир ăна самаях хавшатнă-мĕн, хăвăрт чупма çук. Малти хĕрарăма та тулли витрепе чупма çăмăлах мар, ахăр. Вĕсем хушши чакнăçемĕн чакса пычĕ. Пур пĕрех хăваласа çитессе сиссе пулĕ, хайхискер витрене лап лартрĕ, ун çинчи тутăра сӳсе илчĕ те самантрах куçран çухалчĕ.

Тулли витрепе витене кĕрсен, Верук чи малтан Ленăна курчĕ.

— Акă... яр-ха бидона... Тахăшĕ кукăр алăллă пулса тăнă. Шел, камне палласа юлаймарăм...— хăшăлтатма чарăнаймасăр, пӳлĕне-пӳлĕне каларĕ вăл тантăшне.

Лена ун çине пĕр самант кăн-н пăхса тăчĕ. Унăн куçĕнче темĕнле лайăх мар хĕлхемсем мĕлт те мĕлт сикрĕç. «Сăмса айĕнчи курăнмасть, вăрман урли курăнать. Малтан хăйĕн тӳрĕ кăмăллă пуласчĕ»,— вĕлтлетрĕ шухăш пуçĕнче. Чĕлхинчен те йĕплĕ сăмахсемех вĕçерĕнчĕç:

— Тытман вăрă — вăрă мар. Сĕтне инкӳ бидонне кайса ярам, ун нумайрах пултăр. Эсир нумая хапсăнатăр вĕт...

Ку сăмахсем Верука тĕлĕнтерсех ячĕç. Мĕншĕн апла калать-ха вăл? Мĕтрипе иккĕшĕ хушшинчен хура кушак каçман пулĕ те? Çавăнта мар-ши сăлтавĕ? Мĕнле пулсан та, унăн чунĕ тăвăлса килчĕ.

Лена ун çине çав-çавах тăрăхлакан куçсемпе пăхрĕ. Тарăхнă Верук ним каламасăр вырăнтан тапрансан, лешĕ ун умне вăшăл-вашăл пычĕ тăчĕ.

— Пуçлăхсене калама ан шутла тата. Вăрри никамах та мар, хамăр çынах пулĕ-ха. Ас ту, тантăш тантăшпа пурăнать.

— Вăрлакан тантăш — маншăн тантăш мар.

— Çапли çапла та,— сассине хăвăрт улăштарчĕ Лена,— малтан камне пĕлер.

— Хуть апла тесен...

Уй куçлă, вăрман хăлхаллă, тенĕ ваттисем. Пĕлсех каланă. Клава сĕтпе йĕпеннĕ тутăрне пăрса тăнă вăхăтра хыçалтан ăна такамăн вăйлă алли яп! ярса тытрĕ.

— Кашкăртан тартăн та, упаран вĕçерĕнейместĕн!

Пуçне пăрса пăхсан, Клава куçĕсем чарăлсах кайрĕç: ун хыçĕнче стажер Герман тăра парать. Ăна паян Санькапа пĕрле улăм вĕтетмелли машинă моторне юсама тивнĕ. Ĕç пĕтерсен, Санька хĕрлĕ кĕтесе кĕрсе юлать,

килне таврӑнас Германӑн вӑрӑ тытмалла пулса тухать.

— Тархаслатӑп, Герман, ан кас ман пуҫа: никама та, никама та ан кала.

Хӗр ун ҫине кӗҫ-вӗҫ йӗрсе ярасла тилмӗрсе пӑхать. Хӑй шартлама сивӗри пек чӗтрет. Лешӗ чӗнменнипе Клава каллех тархаслама пуҫлать:

— Пӗлместӗн эсӗ, Герман, нимӗн те пӗлместӗн. Халиччен эпӗ йӗп те вӑрласа курман. Йӑнӑшрӑм. Анне пӗр сысна ҫури туянчӗ мар-и... Ӗне пӑруламан та, ҫурашкана ӗҫтерме сӗт ҫуккипе шалт аптӑрарӑмӑр. Кӑмӑла кӳршӗри Анна аппа пӑсрӗ. Ӗне ферминче ӗҫлесе сӗтсӗр ларнине ялта кам ӗненӗ сире, тесе хӗтӗртрӗ. Пӗрех шанмаҫҫӗ мана, ӑмӑртура мала тухаяс ҫук, илсе таврӑнам пӗррелӗхе, терӗм.

Каччӑ тимлӗн итленине кура, хӗр хӑйӗн чӗринче мӗн пуррине малалла калать:

— Верукӗ тата таҫтан хӑяматран сиксе тухрӗ. Витрене ҫав лутамас пуҫӗ ҫине тӑхӑнтарам та лартам тесе те шутланӑччӗ, сӗтне хӗрхентӗм. Хам сунӑ-ҫке-ха. Герман, каламӑн-и?

Хӗр Герман ҫине ҫаплах тархасланӑн пӑхать, вӗҫӗмсӗрех ахлата-ахлата илет, ахлатмассерен ҫӑварӗнчен вӗри сывлӑш капланса тухать. Хӑйӗн ҫӳҫӗ тутӑр айӗнчен ҫавра пичӗ ҫине пайӑркан-пайӑркан усӑнса аннӑ. Хӑлӑхсӑр пайӑркасене хӑйсен вырӑнне тавӑрас шутпа Герман ал тупанӗпе хӗр питӗнчен сӗртӗнчӗ кӑна, лешӗ сасартӑк пуҫӗпе каччӑн сарлака кӑкӑрӗ ҫумне тӗршӗнчӗ, ӗсӗклесе йӗрсе ячӗ.

— Каламӑн-и, Герман?

Хӑй ҫаплах нӑшиклетсе ӗсӗклерӗ. Амӑшӗн кӗпи аркинчен ҫакӑннӑ пӗчӗкҫеҫҫӗ хӗрача тейӗн.

— Каламӑп эппин, Клава, каламӑп. Пӗр сӑмах та шарламӑп,— тинех ҫӑвар уҫрӗ Герман.

— Ах, Герман... Мӗн тери, мӗн тери юрататӑп эпӗ сана! Мӗнешкел лайӑх каччӑ эсӗ!

— Каламӑп, Клава, мӗншӗн тесен эпӗ те сана юрататӑп. Анчах эсӗ... эсӗ хӑв каласа парӑн.

Ҫак сӑмахсене илтсен, хӗр сӑнӗ шурса кайнине Герман каҫхи тӗттӗмре курмарӗ. Клава унран вӗҫерӗнсе кайма пӑхсан, каччӑ ӑна тата хытӑрах ҫатӑрласа тытрӗ.

— Вӑт-тӑк хӗр... Вӑрлама хӑтлантӑн пулсан, йӑнӑшна йышӑнма та пултар. Унсӑрӑн эсӗ хӗр мар, ленчешке ҫеҫ. Ленчешкене кам юраттӑр-ха?

Хĕр ĕсĕклеме чарăнчĕ. Ăна чĕмсĕр Герман çавнашкал йăпатса калаçма пĕлни нимрен те ытла тĕлĕнтерчĕ. «Ман хута кĕресшĕн мар, çапах лайăх каччă вăл»,— шухăшларĕ Клава. Унăн кăкăрне лăплану кӳрекен темĕнле ăшă туйăм тула пуçларĕ. Герман ăна аллинчен тытрĕ те, вĕсем иккĕшĕ пĕрле электричествă çутипе хула пек йăлтăраса ларакан ял еннелле кайрĕç.

Темиçе минутран çав çулпах пĕр-пĕрне тунсăхланă Санькапа Верук та клубалла утрĕç. Унта вĕсем «Кĕçĕн ывăл урамĕ» кинофильма курма кĕчĕç. Ытти чухне ялан савăк хĕр паян темшĕн-çке салхуллă курăнать, хутран-ситрен ассăн сывласа илет. «Сывалса çитейменрен пулĕ-ха»,— шухăшларĕ Санька.

Анчах чăн сăлтавне вăл пĕлеймерĕ çав. Хĕр чĕрине Лена сăмахĕсем ыраттараççĕ. Мĕншĕн шанчăксăра хурать-ха Лена хăйпе пĕрле ĕçлекен тантăшне? Ун умĕнче Верук чĕрне хури тăрăшшĕ те айăпа кĕмен-çке. Верук кино курма пăрахса пуçне лăштах усать.

— Эпир кино курма килнĕччĕ те,— хуллен асăрхаттарать каччă.

«Чăнах та, мĕн çав териех шухăшлатăп-ха эпĕ? Ыран ĕçе тухатăп, савнă каччă юнашар ларать. Мĕн кирлĕ тата мана?» — килĕшет хĕр хăй ăшĕнче Санькапа.

Кĕçех каччин хăйĕн те шухăшĕсем киноран аякка кайса ӳкеççĕ. Унăн куçĕ умне Ленăпа Клавăн сехĕрленсе ӳкнĕ сăнĕсем килсе тухаççĕ. Ара, мĕне пĕлтерчĕ вăл витере курнă камит? Нивушлĕ вĕсем витререн витрене сĕт ярса хăтланаççĕ? Лена хушаматне Кăтарту хăми çинче пĕрремĕш йĕркере çырма пуçлани çавăнпа çыхăнман-ши? Апăрша хĕрĕсем ултав çулĕ çине тăман-ши? Аплах пулсан, Верук ячĕ иккĕмĕш вырăна куçни унăн тантăшĕ ытларах тăрăшнинчен мар, пачах урăххинчен килет. Хăй çумĕнче ларакан хĕр çине Санька хĕрхеннĕн пăхать. Каччă пуçĕнче мĕнле шухăшсем пулнине Верук пĕлмест. Ун куçĕсем хăй çине ӳкнине вăл юратса пăхни вырăнне йышăнать, çавăнпа хĕрелсе каять.

— Тăванăм, ман çинче нимех те çук, экран çине пăхасчĕ! — сĕнет вăл ăшшăн Санькана.

Лешĕ хирĕç пĕр сăмах та каламасть. Анчах хĕрĕн çепĕç сăмахĕсем вăл-ку шухăшсене йăлтах сирсе яраççĕ. «Пустуй шухăшлатăп-иç. Сывалĕ те каллех мала тухĕ Верук. Маттур хĕр, епле пулма пĕлнĕ!» — вĕçлет вăл шухăшне.

Санькапа Верук иккĕшĕ те киноран савăк сăнсемпе тухрĕç.

Анчах тепĕр кунне хĕр кăмăлĕ каллех хуçăлмалла пулчĕ. Инкĕшĕ каланă тăрăх, фермăра хăлхаран хăлхана япăх сăмах çӳрет. Мĕтри хăйĕн тăванĕ сунă сĕте ӳстерсе çырать имĕш. Чунтан тарăхса кайрĕ Верук, анчах ку ыйтупа никампа калаçма аптăрарĕ. Лена теме пула тутине тăсса çӳрет, сивĕ пăрпа пĕрех.

— Пирĕн Лена малти вырăна тухрĕ те пуçне каçăртрĕ хучĕ,— текелерĕç çав кунсенче фермăра ĕçлекенсем сăмах шĕкĕлченĕ хушăра.

Чăнах та, юлашки кунсенче Лена йăлтах улшăнса кайрĕ. Тантăшĕсенчен ютшăнать, вĕсемпе калаçмасть. Мĕтрипе тĕл пулма пăрахрĕ. Вăл çывхарсан, хĕр кĕрхи кун пек сулхăнланать те пăрăнать каять. Час-часах пĕччен ларса, вăл тем хăйĕнне шухăшлать.

— Эх, Мĕтри, Мĕтри! — сывлать вăрăммăн Лена.

Пĕрле ĕçлекен хĕр евитлесе каличчен вăл Мĕтри пирки те, Верук çинчен те нихăçан япăх шутламан. Аçта унта япăх шутлама! Уншăн пулсан, Мĕтри пек лайăх каччă урăх çук та. Пиччĕшне юратнăранах Лена Верукпа та çывăххăн туслашнă. Верук калама çук ĕçчен хĕр пулнине вăл питĕ лайăх пĕлет. Фермă ĕнисем мĕн тери вараланчăк çӳренине халичченех ас тăвать-ха. Пĕри-пĕри çумĕнче çур гектара çитмелĕх удобрени çакăнса çӳретчĕ. Кайри пĕççисем çине кукурузă аксан, вăл та чиперех шăтса ӳсмеллеччĕ. Иртнĕ çулла кĕтӳ Хум хĕрринче тапăрта тăнă чухне Верук хăйне çирĕплетсе панă ĕнесене пурне те супăньпе тата щеткăпа çуса тасатрĕ. Тап-таса ĕнесем çине пăхма та кăмăллă. Çакна курсан, Ленăн та хăйĕн ĕнисене тасатас килсе кайрĕ. Верук тантăшĕн шухăшне каламасăрах пĕлчĕ, ахăр.

— Ме сана супăнь, ме щеткă. Вĕсемпе мĕн тумаллине хăв пĕл,— тăсса пачĕ вăл Ленăна.

Тепĕр сехетрен Лена та ĕнисене çап-çутă туса ячĕ. Пуçланчĕ вара çавăнтанпа ĕнесен тасалăхĕшĕн кĕрешӳ. Ĕнесене тăтăшах тасатма кирли çинчен канашлусенче сӳтсе яврĕç, выльăх-чĕрлĕх пăхакансен кунĕнче калаçрĕç. Верук пуçарăвĕ çинчен хаçатра çырса кăларчĕç.

Этем кашни кунах çăвăнать, эрне иртмессерен мунча кĕрет. Ирпе çăвăнмасан — ыйхă уçăлмасть, мунча вăхăтра кĕмесен — çан-çурăм сăрăлтатма пуçлать. Ĕне те чĕрĕ чунах, калаçма кăна чĕлхи çук. Вăхăтра тасатса тăма-

сан, вăл та канăçлăха çухатать, çавна пула сĕтне те сахалтарах парать.

Юр кайма тапрансан, Верук хăй пăхакан ĕнесене хирти улăм ури тĕпĕсем патне хăваласа кайрĕ.

— Айта пĕрле. Утчăр кăштах чиперккесем. Утнă май хăйсен çиллисене хăйсемех массаж туччăр. Унта улăм та чылай сапаланса выртать,— сĕнчĕ тантăшне Верук тепĕр кун.

Вĕсем вара темиçе кун хушши ĕнесене улăм урисен вырăнĕсем патне пĕрле хăвала-хăвала кайрĕç.

«Лайăх çыннăн сăхман аркинчен уртăн, усал çыннăн ура йĕрĕ çине те ан пус»,— илтет час-часах Лена хăйĕн амăшĕнчен. Акă, халь шыра та туп ĕнтĕ: кам лайăх, кам усал?

— Эх, Мĕтри, Мĕтри! Пĕлетĕн-ши эсĕ ман ăш еплерех çуннине?..

Ленăна иккĕленӳ вĕчĕрхентерет, ăна салхулăх тыткăна илет. Çапах таçта, чĕри тĕпĕнче, хăй тĕллĕнех чăрсăр шухăш пурăнать: çук, Мĕтри ун пек мар, вăл нихăçан та япăх тума пултараймасть. Хĕр пуçĕнче çак шухăш Мĕтри район центрĕнче комсомол организаци секретарĕсен семинарĕнче пулнă кунсенче тымар ярсах çирĕпленчĕ. Ун чухне кам мĕн чухлĕ сĕт сунине учетчик вырăнне фермă заведующийĕ хăй шута илсе пычĕ. «Мĕтрипе Верук суйи тинех тухать ĕнтĕ!» — каллех пырса пăшăлтатнăччĕ ун хăлхинчен Клава. Кăтарту хăми çине мĕнле цифрăсем çырăнасса Лена пăшăрханса кĕтрĕ. Анчах пăшăрханма кирлех те пулман иккен. Верук хăйĕн ĕнисенчен сĕт каярах мар, ытларах суса иле пуçларĕ. Вăт сана суйи тухать!..

Семинартан таврăнсан, тепĕр кунхине Мĕтри общежити çурчĕ çумĕпе иртсе пыратчĕ. Пăхам-ха пĕрех хут ун çине тесе, тунсăхланă Лена общежитирен йăпăр-япăр сиксе тухрĕ, ерипен-ерипенех каччă хыçĕнчен кайрĕ.

Мĕтри васкамасăр вăрман хĕррипе утрĕ. Çӳллĕ йывăçсем çине пăхкаласа, вĕсен илемĕпе киленчĕ. Часах шухăшĕнче ун куçĕ умне катмар йывăççем пекех кĕрнек шăм-шаклă хĕр сăнарĕ ытарлăн тухса тăчĕ. Мĕтришĕн гаврара мĕн пурри пĕтĕмпех Лена ячĕпе çыхăннă: квартал номерне кăтартакан çав пуклак юпа тĕлĕнче вăл ирсерен ăна кĕтсе илетчĕ, ак ку çулпа вĕсем юнашар утатчĕç. Вăрманти йывăççем унăн ятне пăшăлтатса калаççĕ, вĕçен кайăксем ăна мухтаса юрлаççĕ. Ытармалла

мар лайӑх хӗр вӑл. Сасси унӑн чуна тивекен юрӑ пек ырӑ, кӑмӑлӗ симӗс калчана шӑваракан ӑшӑ ҫумӑр пек лайӑх.

Ҫапла хӗр ҫинчен шухӑшласа, Мӗтри вӗтлӗхелле пӑрӑнса кӗчӗ, унта шӑпӑр хуҫма тытӑнчӗ.

Так-так! тутарать хурӑн ҫинче пӗр илемлӗ вӗҫен кайӑк. «Ула такка-и ку?» — пуҫне ҫӗклерӗ Мӗтри. Пӑхма ула такка пекех, анчах мӗншӗн хурӑн ҫинче вӑл? Хыр вуллине таккаканччӗ-ҫке. Ҫапах та ку ула такках. Питӗ кирлӗ ӗҫ тӑвать пулас, Мӗтри енне ҫаврӑнса пӑхма та ерҫеймест. Так-так тутарать те тем тутанса сӑйланать. Вӑт яка пыр! Хурӑн шыв ӗҫет иккен. Пӗлнӗ темле майпа ку шӗвек пылаккине. Сӑмсипе таккаса хурӑн хуппине шӑтарать те тумламӑн-тумламӑн сӑрхӑнса тухакан тутлӑ сӗткене ӗмет. Курманччӗ унашкаллине Мӗтри, ҫавӑнпа тӗлӗнмеллипех тӗлӗнчӗ.

«Ҫапла ҫав, ҫӗнни, халиччен пулманни чылай чухне темлерех пек туйӑнать. Иккӗлентерет те, шухӑшлаттарать те. Юравлӑ-ши вӑл? Ниҫталла мар килсе тухмӗ-и? Ав, председатель те манӑн сӗнӳпе килӗшмерӗ»,— шухӑшлать Мӗтри.

Унӑн шучӗпе халӗ фермӑра учетчик тытма кирлӗ мар, мӗн чухлӗ сӗт суса илнине дневник ҫине дояркӑсем хӑйсемех ҫырса хума пултараҫҫӗ. Мӗншӗн шанас мар вӗсене? Коммунизмла ӗҫ коллективӗ ятне илессишӗн кӗрешеҫҫӗ вӗт. Ытти колхозсенче те ҫавӑн пек тусан, миҫе ҫын урӑх ӗҫе куҫма пултарӗччӗ! Паянах председательпе тепре каласса пӑхас та скотнике ӗҫлеме куҫас.

Ҫавӑн пек шухӑш патне пырса тухать Мӗтри. Алли ҫаплах ҫапӑ ҫине ҫапӑ хурать.

Каччӑ епле ӗҫленине Лена аякран сӑнаса тӑрать. Шӑпӑрлӑх ҫапӑ хушӑнсах пынине вӑл та курать. Анчах ҫыхман ҫапӑ шӑпӑр мар-ха. Ана тирпейлӗн майласа ҫыхмалла, кайран тикӗслесе касас пулать. Ах, хӑвӑртрах ҫыхтӑрччӗ вӑл шӑпӑрне. Мӗн тума-ши? Унпа иккӗленӳллӗ шухӑшсене пуҫӗнчен шӑлса кӑларӗччӗ те каччӑ умне яланхи пекех уҫӑ кӑмӑлпа пырса тӑрӗччӗ.

«Ҫук, варана хӑварсан, ӗҫ вараланма пултарать, Халех правление каяс»,— шухӑшлать каччӑ ҫав вӑхӑтра. Хайхи ӗҫ пӑрахсах ялалла ҫул тытать.

Лена ун хыҫӗнчен пӗр вӑхӑт тӗлӗнсе пӑхса тӑрать. Унтан каччӑ ӗҫленӗ тӗле чупса пырать. Акӑ, шӑпӑрлӑх хуҫнӑ ҫапӑ та ун умӗнчех.

— Анчах çыхман çапă шăпăр мар çав,— тет Лена сасăпах. Хĕр пуçне çав минутрах тепĕр шухăш пырса кĕрет: тытман вăрă та вăрă мар-çке! Э, çук, тытнă-и ăна, тытман-и, вăрă вăрах ĕнтĕ. Çапах та вăрри кам-ха? Лена хăй-и? Çук, çук. Вăл ултав çулĕ çине тăмарĕ, тем тери хистесен те, Клавăран сĕт пĕрех илмерĕ. Çавăнтах хĕре тепĕр каварлă шухăш йĕплеме тытăнать: Клава вăрă пулса тăнăшăн никам та мар, эпĕ, пĕр эпĕ кăна айăплă. Куртăм-çке вăл витерен сĕт йăтса тухнине! Куртăм, çапах та чармарăм. Вăт сана çыхман шăпăр...

Чăх ферми енчен автансем авăтни илтĕнет. «Кукареку! Ку-ка-ре-кук!» — тĕрлĕ саспа çине-çинех авăтаççĕ хуйха-суйха пĕлменскерсем. Тул çутăлать-и, каç пулать-и — автансемшĕн пĕрех, çухăрса пултăр. «Çук, çынна вĕсем пек айван пулма юрамасть»,— пырса кĕрет Лена пуçне ыраттармалла пăталакан шухăш. Хĕр икĕ аллипе пуçне ярса тытать те вăрмантан такам хăвалана пекех чупса тухать. Общежитинче репродуктортан «Пĕчĕк акăшсен ташши» илтĕнет. Çак хӳхĕм кĕвĕ хĕре питĕ килĕшекенччĕ, халĕ вăл унăн хăлхине пачах кĕмест. Сĕтел хушшине тĕршĕнсе ларнăскер, алăк уçăлса хупăнсан та, пуçне çĕклесе пăхмарĕ.

— Лена, мĕн пулнă сана? Чирлемерĕн-и? — таçтан аякран пек илтрĕ вăл Верук сассине.

Лена пуçне енчен енне пăрса илчĕ. Çук-çке, тени пулчĕ ку. Верук тантăшĕпе юнашар пырса ларчĕ. Пичĕ хăйĕн çаплах шурччас, чир хыççăн сăн кĕрсе çитеймен ăна. Хăй апла пулин те савăк, куçĕсем йăл-йăл тăваççĕ. Пĕчĕк аллине вăл Лена хулĕ çине хучĕ.

— Ленук,— чĕнчĕ вăл яланхиллех,— тин кăна зоотехникпа пуплерĕмĕр. Мĕн тери ăслă вăл.

— Матвей Николаевич-и? Нумай пĕлекен çын,— килĕшрĕ Лена та.

— Вăт эпĕ Красульрен кунне 10 литр, Лĕпĕшрен 6 литр сĕт суса илетĕп. Концентратне иккĕшне те пĕрешкел виçепе паратăп. Ытти апачĕ те пĕр пек лекет. Çакăн пирки мĕн шутлатăн, Ленук?

Кунта тĕлĕнмелли çук. Пĕр аларах пилĕк пӳрне пилĕк тĕрлĕ. Ĕнесем те çавах. Ленăн Çăлтăрĕ хăех икĕ Лĕпĕш тĕшне тăрать.

— Çапли çаплах-ха вăл...— ăнкарса илеймерĕ Лена тантăшĕн шухăшне.

— Матвей Николаевич ĕнесене сĕт мĕн чухлĕ панине

тата вёсен пысӑкӑшне кура тӑрантармалла, тет. Малашне кашнин валли ҫирӗп нормӑ тума шутлать.

— Интереслӗ шухӑш,— пуҫ сӗлтрӗ Лена.

Вӑл тантӑшӗ ҫине куҫран тӗллесе пӑхать. Верук та куҫне тартмасть, унӑн ҫӑл шывӗ пек таса куҫӗ ӑшӑ та ырӑ хӗлхемсем сапать. «Ленук, эпир санпа яланах килӗштерсе ӗҫленӗ вӗт. Малашне те ҫывӑх туссем пулар-и?» — ӳкӗтлет вӑл. «Сана шанмасса май ҫук, тантӑшӑм. Ятла мана, пӑскӑрт мана: эпӗ элек хыҫҫӑн кайрӑм. Анчах эсӗ ҫав-ҫавах маттур иккен»,— ответлет Лена куҫӗ.

Тантӑшсем сасӑпа пӗр сӑмах та каламарӗҫ, куҫӗсемпе ҫеҫ калаҫса илчӗҫ. Вӗсене ҫакӑ кӑна кирлӗ пулнӑ: иккӗшне те тӑруках лайӑх пек, ҫӑмӑл пек пулса кайрӗ. Тантӑшӗпе чунтан шанса калаҫас килчӗ Ленӑн. Ана вӑл сӗт вӑрлаканни Клава пулни ҫинчен те, ҫыхман шӑпӑр ҫинчен те тӗпӗ-йӗрӗпе каласа пачӗ. Унтан, тем аса илсе, ялт сиксе тӑчӗ:

— Верук, айта манпа пӗрле, пӗр пӗчӗк ӗҫ тӑватпӑр!

— Айта!

Тантӑшсем сӳс ҫурӑмӗнчен темиҫе сӗвем уйӑрса илчӗҫ те, аларан алӑ тытса, вӑрманалла чупрӗҫ.

— Пӗлетӗн-и кам хуҫнӑ ку шӑпӑрлӑха? — ыйтрӗ чеен Лена.— Эсӗ пӗлес те ҫук, чухлас та ҫук.

— Кам-ши?

— Пӗр лайӑх каччӑ. Ячӗ те хӳхӗм унӑн: Мӗт-ри-и!

— Мӗтри тетӗн?

— Ҫук, вӑл мар, эпӗ савакан пӗр каччӑ...

Унччен те пулмарӗ, Лена тантӑшне питрен чап! чуп турӗ. Хӗрсем иккӗшӗ те савӑнӑҫлӑн кулса ячӗҫ. Вӗсен кулли вӑрманта илемлӗн янӑраса кайрӗ.

— Ҫыхар эппин, Ленук. Хӑвах каларӑн: ҫыхман ҫапӑ шӑпӑр мар,— ӗҫ тумаллине аса илтерчӗ Верук. Унтан шухӑша кайнӑ пек пулчӗ.— Эпӗ, тӑванӑм, ҫапла шутлатӑп: ҫыхман шӑпӑра ҫыхмаллах, пӗтермен ӗҫе вӗҫне ҫитермелле. Клавӑна пирӗн тӑрӑ шыв ҫине кӑларасах пулать.

— Верук, темшӗн манӑн чӗре пӗртте лӑпкӑ мар. Тем ҫитмест — хам та пӗлместӗп.

— Эпӗ пӗлетӗп хама мӗн ҫитменнине: ҫунатсем ҫук ман. Вӑт вӗсем пулсан, ҫӳле-ҫӳле зӗҫсе хӑпарӑттӑм, вӑрман ҫийӗн ярӑнайса ирттӗттӗм...

— Санькана çĕр çине пĕчченех тăратса хăварăттăн-и?

— Çу-ук, эсĕ мана ăнланаймарăн, Ленук. Манăн çĕр çинчех çӳлте пуласчĕ. Паттăр ĕçсем тăвасчĕ. Чап та ан янăратăр, хисеп те кирлĕ мар, хамăн ĕçпе хамăн савăнасчĕ. Вăт фермăри кашни ĕнене сĕт кӳлли тăвасчĕ. Тăрăшсан, ӳркенмесен, пирĕн ĕнесенчен витри-витрипе сĕт сума пулать.

— Лайăх ĕмĕт.

— Лайăххи лайăх та, ĕмĕтпех çĕнĕ çурт лартма çук çав. Қам мĕн çӳллĕшне вĕçесси, пурнăçра мĕн таран усăллă пуласси чи малтан çынран хăйĕнчен килет.

Тем те, тем те калаçрĕç икĕ тантăш. Сахал-и икĕ хĕрĕн калаçмалли! Çитменнине тата, вĕсем пĕрле ӳснĕ, пĕрле вĕреннĕ, комсомола та пĕрлех кĕнĕ. Вăтам шкул пĕтерсен, иккĕш пĕрле канашласа фермăна ĕçлеме килнĕ. Шăкăл-шăкăл калаçнă май ĕç те ăнса пычĕ. Каччă хуçнă çапăран ултă шăпăр тухрĕ.

— Виççĕшне эсĕ тыт, тепĕр виççĕшне эпĕ илем!

— Килĕшместĕп. Апла мăшăрсăр тухать. Юратмастăп хăраха. Ултташĕпех санăн пултăр.

Верук кула-кулах шăпăрсене пурне те тантăшне тыттарчĕ.

— Вăт тупнă! Пулас упăшкин шăпăрĕсене чутах мана йăттармарĕ. Çын аллипе кăвар туртасшăн мар-и...— кулчĕ Верук фермăналла утнă май.

— Ах, Верук! Туман тихан пилĕкне хуçатăн вĕт.

— Ас ту, ан хуçăлтăр... Пĕрин çапла хуçăлнă кайнă, тет.

— Хуçăлнă, тет, çав. Ун хуçăкне фельдшерицă тупнă, тет.

— Тет, тет... Юмахра пĕри йĕпрен пĕрене тăвать, тет,— сасартăк сассине улăштарчĕ Верук.— Эсĕ «тетсене» ан итле, хăйĕнчен ыйтса пĕл. Вăн килет вăл,—тăсса кăтартрĕ хĕр пӳрнипе фермă патне çывăхаракан виçĕ арçын еннелле.

Тантăшĕ ун-кун пăхкаланă хушăра Верук общежитие чупса та кĕчĕ. Лена хул айĕнчи шăпăрсемпе хапха умне пĕччен тăрса юлчĕ. Ун патне колхоз председателĕ Ятманов, зоотехник Николаев тата Мĕтри çитсе тăчĕç.

— Салам ĕçчен хĕрачана!—тӳрех алă тăсса пачĕ ăна председатель.— Сан валли хӳхĕм каччă тупса килтĕмĕр.

— Салам хăвăра та. Ялан шӳтлеспе эсир, Петр Петрович,— именсе кайрĕ Лена.

Каччă çинчен асăннăран мар, председательрен хăйĕнчен именчĕ Лена. Ятманов колхоза тăхăр çул каялла райĕçтăвкомра ĕçленĕ çĕртен вунă пин шучĕпе килчĕ, йышлă çемйипе Ленăсемпе юнашар пĕр пĕчĕк пушă çурта вырнаçрĕ те халичченех унта пурăнать. Унăн çемйи валли çĕнĕ çурт лартса пама колхозниксем пĕрлехи пухура та йышăннă, анчах председатель çакна тума çаплах ерçеймест: унăн е çĕнĕ витесем тутармалла, е клуба çĕнетмелле, е тата урăх ĕçсем пур. Виçĕм çул Хыркассипе Анаткас пĕр колхоза пĕрлешрĕç, пĕрлештернĕ пысăк хуçалăхра председатель ĕçĕ пушшех кăткăсланчĕ.

Унăн, Вăрнар таврашĕнче çуралса ӳснĕ чăвашăн, хăш-пĕр сăмахсем кăшт урăхларах тухаççĕ. «Хусамăр», «ийя», «акай» тени малтанхи вăхăтра хыркассисене темлерех пек туйăнатчĕ. Халĕ те хăнăхнăран, те Петр Петровича хăйне пысăк хисепе хунăран, вĕсене асăрхамаççĕ.

Ятманов çын çине тинкерсе пăхать. Пăхать çеç те мар, витĕр курать. Лена именсе кайнине те асăрхарĕ вăл, анчах сăлтавне хăйне майлă ăнланчĕ:

— Юрĕ-çке, юрĕ. Мĕн вăтанмалли унта! Каччи те кирлĕ кунта кирлех пулĕ. Сирĕн фермăна кĕрсе курасшăн эпир, юрать пулĕ те? Санăн çынсене каласчĕ: хĕрлĕ кĕтесе пухăнччăр, канашлу ирттерĕпĕр.

— Калап, Петр Петрович. Манăн сире пĕлтермелли пурччĕ те... Фермăран сĕт йăтса каясшăн хăтланаканни... Клава пулнă вăл.

Лена ку сăмахсене темле ĕлкĕреймессĕн, хыпаланса каларĕ, каларĕ те — чĕри лăштах пулса кайрĕ.

Председатель ун çине сăнаса пăхса илсен:

— Хыпарланăшăн пысăк тав та, пĕлетпĕр ун çинчен. Хăй правленине пырса ӳкĕнчĕ. Ак канашлура калаçăпăр...— терĕ.

Председательпе зоотехник хапхаран фермă картишне кĕчĕç. Мĕтри те вĕсем хыççăн утма тăчĕ.

— Тăхта, Сетнер, малтан пурлăхна пуçтар. Тыт, санăн вĕсем,— тăсса пачĕ ăна Лена аллинчи шăпăрсене.

— Манăн-и? Мĕншĕн манăн?

— Мĕншĕн тесен санăн.

— Э-э...— пӳрнине тăнлавĕ çине хучĕ каччă.— Тавтапуç — çыхрăн пулсан. Скотниксене пар, кирлĕ пулĕç.

Утма пуçланă каччă каллех чарăнчĕ, тем калас пек

каялла çаврăнса пăхрĕ. Унăн сăнĕ тăруках çуталса кайрĕ, анчах хăй ним те шарламарĕ, кулса ячĕ те çынсем хыççăн çăмăллăн утса кайрĕ.

Председатель чи малтан витесем тăрăх çӳрерĕ.

Председатель хĕрлĕ кĕтесе пынă тĕле унта çынсем туллиех пухăннă. Верукпа Лена кĕтнĕ пекех, канашлура зоотехник ĕнесене уйрăм нормăпа тăрантарасси çинчен каларĕ. Ку меслете хирĕçлекен пулмарĕ. Коллектив малашне ĕнесене çĕнĕлле тăрантарма йышăнчĕ. Унтан председатель Мĕтрие сăмах пачĕ.

Мĕтри ура çине тăчĕ, Ятманов манерлех çӳçне васкамасăр ал лаппипе шăлса якатрĕ. Çав вăхăтра Лена кусĕсем каччă çине тирĕнчĕç. Темшĕн-çке унăн Мĕтрие ăслă, ăслă сăмахсем калаттарас килчĕ. Анчах хĕр унран мĕн кĕтнине каччă шута илмерĕ, вăл темиçе сăмахпа хăйне скотнике куçарма кăна ыйтрĕ.

Хĕрлĕ кĕтесре пĕр вăхăт шăпах пулчĕ. Унтан курте Клава сассине илтрĕç:

— Учетчик кам пулать вара?

— Эй-яй-яй! Епле пурăнăпăр учетчиксăр? — пăшăрхананçи пулчĕ кормокухньăра ĕçлекен Кĕркуç. Вăл тем шутпа çамрăклах хитре мăйăх ӳстерсе янă.

— Эсĕ пуçна ытла çӳллĕ ан каçăрт, мăйăхна сиенлĕн тата! — çиллессĕн тĕксе илчĕ ăна Герман.

Председатель, аллине çĕклесе, çынсене шăпланма сĕнчĕ.

— Ку ыйтăва хусамăрăн татса пама тивет,— терĕ вăл.— Мĕтри шучĕпе, халĕ фермăра учетчик кирлĕ мар. Сĕте ĕне сăвакансем хăйсемех шута илсе пыма пултараççĕ. Хусамăр сӳтсе явăр. Верук хăй шухăшне каласшăн, ăна итлесе пăхар.

Верук çапла пуçларĕ:

— Учетсăр социализм тума çук, тенĕ Ленин. Ман шутпа, коммунизм та учетсăр пулмасть.

Клава хăйпе юнашар ларакан Германа аякран тĕксе илчĕ. «Ай-ай хитре юрлать! Пӳрне тулалла мар, шалаллах хуçланать çав!» — тесшĕнччĕ вăл. Герман сиввĕн пăхнине курсан, шăлне çыртсах ларчĕ.

Пиччĕшĕн сĕнĕвне йăмăкĕ хирĕç тăрасса кĕтменччĕ çынсем. Çавăнпа унта та кунта пăшăлтатни илтĕнчĕ. Верук, çакна асăрхаманçи пулса, сăмахне малалла тăсрĕ:

— Эпĕ çакна хамăрăн фермăри ĕçсене шута илсе

калатăп. Пичче сĕнĕвĕпе пĕр енчен килĕшетĕп эпĕ: тĕрĕс, ăна урăх ĕçе куçармаллах. Çитет мана тăванĕ сунă сĕте ӳстерсе çырать тенине илтме! Манăн та чун пур, манăн та чĕре ыратать. Пичче вырăнне çĕнĕ учетчик кирлĕ. Кушак çук çĕрте шăшисем туй тăваççĕ. Пирĕн те çаплах пулма пултарать. Хăшĕ-пĕри халĕ те фермăран килне сĕт йăтма хăтланать. Эсир пур: учет кирлĕ мар... Вăт тĕлĕнмелле!

Верук сăмахĕсене илтсен, пĕрисен куç харшисем тӳрех çӳлелле тапса сикрĕç, теприсем хулĕсене кăлт сиктерчĕç. Хĕрлĕ кĕтес хуйхатнă вĕлле пек сĕрлесе кайрĕ.

— Кам вăрлать?

— Мĕншĕн ятран каламастăн?

— Пустуя ан калаç!—илтĕнчĕç пур енчен те сасăсем.

Хăй вырăнне вырнаçса ларнă Верук тепĕр хут çĕкленчĕ. Çав самантрах Клава та сиксе тăчĕ:

— Тăхта, Верук. Эсĕ мĕн каламаллине каларăн, халь эпĕ калам.

Клава сывлăш çавăрса янă май Герман çине пăхса илчĕ. Лешĕ хĕре ырланăн хуллен пуçне сĕлтрĕ. Хăйĕн куçĕсем кăмăллăн çиçеççĕ. Хĕрĕн те куçĕсем кулма пуçларĕç, кăвак тутăр çыхнă пуçне çӳлерех çĕклерĕ. Верук каланипе вăл пачах килĕшмест иккен. Чăн ĕнтĕ, учет коммунизм тунă чухне те кирлĕ. Анчах фермăра сĕте учетчиксăрах тĕрĕс шута илсе пыма пулать. Çакна тума ĕне сăвакансене хăйсене хушмалла. Вĕсем шанчăклă çынсем, пурте шкулта вĕреннĕ.

— Хам пирки каламастăп эпĕ,— йăвашлатрĕ хĕр сассине.— Верук асăннă вăрă — эпĕ вăл. Ут та такăнать, çын та йăнăшать. Ут такăнать те малалла утать, çын такăнать — унран пĕтĕм ял кулать. Такăнтăм эпĕ, сирĕн умăрта хама хам шанчăксăра кăлартăм.—Хĕр пуçĕ аяларах та аяларах усăнчĕ. Сĕтел çине куçĕнчен çутă тумламсем татăлса анчĕç.— Ун пирки Петр Петрович та пĕлет, хамăн йăнăш çинчен ăна тепĕр куннех каласа патăм. Кăларăр мана фермăран, суда парăр... Эпĕ çакна тивĕçлĕ.

Клава, питне аллисемпе хупласа, сĕтел çинелле тĕршĕнчĕ. Унăн хулĕсем çине-çинех туртăна-туртăна илчĕç.

Канашлу вăраха пычĕ. Унта Клава пирки сахал мар каларĕç. Сĕт вăрлама тăнăшăн ăна пурте татăклăн сивлерĕç. Пĕр Лена кăна тантăшне хӳтĕлеме пăхрĕ, Клава йăнăш утăм тăвассине сирсе яманшăн вăл хăйне айăпларĕ. Ун шучĕпе, кукăр алла хăюллăн ярса тытакана

мухтамалла, кукăр алăллă пуласран сыхлакана вара ăслă çын темелле.

Кĕтмен çĕртен канашлура Герман та сăмах илсе каларĕ. Вăл Клавăна пат чĕлхеллĕ пулнăшăн, сăмаха шухăшламасăр персе янăшăн пăскăртрĕ.

— Лайăх хĕр, анчах çавăн пек кăлтăкĕ-сăлтăкĕ пур. Тӳррипе каланăшăн çилленме ан шутла мана, Клава. Эпĕ мĕн шухăшлатăп—çавна калатăп, шухăшласса вара мĕнле пĕлетĕп — çапла шухăшлатăп,— тесе пĕтерчĕ вăл хăйĕн сăмахне.

Юлашкинчен пурте пĕр шухăш патне пырса тухрĕç: Клавăна, хăйĕн йăнăшне йышăннине шута илсе, дояркăрах хăвармалла. Фермăра учетчик тытмалла мар. Сĕт мĕн чухлĕ суса илнине дояркăсен хăйсен çырса пымалла. Çакна аслă дояркăн тишкĕрсе тăмалла.

— Тавтапуç сире, юлташсем, мана пĕр шухăшран хăтартăр. Комплекслă бригадă бригадирĕ вĕренме каять, ун вырăнне çын тупаймасăр хăшкăлнăччĕ. Халĕ ĕнтĕ ĕçсĕр юлнă Мĕтрие бригадира лартма шухăш пур,— пĕлтерчĕ председатель.

Канашлу хыççăн Германпа Клава хĕрлĕ кĕтесрен пĕрле тухрĕç. Вĕсем вăрман хĕрринчи çулпа ялалла утрĕç.

— Эх, Герман, ăнланмастăн çав эс мана, ăнланмастăн. Ăнлансан ун пек пулмасть...— хĕрӳллĕн тăна кĕртсе пычĕ хĕр каччăна.

Çул хĕрринчи кăнттам хырсем хĕрпе каччă пуплесе пынине пуç тайсах итлерĕç, анчах каччă мĕне ăнланманнине пĕлме çамрăксем хыççăн утса каяймарĕç, хăйсем килĕштернĕ вырăнсенчех тăрса юлчĕç. Тепĕр тесен, вырăнтах юлса, вĕсем нумаях та çухатмарĕç: кĕçех вăрман хĕрринчи çул çине тепĕр мăшăр килсе тухрĕ. Кусем Санькапа Верук пулчĕç. Темиçе минутранах виççĕмĕш мăшăр — Мĕтрипе Лена утса килни курăнчĕ.

— Ленук, спектакльте выляма килĕшнĕшĕн ан ятла мана. «Вăт тупăннă артист», тесе тăрăхласран шикленнĕччĕ, çавăнпа ун çинчен сана тăруках калаймарăм,— айăпа кĕнĕ сасăпа каçару ыйтрĕ хĕртен Мĕтри.

Хĕр каччă çине именсе пăхрĕ. «Каçар мана, тусăм, хам та ăнланатăп, эпĕ кăлăхах кĕвĕçнĕ»,—терĕ вăл илемлĕ сенкер куçĕпе. «Сана шутсăр тунсăхларăм. Ман чунăм пĕр сана çеç юрататъ»,— ответлерĕ хĕре çырă куç.

Сенкер куçпа çырă куçăн калаçмалли тата та пурччĕ пулĕ, Лена каччăна чарса тăратрĕ.

— Куратӑн-и? — тӗллесе кӑтартрӗ Лена вӑрмантан ирӗке тухса ларнӑ ҫамрӑк хурӑн ҫине.

— Куратӑп-ҫке...

— Мӗн куратӑн?

— Хурӑн суранӗсене тӳрлетнӗ, ҫулҫӑ сарнӑ та сан пекех хитреленсе кайнӑ.

— Кулах, кулах...

— Сан пекех шур тутӑрлӑ, сан пекех яштака.

Хӗрпе каччӑ хурӑн патне чупса пычӗҫ, тахҫанхи пӗлӗшпе курнӑҫнӑ чухнехи пек, ӑна ыталаса илчӗҫ.

Чӑнах та, инкеке тӳссе ирттернӗ хурӑн палламалла мар чӗрӗлсе кайнӑ. Халӗ вӑл таврана илем кӳрсе ларать.

Этем чунӗ те ҫавах. Вӑл пурнӑҫ пӑтӑрмахӗсем витӗр тухать те тасалса, илемленсе каять, ҫӗнӗ вӑйпа тулать. Ана вара пурнӑҫ ҫулӗпе малалла утма та ҫӑмӑл.

# Кӗлӗм, Энтри тата Чӑрӑш

*Легендӑ*

Ҫуркунне, шыв-шур чакма пуҫлаепа, Кӗтнерен унӑн Хум ятлӑ юппинелле пӑрӑнса кӗрсе, виҫӗ пысӑк мар сулӑ юхӑма хирӗҫ вӑраххӑн шуса пынӑ. Виҫӗ сулӑ ҫинче виҫӗ ҫемье. Сулӑсем ҫине кантӑр пирӗнчен пуҫ пӗкмелӗх пӗчӗкҫӗ чатӑрсем карнӑ. Ҫаскӑн ҫилпе шалкӑм ҫумӑра сахал мар курнӑран вӗсем лӑстанкӑланма пуҫланӑ. Чӑнах та, сулӑсен ҫулӗ самаях вӑрӑм пулнӑ. Тискер те хаяр улпутӑн чӑтмалла мар йывӑр пусмӑрӗнчен таракан хӑюллӑ чӑвашсем Кӗлӗм, Энтри тата Чӑрӑш анлӑ Атӑлран сӗвек ҫыранлӑ Сӗвене ишсе кӗнӗ, чӑтӑмлӑн шухӑ Кӗтне тӑрӑх тухнӑ. Вӗсем хӑйсене пурӑнма улпут алли ҫитмен, патша куҫӗ курман улах вырӑн шыранӑ.

Хум ҫырми тӑрӑх ишсе пыруҫӑн харсӑр чӑвашсем хӑйсене хирӗҫ вӗр-ҫӗнӗ турпас татӑкӗсем юхнине асӑрханӑ. Юлташӗсенчен тавҫӑруллӑрах Кӗлӗм тарланӑ ҫамкине улача кӗпе ҫаннипе васкамасӑр шӑлса илнӗ.

— Ку юхан шыв тӑрӑхӗнче те ҫынсем пурӑнаҫҫӗ иккен. Тен, вӗсен те улпучӗ пур. Мӑйкӑчах кӗрсе ӳкиччен, ҫакӑнталла чарӑнса пӑхар мар-и? — тенӗ вӑл.

Энтрипе Чӑрӑш хӑйсен юлташӗн ӑслӑ сӑмахӗсемпе килӗшнӗ, вара шывпа шӳсе йывӑрланнӑ йываҫ сулӑсем ҫӑра хӑвалӑхлӑ ҫыран сулхӑнне хӑюсӑррӑн пырса йӑпшӑннӑ.

Кунта хайхи чӑвашсен куҫӗ умне ейӳ илекен улӑх тухса тӑнӑ, аякрах та мар ката вӑрмансем курӑннӑ.

Энтри, хӗвелтухӑҫнелле пӑхса, чӗркуҫҫи ҫине ларнӑ та тархаслакан сасӑпа кӗл тума пуҫланӑ.

— Эй, аслӑ пӳлӗхҫӗ, аслӑ пӳлӗхҫӗ амӑшӗ — хӑрпан,

хăрпан амăшĕ — хăт, хăт амăшĕ — юсав, юсав амăшĕ — ырă уйăх-хĕвел, çĕршыв, юман, йывăç — ирĕк парăрччĕ пире çакăнта пурăнма!

Чăрăшăн кĕлли кĕскерех пулнă:

— Эпир турăпа пӳлĕхĕн чунĕсем. Пире турă лайăха çыртăр, пӳлĕхçĕ лайăха пӳртĕр,— тенĕ Чăрăш, унтан пĕшкĕнсе тăпрана чуп тунă.

Турăсăртарах Кĕлĕм хăйне евĕр кĕл тунă:

— Эпир хамăрăн атте-еннен ачисем, пӳлĕх мунчине вут тĕртмен, пӳлĕх пăрушне пусса çимен! Унăн пире кӳренме сăлтав çук!

Çапла каланă та, вăрт çаврăнса, вырнаçмалли вырăн шырама утнă...

Қалмăк арманĕнчен анатарах, Хум хĕрринче, Райхыç текен ушах вырăн пур. Халĕ унта ватă йăмрасем кашласа ӳсеççĕ. Çавăнта вырнаçнă та ĕнтĕ чи малтан ку таврари виçĕ ялăн тĕп аслашшĕсем. Анчах Райхыçĕнче вăрах пурăнайман вĕсем: шыв илнипе аптăранăран сăнаса пăхмалла виçĕ чăваш виçĕ тĕле куçса ларнă. Çĕнĕ вырăнсем виççĕшĕн те ăнăçлă пулнă. Вĕсем пĕр çĕре куçма пĕрне-пĕри пайтах ӳкĕтленĕ, анчах нихăшĕ те вырăнтан тапранман. Виçĕ çемье виçĕ тĕлте хунама пуçланă. Турат çумне турат ӳссе ларнă евĕр, виçĕ чăвашран тухнă йыш сыпăкран сыпăка хутшăннăçем хутшăнса пынă.

Ку хăçан пулнине асаттесем те маннă ĕнтĕ, мĕншĕн тесен унтанпа Хум тăрăх шыв сахал мар юхса иртнĕ, ватăлнă йывăçсем вырăнне çĕннисем ӳсе-ӳсе ларнă. Çулсем иртсе пынă май Кĕлĕмкасси, Энтриел тата Чăрăшкасси ялĕсем пулса кайнă. Ял-йышсем хăйсен тĕп аслашшĕсене манман, вĕсен ячĕсене çĕнĕ ăру асăнмалăх хăйсен ялĕсен ячĕсенче сума суса сыхласа хăварнă.

(Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕмкасси ялĕнче çырса илнĕ.)

# Кипарис мĕншĕн хӳхĕм?

*Юмах*

Ку вăл тахçан-авалах Крымăн кăнтăр çыранĕнче пулнă.

Хуллен-хулленех тул çутăлса килнĕ. Хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе хĕвел хăпарнă. Унăн пайăркисем чи малтанах ту тăррине ылтăн тĕспе ялкăштарнă, унтан сăрт айккинчи çамрăк чинарăпа выляса илнĕ. Часах урăм-сурăм тинĕс те ирхи хĕвелпе йăлтăр-ялтăр çиçе пуçланă.

Хĕвел тинĕсе лăпланма ӳкĕтленĕ. Анчах лешĕ ĕнерхи шторм хыççăн çав-çавах йывăррăн сывланă. Çыраналла пĕрин хыççăн тепри капмар хумсем чупнă. Вĕсем çын çӳллĕшех пулнă.

Иçĕм çырли пахчинче ĕçлекен старикĕн виçĕ ывăлĕ çиллине çавăрса ярайман тинĕс çине çӳллĕ çырантан пăхса тăнă. Ашшĕне пулăшас шутпа вĕсем пахчана кайма тапраннăччĕ, кĕтмен çĕртен савăк юрă илтĕнсе каять. Утма çулпа тинĕс хĕрринелле виçĕ хĕр анаççĕ иккен.

— Шыва чăмса тухсан аванччĕ те! — пĕлтерет шухăшне кĕçĕнни.

— Э, пире паян тинĕс йышăнас çук, хумсем вăйлă,— иккĕленет ваталăххи.

— Кĕçех пĕлетпĕр: йышăнать-и вăл пире е çук-и,— сăмах хушать асли. Вăл хывăнать те тинĕсĕн çӳллĕ хумне хирĕç хăюллăн утса каять. Ана хум пĕррех çапать те йăвантарса ярать, çыраналла тĕртсе кăларать. Анчах хĕр унпа та кăмăллă. Вăл хумпа тавлашса пăхма хăюлăх çитерчĕ-çке-ха,

Тинĕс ваталăххине те йышăнасшăн пулмарĕ, ун çине ура тупанĕнчен пуç тӳпине çити тăварлă шыв сапрĕ те

каялла кăларса пăрахрĕ. Анчах ку хĕр те çӳçне шуратнă асаттене — тинĕсе çиллĕнмест. Унăн ытамĕнче çав-çавах пулса курчĕ-çке-ха.

Хăвăрт-хăвăрт утса кĕчĕ шыва кĕçĕнни. Ун умне пысăк хум çитсен, хĕр чăмрĕ те самантранах хумăн тепĕр енне ишсе тухрĕ. Хум ун çине, хĕр — ун ăшне. Çапла турĕ вăл хум шавласа çитмессерен. Унсăрăн вăйлă хум турпас пекех çавăрса çапать. Çырантан хăпса шалалла кĕрейрĕн пулсан, вара ишме те ансат. Сăпкари пекех ярăнатăн. Хумсем хĕре хăйсен куçса пыракан пĕкки тăррине пĕр енчен асăрхануллăн çĕклеççĕ те тепĕр енчен ачашшăн каялла антараççĕ.

Çырантан чылай аякка ишсе кĕчĕ çамрăк хĕр. Килĕшрĕ тинĕсе хăюллă хĕрпе выляма. Хумсем хĕп-хĕпĕртĕк, хĕр вĕсенчен те савăкрах.

Акă вăл, дельфин пекех, çыраналла ишет. Çыран патне çывăхарсан, çӳллĕ хума ирттерсе ячĕ те йăпăр-япăр ура çине тăчĕ, халь-халь çитесле хăвалакан тепĕр хумран çаврăнса пăхмасăр тарчĕ. Çырана чупса тухсан, хыттăн ахăлтатса кулса ячĕ. Куласса вăл, апăрша, хумран кулчĕ. Хăваларĕ, хăваларĕ, пĕрех хăваласа çитеймерĕ.

Курчĕç çакна виçĕ каччă, виççĕшĕн те пичĕсем ăшă кулăпа çутăлса кайрĕç. «Ай, мĕн тери чее вăл, çӳллĕ хума та чике тăршшĕ лартрĕ. Ай, мĕн тери вăйлă вăл, çиллес тинĕсе те çĕнтерчĕ»,— шухăшласа илчĕ кĕçĕнни. Унăн чĕринче юрату хĕмленсе кайрĕ. Каччă сасăпах çапла каларĕ:

— Вăл мана пӳрнĕ.

Ак хайхи, тăвансем виççĕшĕ те кĕçĕн хĕр умĕнче тăраççĕ.

— Эпĕ сана юрататăп. Тух мана качча! — хĕрӳллĕн калать хĕре кĕçĕнни.

Хĕр сăнĕ тĕксĕмленсе кайрĕ, куç харшийĕсем çиллессĕн пĕрĕнсе ларчĕç.

— Ылтăн йĕкел тĕшши эп, кĕмĕл укçан çути хам. Аннен савнă хĕрĕ эп, сана качча тухас çук,— пат татса каларĕ вăл, каччă çине пăхмасăр.

Салхуллăн пăхса илчĕ каччă хăйĕн пиччĕшĕсем çине. Хĕр качча тухма килĕшменни ăна кичемлентерсех ячĕ, анчах пике чĕрине вăйпа итлеттереймĕн.

Нимĕн те пулман пекех, хĕрсем çыран хĕрринчи чулсем çине вырнаçса ларчĕç те алă ĕçĕ тытрĕç. Кĕçĕнни

ал тутри тавра чĕнтĕр çыхать, асли хăй валли кĕпе çĕлет, вăталăххи вара тутăр тĕрлет...

Виçĕ каччă ашшĕне пулăшас шутпа пахчана кайма тапраннăччĕ, анчах вĕсем вăталăх хĕр мĕн туни çине пăхрĕç те тăпах чарăнчĕç. Тутăр çине вăл ӳкернĕ чечексем чĕрĕ пекех курăнаççĕ.

Асăрхарĕç çакна каччăсем, асăрхарĕç те — ăшшăн кулса ячĕç. «Ай, мĕн тери ăста тĕрлет вăл, пăхма камăллă»,— шухăшларĕ вăталăххи. Унăн чĕрине юрату хыпса илчĕ. Каччă сасăпах çапла каларĕ:

— Вăл мана пӳрнĕ.

Ак хайхи, тăвансем ăста тĕрлевçĕ умĕнче тăраççĕ.

— Тиркеместĕн пулсан, эпĕ санăн шанчăклă мăшăру пулам,— сĕнчĕ хĕре вăталăххи.

Ĕненмесĕр тенĕ пек итлерĕ каччă сăмахне чиперкке, ун çине вăрттăн пăхса илчĕ те çапла хуравларĕ:

— Йывăç ӳсет, ӳсет, пысăк пулать — çулçине хурт çиет, хур пулать. Сар хĕр ӳсет, ӳсет, пысăк пулать — юта качча каять, хур пулать. Çавăнпа качча пачах тухас мар.

Лаштах усрĕ пуçне каччă. Хĕр качча тухма килĕшменни ăна пăшăрхантарсах ячĕ, анчах пике чĕрине вăйпа итлеттереймĕн.

Виçĕ каччă ашшĕне пулăшас шутпа хăйсен пахчине кайма тапраннăччĕ, çывăхрах шыва путакан çын кăшкăрни илтĕнчĕ. Кĕçĕн шăллĕ унталла чупма пуçларĕ, анчах та пиччĕшĕ чарчĕ. «Хĕрсем çывăхарах, пулăшу пама вĕсем маларах ĕлкĕреççĕ»,— терĕ вăл. Ку чăнах та çавăн пек пулса тухрĕ.

— Ишсе каям та ун патне, çырана туртса кăларам!— циксе тăчĕ кĕçĕн хĕр, пулăшу ыйтса кăшкăрнине илтсенех.

— Апла тума май килмест пулĕ... Тинĕс ытла хумханать, хăв шыва путăн,— терĕ вăталăххи.

— Эпир канат вĕçне пăрахса парар. Ярса тытайсан, çăмăллăнах туртса кăларăпăр,— майне тупса пачĕ асли.

Çапла турĕç те. Çăлса хăварни ватă пулăç пулчĕ. Унăн киммине хум ӳпĕнтернĕ-мĕн.

Курчĕç çакна виçĕ каччă, виççĕшĕн те пичĕсем ăшă кулăпа çутăлса кайрĕç. «Ай, мĕн тери ăслă вăл асли, ирĕксĕрех ăмсанса пăхăн. Ай, чăн-чăн пурнăç çынни иккен ку хĕр, унашкаллине епле юратмăн-ха»,— шухăш-

ларĕ аслă пиччĕшĕ. Унăн чĕринче юрату çулăмланса кайрĕ. Каччă сасăпах çапла каларĕ:

— Вăл мана пӳрнĕ.

Ак хайхи, пĕр тăвансем виççĕшĕ те аслă хĕр умĕнче тăраççĕ.

— Савнă чиперккем, эпĕ сана хамăн чĕреме сĕнем-и? — пуç тайрĕ хĕре асли.

Тимлĕн итлерĕ каччă сăмахне пике, унăн куçĕнчен ăшшăн пăхрĕ те кăмăллă сасăпа çапла каларĕ:

— Сан пек лайăх каччă умĕнче кирлĕ марччĕ мана калаçма. Çапах çакна хăйса калам: хамăн чĕрене кама парасси пирки шухăшласа пăхман-ха эпĕ, çавăнпа качча тухма вăхăт çитеймен пуль, тетĕп.

Хаш! сывларĕ юман пек çирĕп каччă. Хĕр качча тухма килĕшменни ăна хуйхăртсах пăрахрĕ. Эккей, кăмăл пулмасан, пике чĕрине вăйпа итлеттерме çук иккен. Хăй савса хăй килĕшмесен, нимĕн те тăваймăн.

Каччăсем çапах та эрленсе те хурланса макăрмарĕç. «Эпир хĕрсене пуç çапсах йăлăнмăпăр, хăйсен йăлăнмалла килсе ан тухтăр»,— терĕç виççĕшĕ те. Вĕсем вăрт çаврăнчĕç те килне кайрĕç, ашшĕне пахчара ĕçлеме пулăшрĕç. Анăçман юратăва манма тăрăшса, кулленхи ĕçре йăпану тупрĕç.

Анчах тăвансем мирлĕн вăрах ĕçлеймерĕç çав. Пĕр çуллахи кун таçтан хăяматран хаяр тăшмансем килсе тухрĕç. Палларĕ таса тӳпе тăшмансене, тĕксĕмленчĕ, пĕлĕтсемпе каркаланчĕ. Асăрхарĕç тусем тăшмансене, хăйсен канăçлăхне çухатрĕç, çиллессĕн кĕмсĕрт те кĕмсĕрт тума пуçларĕç. Курчĕ тинĕс тăшмансене, кăвакран хуралса кайрĕ, хаярланса хумхана пуçларĕ.

Паллă ĕнтĕ, лайăх çын ырра хирĕç ырă, усала хирĕç усал пулать. Виçĕ пĕр тăван ял-йышпа пĕрле хĕç-пăшал тытрĕ. Ял çыннисем тăшманпа паттăррăн çапăçрĕç. Чĕнмен хăнасене чылайăшне хирсе тăкрĕç, ыттисене халь-халь таптас пек хăваласа кайрĕç. Пĕлеймен çав харсăр йĕкĕтсем хăйсене тăшманăн тепĕр эшкерĕ вăрттăн сыхласа тăнине. Тăшман йышлă, кусем сахалăн. Выçă кашкăр пек сиксе ларчĕç тăшмансем вĕсем çине, урса кайнă пек касрĕç, пĕрне те хĕрхенмерĕç. Чуллă çĕр çине вĕри юн тăкăнчĕ. Яла хӳтĕлекенсен речĕсем чаксах пычĕç. Каялла тăваттăн — пахчаçăн виçĕ ывăлĕ тата пĕр сутăç кăна таврăнайрĕç.

Ҫичӗ ютсем ҫаплах-ха ял еннелле ӑнтӑлаҫҫӗ. Хӗсӗк-хӗсӗк куҫлисем шӑтӑк витӗр пӑхаҫҫӗ, чармак-чармак куҫлисем чул хыҫӗнчен сӑнаҫҫӗ. Пырам, таптам, тееҫҫӗ Ӗнтӗ пырӑр пырасса, пӗлӗр ял парӑнмасса.

Тӑшман эшкерӗ ял ҫинелле ҫӗнӗрен тапранать. Ҫакна курсан, хӑравҫӑ сутӑҫ чӗри кӑртах турӗ, тапса сикрӗ ҫак ҫын мулкачла тусем хушшинелле. Ҫапӑҫу хирӗнче паттӑрӑн пуҫӗ выртса юлать, таркӑнӑн тусан ҫинче ура йӗрӗ юлать. Виҫӗ каччӑ таркӑн еннелле йӗрӗнсе пӑхрӗҫ.

Умра — тӑшман, хыҫра — тӑван ял, сылтӑмра — ту, сулахайра вара — кӳлӗ. Тӑван ял нихӑҫан та ҫичӗ юта парӑнман, ун хуррине курман. Пӗррехинче тӑшман пысӑк ҫарпа яла темиҫе эрне хупӑрласа тӑнӑ, ҫынсем выҫӑпа тата шывсӑр аптӑранӑ. Ҫӑлӑнӑҫ вӗсене кӗтмен ҫӗртен килет: тӑшман тӑнӑ вырӑнта ҫӗр ик еннелле сирӗлет. Унччен те пулмасть, йышлӑ ҫар куҫран ҫӗтет. Ҫав вырӑна шыв юхса тулать, кӳлӗ пулса тӑрать. Ҫапла хӗрхенет тӑван анне пек хаклӑ ҫӗр айӑпсӑр ҫынсене. Вӗсене пусмӑртан ҫӑлать, пусмӑрҫӑсене тӗпӗ-йӗрӗпе шӑлать.

Ку вӑл ӗлӗк-авал пулнӑ, теҫҫӗ. Виҫӗ тӑван унашкаллине курман, тӗлӗнмелле хӑватсене шанасса та шанман. Эппин тӑшманпа вӗсен хӑйсенех ҫапӑҫмалла.

— Пуҫа хурсан хурӑпӑр, анчах чыса ҫухатмӑпӑр! — терӗ хӗрӳллӗн кӗҫӗнни.

— Юлашки юн тумламӗччченех ҫапӑҫӑпӑр! — пӗлтерчӗ хӑй шухӑшне вӑталӑххи.

— Пуҫа та, чыса та сыхласа хӑвармалла! — лӑпкӑн та ҫирӗппӗн каларӗ асли.

Виҫӗ хӗр ҫапӑҫу епле пынине куҫ илмесӗр сӑнарӗҫ. Таркӑна курсан, кӗҫӗн йӑмӑкӗ тутине пӑчӑртаса лартрӗ те шӑл витӗр йӗрӗнчӗклӗн каласа хучӗ:

— Пӑхӑр-ха: ҫак пирӗн сӑмса шӑлан каччӑ урисене илтерет вӗт!

— Вӑлах-ши вара...— иккӗленчӗ вӑталӑххи. Вӑл тӳпенелле салхуллӑн пӑхрӗ: тавралӑха хура пӗлӗтсем хупӑрланӑҫемӗн хупӑрлаҫҫӗ.

— Пирӗн каччӑсем вилсен те парӑнмӗҫ. Вӗсене пулӑшас пулать! — ҫирӗппӗн каларӗ аслӑ аппӑшӗ.

— Тӗрӗс, тӗрӗс, пулӑшас пулать вӗсене! — пӗр шухӑшлӑ пулса килӗшрӗҫ йӑмӑкӗсем.

Ырӑ шухӑш килсе тухсан, хӗрсене ҫунат хушӑннӑ пекех туйӑнчӗ. Асли ӑс панипе вӗсем ял тӑрӑх унталла та кунталла чупрӗҫ, хӗрарӑмсене арҫынла тумланма,

хĕç-пăшал тытма хистерĕç. Лешсем хирĕçлесе тăмарĕç. Қамăн тăшман аллине çакланас килтĕр-ха!

Çав хушăра виçĕ каччă çапла шутларĕç: çын иккĕ вилес çук, пĕринчен пур пĕрех хăтăлаймĕ. Вилĕме кĕтсе лариччен тăшман çине хамăр чăрсăрланса тапăнас, терĕç. Вĕсем пĕрне-пĕри ыталаса чуп турĕç, унтан юнашар тăчĕç те çичĕ ют эшкерне хирĕç кайрĕç. Маттур та илемлĕскерсем, урисене харăссăн, çирĕппĕн яра-яра пусрĕç, хăюллăн, харсăррăн утрĕç.

Тăшман хăй çĕнтересси пирки пĕртте иккĕленмерĕ. Ун умĕнче пурĕ те виçĕ каччă çеç, вĕсем те куç кĕретĕнех вилĕме хирĕç пыраççĕ. Чĕнмен хăнасем эхер те мехер савăнчĕç, апла та капла кăшкăрашрĕç. Вĕсем мĕн чухлĕ хытăрах ахăрашрĕç, паттăрсен чĕрисенче тарăху çавăн чухлĕ вăйлăрах çĕкленчĕ. Хыттăн кăшкăрса ячĕç хайхи каччăсем, çавăнтах виççĕшĕ те тăшман çине ыткăнчĕç, касма та чикме пуçларĕç. Қам алă айне пулни çавăнтах выртса юлать. Тăшман кĕрхи çулçă пек тăкăнать.

Çав вăхăтра ял енчен таçтан тупăннă çĕнĕ отряд килни курăнчĕ. Вăл виçĕ паттăра пулăшма васкарĕ. Ку отрядра арçынла тумланнă хĕрарăмсем çеç пулнине чухласа илеймерĕç çичĕ ютсем. Вĕсем хушшинче асар-писер пăтрашу пуçланчĕ. Хайхисем кĕçех çурăмĕсене кăтартрĕç те, кам ăçталла курать, унталла тарса сапаланчĕç.

Тăшман куçран çухалсан, тӳпе каллех тасалчĕ, тусем пусăранса ларчĕç, тинĕс тӳпе пек кăвак курăна пуçларĕ.

Акă, виçĕ чиперкке виçĕ каччă патнелле çывăхараççĕ. Қаччăсен виççĕшĕн те тумĕсем йытă туланă пек, пичĕсем юнланнă. Çапах вĕсем илемлĕ те мăнаçлă. Ку ăнланмалла та. Вĕсем халĕ чухăн пахчаçă ывăлĕсем çеç мар, çапăçура çĕнтернĕ паттăрсем.

Қĕçĕн хĕр пахчаçăн кĕçĕн ывăлĕ умне вăрт-варт утса пычĕ, малтанах сăмах пĕтернĕ пек, татăклăн çапла каларĕ:

— Эпĕ сана качча тухатăп, паянтан эпир мăшăрлă пулатпăр.

Вăталăх хĕр пахчаçăн вăталăх ывăлĕ патне хăюсăрран пырса тăчĕ, пуçне пĕкрĕ те иккĕленӳллĕн çапла ыйтрĕ:

— Қаччă мана хăйĕн мăшăрĕ тума килĕшмĕ-ши?

Акăш пек ярăнса пычĕ аслă хĕр пахчаçăн аслă ыва-

лĕ çывăхне, çĕре çитесле тайăлса пуç тайрĕ те кăвакарчăн пек çаплалла кăвиклетрĕ:

— Хамăн чĕреме паянтан сана, пĕр сана кăна парнелетĕп.

...Часах виçĕ туй пулнă. Туй кунĕ пахчаçă ывăлесем виçĕ хĕр ячĕпе пĕр йывăç лартнă, ăна кипарис тесе ят панă. Унран вара акăш-макăш çӳллĕ йывăç ӳссе ларнă. Çак йывăç кĕçĕн хĕр пек яштака, илемне вăл вăталăх хĕртен илнĕ, тӳлек те шухăшлă пулнипеаслă хĕре аса илтерет. Эппин кипарис мĕншĕн хӳхĕм пулнине халĕ ĕнтĕ пурте пĕлетĕр. Хӳхĕмлĕх илеме çеç мар, паттăрлăхпа ăса та палăртать. Мĕн хӳхĕм, çавна кирек кам та хисепе хурать.

Юлашкинчен çакна пĕлтерĕпĕр: эпир ним те хамăртан туртса кăларман. Мĕн калани йăлтах чăн. Пире ĕненмесен — мĕн пулни-иртнине ватă вăрман курнă, таса уй илтнĕ. Кăвак тинĕс виçĕ хĕре паянчченех ас тăвать, чуллă ту пирĕн каччăсене виççĕшне те паллать.

# Юрă хăвачĕ

*Лирикăлла новеллă*

Ку вăл утă çулнă вăхăтра пулчĕ.

Вĕсене, çичĕ çынна, колхозăн вăрманти уттине çулса пуçтарма бригадă пухăвĕнче уйăрнăччĕ. Ĕçе вăраха яни никама та чыс кӳмест, хăвăртрах пĕтерес килет. Анчах кал-кал ĕçлеме çанталăк чăрмантарать. Уçланкăра хĕрсе утă çулнă вăхăтра çумăр килсе пусрĕ. Пĕр çума тапратсан, вăл çӳпçерен тăкнă пекех тăкрĕ. Утă çулакансене ĕç пăрахма тиврĕ. Çынсем вăрмантан çумăрпа лӳшкенсе, ĕнтĕркесе таврăнчĕç.

Тепĕр кун, курăк типшĕрессе кĕтсе, вĕсем Лăриван мучисен картишĕнче пĕр хыпаланмасăр çависене туптарĕç, авăрĕсене лартрĕç. Никам та васкамасть.

— Çава кая ларчĕ. Каçăрăлса çулмалла ан пултăрха, тепĕр хут лартам! — тет Ульха аппа. Çак тулли кĕлеткеллĕ ĕçчен карчăк хыпăнса ӳкнине ялта никам та курман, вăл хăйне пĕрешкел лăпкă тытать. Ĕçлекенсем çемьере унсăрах пур пулин те, ăна килте лартса хăвараймастăн. Кирек мĕнле ĕçе те вăл тĕплĕн тăвать. Утă çуласса та çивчĕ бритвăпа хырнă пекех таса çулать.

— Лăриван мучи, виçсе пăх-ха, тĕрĕс ларнă-и? Эсĕ чухлаканччĕ,— ыйтать утă çулма кăçал пуçласа хутшăнакан Петя. Хăрах аллинче унăн çава, тепринче — виçмелли пушăт чĕлли. Хăйĕн питне чĕкеç шатри пусса илнĕ. Куçĕсем чăл та чăл çунаççĕ.

Ытти чухне вăр-вар Гера паян теме пула пачах урăх каччă пулса тăнă темелле: вутă каски çине тăп-тăпах пулса пусăраннă ларнă.

— Эсĕ мĕн тăватăн тата? — сăмах хушрĕ ăна Ульха аппа.

Гера пуçне ялт çĕклерĕ.

— Э... э... Мĕн тумалла-ши тесе шутласа ларатăп.

— Инкӳ пымасть-им паян?

— Пĕлместĕп. Вăл çывăрса тăчĕ те кăмака çине канма хăпарса выртрĕ.

Лăпах çав вăхăтра картишне Праски инкĕш пырса кĕчĕ.

— Мĕн палкать çав сар ывăл? Ма çăпан тухмасть унăн чĕлхи çине!..

Çынсем кулançи кăна турĕç, кулма та ӳркенеççĕ, ахăр. Ытла та пĕçертекен хĕвел çине вара, аллисене куç тĕлне тытса, час-часах иккĕленӳллĕн пăха-пăха илеççĕ.

— Ненай,— текелерĕ Ульха аппа, кунти çынсем хушшинче чи ватти.— Шăм-шак йывăр, ала-ура сурать. Кăймалла-ши е тапранмалла та мар-и? Лăриван хăта, эсĕ мĕнле шутлатăн: паян та çумăр пулать-и?

Хытанка та лутра кĕлеткеллĕ Лăриван мучи, авалхи пăхăр чĕлĕмне çăварĕнчен кăлармасăр, унталла-кунталла пăхса илчĕ. Вата çын мĕн каласса пурте çăвартан пăхсах кĕтеççĕ. Вăл та çакна курать, хăйĕн йăнăшма юраманнине лайăх ăнланать. Хай старик хĕсĕк куçĕсене татах хĕссе хучĕ те татăклăн çапла каларĕ:

— Иккĕленмелли çук: пĕр пулсан пулатех, пĕр пулмасан — пулмĕ вара.

Кăн-н пăхрĕç çынсем мучи çине. Вăтам шкултан вĕренсе тухнă Миша, урокри пекех, аллине тăратрĕ.

— Ыйтма юрать-и, мучи? Ăнланаймасăр юлтăм. Мĕн пирки иккĕленмелле мар пирĕн: çумăр пуласси пирки-ши е пулмасси пирки?

Лăриван мучи каччă еннелле хаяррăн çаврăнса тăчĕ. Лешĕн тăрăхласарах пăхакан куçĕн пĕр кĕтессинчен тепĕр кĕтессинелле чăрсăр хĕмсем чупаççĕ. Миша çеç мар, ыттисем те хăй çине кулса пăхнине асăрхасан, мучи тăруках çилленсе кайрĕ.

— Ха! Тупнă ыйтса тăмалли! Эккей, хальхи ача-пăча... Çитет пăлахая персе ларма. Хăппăл-хаппăл пулăр. Атьăр, кайрăмăр ĕçе!

Вăт тăк мучи... Ай-вай вĕри иккен. Тепĕр чухне ăвă та унашкалах хăвăрт тивсе каяймасть. Çапах та çынсем старике хирĕçлемерĕç, çависене тытрĕç те ерипен вăрманалла утрĕç.

Те ĕнер çумăра лексе ĕшеннĕрен, те çанталăк уяртасса шанманнипе, çынсем пусăрăнчăк кăмăллă. Лăриван мучи хăйне кӳрентернине çаплах манаймасть-ха.

Ҫӑвар та уҫса калаҫасшӑн мар, хӑйне сӑмах каласан та ӑнланмалла мар тем мӑкӑртатса кӑна илет. Ватта хисеплеменсемпе калаҫса ҫӑвар тутине сая ярас мар, тет пулмалла. Мӑнукӗ, Вера, институтран ҫуллахи каникула таврӑннӑскер, тӑраниччен ҫывӑрайман, ахӑр, ҫынсем асӑрхаман чухне ҫине-ҫинех анасласа пырать. Праски инке кӑмакаран васкаса кӑларнӑ ҫӑкӑр тачка пулмарӗ-ши тесе пӑшӑрханать.

Сывлӑш сывлама ҫук пӑчӑ. Ҫамка ҫине пӑчӑр-пӑчӑр тар тапса тухать.

— Вӑт пӗҫертет, ҫумӑр хӗвелӗ пулас! — ассӑн сывларӗ пӗри.

— Қасать пире ҫанталӑк япӑххи,— кулянчӗ тепри.

Миша вара нимӗншӗн те кулянмасть.

Вӑл пурте илтмелле ҫапла пӗлтерет:

— Паян ҫумӑр пулмасть. Ҫумӑр хӑпартма туррӑн турӑ лаши ватӑлнӑ.

— Ҫумӑрӑн утне кӳлнӗ, ямшӑкӗ ларнӑ, туххӑмрах тӗпӗртеттерсе ҫитӗ,— килӗшмерӗ каланипе Ульха аппа.

— Халь ӗлӗкхи мар ҫав. Ҫумӑр текех утпа ҫӳремест ӗнтӗ, самолетпа вӗҫет. Анчах пилочӗ чирленӗрен паян ҫумӑр ҫула тухаймасть,— каллех шӳтлет Миша.

Праски инке, утнӑ ҫӗртех пӗшкӗнсе, чӗкеҫ куракӗ татса илчӗ, ӑна авалхисен йӑлипе икӗ алӑпа икӗ еннелле чӗрсе пӑрахрӗ:

— Ҫумӑр ҫакнашкал ик еннелле сирӗлсе кайтӑрах!

Ун хыҫӗнче пыракан Ульха аппа ӳркевлӗн кулса илчӗ.

— Вӑт ҫӑмӑлҫах! Ытла ансат сиресшӗн ҫумӑра. Анчах ҫанталӑк майланмасть пулӗ ҫав... Вӑн пӗлӗт хӗрри кӑвакара пуҫларӗ. Қапла пӗр тумтирсӗр тухрӑмӑр та-ха эпир, ҫумӑр ҫӑвин мӗн тӑвӑпӑр? Қивӗ плаща илес-мӗн.

Унӑн кӑкӑрӗнче тӑвӑр пек, тем тулса тӑвӑлнӑнах туйӑнать. Урасенчен чул ҫыхса янӑ тейӗн, пӗринчен тепри аран иртет. Ҫумӑр каллех ҫӑвассӑн туйӑннӑран пушшех утас килмест. Ҫанталӑк ӗҫлеме памасан, кайни те кӑлӑхах пулать-ҫке-ха.

Миша малта. Хӑй темшӗн картт-ус сӑмсине каялла ҫавӑрса лартнӑ. Умри кукӑр-макӑр тӑвӑр сукмак йывӑҫсем хушшипе вӗҫӗ-хӗрри тухасла мар тӑсӑлать.

— Тата хулленрех утас килет-и сирӗн? — хыҫалалла ҫаврӑнса ыйтрӗ Миша.

— Эпӗ хирӗҫ мар та, кунран хулленрех утма ҫук пулӗ ҫав,— йӑл кулчӗ Праски инке.

— Пулать, акă итлĕр...

Миша хаш сывласа илчĕ те тăсăмлăн юрласа ячĕ:

Уй варринче лашра юман,
Атте тесе, ай, кайрăм та,
«Килех, ывлăм», ай, темерĕ:
Чун хурланчĕ — макăртăм та....

Шăпланнă вăрман тăршшĕне юрă хурлăхлăн саланать, çӳллĕ йывăçсем тăрринче ĕсĕклекен сасăпа вăраххăн чĕтренсе тăрать.

Утă çулма каякансене çак юрă пачах килĕшмерĕ.

— Лайăх юрлатăн, Миша. Турат куçĕ куркипе эрĕм йӳççи сăри ĕçнĕ пекех ĕнĕрешетĕн,— хак пачĕ юрлакана Праски инке.

Ульха аппа та тӳсеймерĕ, мĕскĕннĕн çапла тархасларĕ.

— Ах, Миша! Чарăн-ха, иçмасса. Сан юрру йӳçĕ çăмах çине йӳçĕ яшка янинчен пĕртте уйрăм мар. Ураран ура вуçех иртми пулчĕ.

Миша ӳкĕте кĕчĕ, юрра вĕçне çитермесĕрех татрĕ.

— Сакăр вун сакăр юррăм пур, сар сак çине сарса суйларăм. Чи лайăххине юрларăм, çапах сире юраймарăм. Ну, юрĕ. Тен, хытăрах утас килет сирĕн? — каллех çаврăнса пăхрĕ вăл.

— Аçта унта... Мĕлке пек сĕнкĕлтетсен те пырĕ-ха.

— Çук халпа мĕнле хăвăрт утăн-ха...

— Пытару маршĕ юрлама шутламастăн пулĕ те?

— Айта, яра пар! — илтĕнчĕç сасăсем.

Миша кăкăрне уçмалла ӳсĕркелесе илчĕ.

— Атьăр салтакла утатпăр! Ать-два, ать-два! — командă пачĕ вăл хыттăн. Унтан патвар сасăпа савăккăн юрласа ячĕ:

Тӳнкки-тӳнкки параппан та
Çапмасăрах тӳнклетет.
Эпĕр вăййа тухсассăн та —
Чĕнмесĕрех çын килет.

Кĕçех янкăс саслă Вера-студенткă юрлама хутшăнчĕ, ун хыççăнах Герăпа Петя та юрра тăсма пуçларĕç:

Атьăр вăййа пуçлар-и те
Вăй кĕввине калар-и.
Вăйă кĕвви пĕр сумлăх та
Пирĕн вăйă çĕр сумлăх.

Çĕкленет те хăпарать çӳлтен çӳле пурте пĕлсе тăракан лайăх юрă. Вăрмантан та çӳле çĕкленет. Хăй çĕкленнипе пĕрле çын кăмăлне çĕклет, чуна хăпартлантарать. Урасем те çăмăлраххăн яра-яра пусаççĕ. Кашни куплета юрламассерен Миша çаврăнать те утма чарăнмасăрах уççăн командă парать:

— Ать-два! Ать-два!
Çирĕпрех пус атăпа!
Ать-два! Ать-два!
Ан юл-ха, Ульха аппа!

Ульха аппа юлма пачах шутламасть иккен. Унăн урисем юрă майăн хăйсем тĕллĕнех ать-два туса пыраççĕ. Хăй вăл çавине винтовкă пек, хулпуççи çине хунă. Вачă карчăк мар, вăй питти салтак ку тейĕн.

Чăнах та, вăрман сукмакĕпе пĕрин хыççăн тепри пыракан çынсем салтаксен стройне аса илтереççĕ. Миша çав-çавах малта. Ана юрă командира кăларнă. Ун хыçĕнче шухă Гера хăлаçланать. Петя тăрăс та тăрăс пусать. Лăриван мучи, авалхи кăрнатир пек пулас шутпа, лаптак кăкăрне каçăртса хунă, шĕвĕр сухалне çӳлелле тăратнă. Чăрсăр каччă ват çын сăмахне хисепе хуманни çинчен халĕ вăл мансах кайнă ĕнтĕ. Шăнăр туртса аптăратакан ленчешке урисемпе тек-текех тăппăл-тăппăл тутарать, хăй умĕнчи Петьăран шит те юлмасть. «Утарха утмаллипе, маттурсем, кăрнатирсем»,— текелет. Йăрăс пӳллĕ Вера, хĕп-хĕрлĕ сăнлă Праски инке çăмăллăн кăлт та кăлт яра-яра пусаççĕ. Утă çулакансем пурте никам çĕнми вăйпа талпăнса пыраççĕ. Хыçалта — Ульха аппа. Унăн çави вĕçĕ çинче хĕвел çути хĕç çинчи пекех йăлтăртатать.

Çынсем васкасах малалла утаççĕ. Вĕсене юрă малтан мала чĕнет, урасене çӳлереххĕн çĕклеттерет, çирĕпреххĕн пусма хистет. Акă ăçта иккен чăн-чăн командир! Чăнах та-мĕн, хальхинче тĕп командир — юрă. Кивелми те ватăлми хӳхĕм юрă!

---

# Тавӑру

Пасар урамӗнче, пӗр ишӗлчӗк ҫурт кӗтессинче, кӑвакарнӑ ҫӳҫлӗ, шурӑ сухаллӑ ватӑ ларать. Ун тавра вун-вун икӗ хӗрарӑм пуҫтарӑнса тӑнӑ. Ҫӗр ҫулхи старик юрланӑ пекрех ҫаплалла калать:

— Хисеплӗ йӑмӑкӑм, санӑн мӑшӑру аякра иккен, вӑл халь ӑҫтине эсӗ хӑв та пӗлен. Паттӑр аллинче вутпа хӗҫ вылянать, ҫав вутран-хӗҫрен ҫӗлен вакланать. Ҫӗлен чашкӑрса юнне сирпӗтет, ӗнтӗ ирсӗре вилӗмӗ кӗтет. Унта тӑвӑл урать, вутлӑ ҫиҫӗм ҫиҫет, аслати сасси кӗрлесе тӑрать. Ан кулян, йӑмӑк, ан та шухӑшла: хӑрушӑ тӑвӑл — пирӗн ҫӑлӑнӑҫ. Тӑвӑл иртсен, ҫут хӗвел килет, хӗвелпе пӗрле мӑшӑру ҫитет...

Маринӑн мӑшӑр кусӗнчен вӗри куҫҫулӗ шӑпӑртатса юхса анчӗ. Ытарлӑ каланӑ ҫак вутлӑ сӑмахсем мӗне пӗлтернине вӑл ӑнкарать, хура-шур курнӑ чӗрипе туять. Вӗсем унӑн чӗрине ӑшӑ хӗлхем сапрӗҫ. Ватӑ тӗрӗсех пуплет пулас. Мӑшӑрӗ пирки каланӑ сӑмахсем ҫеҫ вырнаҫуллах мар.

Марина ват ҫын сӑмахӗсене итлесе пӗтермесӗрех ун ывҫине хут укҫа хучӗ, унтан, ҫынсене сӑмах хушмасӑрах, йывӑр утӑмсемпе шухӑшлӑн утса кайрӗ.

Станицӑ урамӗпе тем ҫухатнӑ пек пуҫне пӗксе пычӗ вӑл. Пуҫ усма сӑлтавӗсем пурах ҫав. Унӑн чӗрине нимӗнпе пусарма ҫук хуйхӑ ҫунтарать. Йӗрсе ирттерме ҫук вӑл хуйха. Ҫын-ҫын урлӑ илтӗнекен ӑшӑ хыпарсем ҫеҫ кӑшт лӑплантараҫҫӗ ӑна. Ватӑ чабан, чӑлах Остап, шурӑмпуҫ килнӗ чух хӗвелтухӑҫӗ енче тупӑсем кӗрӗслетнине тата вырӑссем «урра» кӑшкӑрнине илтнӗ имӗш.

— «Ӑҫта-ши эсӗ, Раҫҫей ҫарӗ? Илтетӗн-ши, пӗлетӗн-ши тӑван халӑхун пусмӑрти асапне?»

— Килеççех, килеççех вěсем, хамăрăннисем,— тесе шантаратчě Аким. Хутран-ситрен Аким патне, пěрле ěçленě юлташě тесе, Фрола кěрсе тухкалатчě. Çав типěтнě кăмпа пек типшěм, килěшӳсěр сарлака питлě нăйкăш этем вăрçăччен Акимпа пěрле ěçленě: Аким — бухгалтер, Фрола кассир пулнă. Фашистсем килсен, Фрола полицай пулса тăчě.

— Çаплах чăхăмлатăн пулать... Значăт, апла-капла шухăшлатăн? Ăнлан эсě, Аким, Мускав Гитлер аллинче. Кремльре, факт, вăл хуçа. Тытăн пирěнпе ěçлеме,— тетчě сутăнчăк Фрола.

— Йăнăшатăн эсě, Фрола, ӳкěнмелле йăнăшатăн. Çирěк çулçи çиле май тенě пек, санăн çулу та пěр вăхăта вěрнě çиле май кайрě. Çил тепěр май çаврăнсан, урăх парăссем çěклеме май килмě вěт. Пурнăçа тěрěс баланслামалла. Хамăраннисем çěнтерӳпе килсен, пирěн ěçсене дебет тесе йышăнмаççех. Ас ту, çăвару пиçсен, сивě шыва та вěрсе ěçмелле пулать,— ӳкěтлетчě Аким Фролăна.

— Пурнăç улшăнчě. Значăт, улшăнмиех улшăнчě. Эсě çавна ěненесшěн мар. Пурнăç улшăннă май, значăт, унăн рульне те урăх май тытмалла. Эпě пěлсе калатăп.

Çапла сӳпěлтететчě Фрола. Марина ăна каппайланнăшăн, пурне те пěленçи пулнăшăн тахçантанпах юратман, вăл тěссěр куçěсемпе сиввěн те сěмсěррěн пăхса ларнине аран-аран çеç чăткаланă. Пулать-иç чуна килěшмен çын... Юрать-ха, икě шухăшлă икě «тусăн» калаçăвě нихăçан та вăрăма тăсăлман.

Аким каççерен крыльца çине тухса таçта аяккалла тěмсěлсе пăхатчě. Марина унпа пěрле темиçе хутчен хěвел тухăç енче пěлěт темле синкеррěн хěрелнине асăрханăччě.

— Фронт çывхарса килмест-ши? — тетчě Аким, куç илмесěр çав еннелле пăхса.

Чăнах улшăнми улшăнчě-шим пурăнăç?

Тăван Воронцовкă улшăнман. Станицă çавах, çуртсем те çавах — черепицă, хăма, хăмăш çи витти. Яланхи пекех, урам тăршшěпе симěс акацисен ěречě тăсăлать. яланхи пекех, йывăçсем çинче вěçен-кайăксем чěвěлтетеççě, яланхи пекех, тӳпери хěвел ěнтсе ярас пек хěртет.

Марина, шухăша путнăскер, хăйне хирěç Фрола полицай килсе тухнине асăрхаймарě. Тăхлан вěçлě чěн саламат сывлăшра кěскен кăна шăхăрчě те Марина хул пуççине явăнса пěçертсе илчě.

— Пăхас пулать кам хирĕç пынине! Значăт, утнă çĕрте çывăрса пыратăр! — мăн сасăпа çапла ахăрса пăрахрĕ Фрола.

Марина çан-çурăмĕ вĕри шывпа сапнă пек вĕриленчĕ. Вутсăр çунтарса ярассăн ялтăракан куçĕсемпе пăхса ăсатрĕ полицая Марина. Ӳссе çитĕнсе, çак çула çитсе, çакăн пек мăшкăла курманччĕ вăл.

Çук, улшăннă станицă! Палăрмалла улшăннă. Аслăпуçлă этем тăр кăнтăрла хăй пек çынна ăнсăртран çапнине ас тумасть Марина. Улшăннă станицă. Никам та ăна хирĕç пулса сывлăх сунмарĕ, пĕр çын та чарса ăшă сăмах каламарĕ. Пĕр пĕлĕш те пӳрт умĕнчи чие йывăççи айĕнчен чей ĕçме чĕнмерĕ. Пӳртсенче те шăпах. Вĕсенче çын пурри курăнмасть. Аллипе янахне тĕревлесе, хуйхăллăн ларакан пĕччен хĕрарăм кантăкран вăрттăн пăхса илнине кăна сайраран курма пулать.

Акă, фашистсем, автоматсемпе хăмсарса, арестленисен ушкăнне урампа илсе пыраççĕ. Вĕсене станицă тулашнелле персе пăрахма хăвалаççĕ. Пĕр айăпсăр вырăс çыннисем: вăтам çулхи арçынсем, туя çине таянса утакан ватăсем, пысăк мар çыхă тытнă хĕрарăмсем кăшкăрмасăр, йĕмесĕр утаççĕ.

Пĕр пӳртрен икĕ хĕрача, аппăшĕпе йăмăкĕ, чупса тухрĕç.

— Анне! Анне!

Вĕсем тăван амăшне хирĕç чупрĕç. Вырăс йăхĕн мăнаçлăхне çухатмасăр, пуçне çӳллĕ тытса, вăтам çулхи хĕрарăм ерипен утакан ушкăнран хăюллăн уйрăлчĕ те тăван ачисене хирĕç утăм турĕ.

Марина, çак ушкăнра теплерен Аким çук-ши тесе, айккинерех чарăнса пăхса тăчĕ. Кам-ши ку, ука çӳçлĕ, тăп-тăп пӳ-силлĕ хĕрарăм? Ара, ку Оксанна вĕт. Чăннипех те Оксанна. Мĕншĕн-ха ăна? Упăшки офицер пулнăшăн-ши?

Тулăксăр хĕненипе тата выçă тăнипе вăйсăрланнă Оксанна чупса çитнĕ кĕçĕн хĕрне аллине илме пĕшкĕнчĕ, анчах тискер сăнлă конвоир хĕрачана йывăр аттипе пĕрех тапрĕ те, леш месерле çаврăнса ӳкрĕ. Ун аллинчи сар пурçăнпа илемлетнĕ пукане çул тусанĕ çине ывтăнса кайрĕ. Тĕлĕнмелле, хĕрача йĕмерĕ. Вăл, нимĕн пулман пекех, ури çине йăраланса тăчĕ, пуканине илсе тусанне силлерĕ те каллех амăшĕ патнелле пычĕ. Аслăраххи, аппăшĕ, тăп чарăнчĕ, йĕрсе ярас пек хĕрелсе кайнă пы-

сăк куçĕсемпе ним тума аптăраса пăхса тăчĕ. Сасартăк вăл шартах сикрĕ: конвоир, унăн йăмăкне тĕллесе, автоматран кĕске черет пачĕ, йăмăкĕ, юн юхтарса, тăруках лăпчăнса ларчĕ те пĕкĕрĕлсе ӳкрĕ.

— Тытăр конвоирсене!

Оксанна хаяр сасăпа çапла кăшкăрса ячĕ, мĕн пур вăйне пуçтарса, конвоир çине сиксе ӳкрĕ. Лăпкă та ăслă хĕрарăм, çав самантра хăй чĕппине сыхлакан хăлат пулса тăнăскер, пĕр çылăхсăр ачана амăшне курасшăн пулнишĕн çеç персе вĕлернĕ конвоира ахаллĕн вĕçертместчех, тепĕр конвоир ăна автомат приклачĕпе сывлайми тăвичченех хытă çапса, аяккалла вăркăнтарчĕ. Оксанна куçлăхлă старике пырса çапăнчĕ, старик сулăнса кайрĕ, чутах ураран ӳкмерĕ. Тахăшĕ хыпалансах хĕллехи пасарнă йывăç пек шап-шурă çӳçлĕ старикĕн сирпĕнсе ӳкнĕ куçлăхне илсе пама пĕшкĕнчĕ.

Ушкăнра пынă çынсем пĕр-пĕрин çине пăшăрханса, хăвăрттăн пăхса илчĕç. Анчах ним тума та аптăрарĕç: йĕри таврах конвоирсем, вĕсен аллинче кашни шанчăксăр хусканушăн вилĕм кӳме пултаракан автоматсем хурçă кĕпçисемпе, чуна шиклентерсе, сиввĕн йăлтăртатаççĕ. Конвоирсем автоматсемпе чышкăласа, хыçалтисене васкатрĕç. Çынсем хушшинче пулман пулсан, Оксанна выртсах юлмаллаччĕ, вара конвоир çавăнтах персе пăрахнă пулĕччĕ; çук, ăна хăй пекех телейсĕррисем ӳкме памарĕç.

Марина вĕсене курăнми пуличченех пăхса ăсатрĕ. Ак ĕнтĕ урамра никам та юлмарĕ. Оксаннăн аслă хĕрĕ çеç йăмăкĕн ӳтне çĕклесе кĕреймесĕр кĕрмешрĕ. Марина, пулăшас тесе, ун патнелле тапраннăччĕ, ватă карчăк, асламăшĕ пулас, хыпаланса тухнине курчĕ те каялла çаврăнчĕ.

Чиркӳ таврашĕнче чанасем чакăлтатаççĕ. Марина чарăнчĕ, турра асăнса сăхсăхрĕ. Чиркӳ тăрри ăна майăн 1-мĕш кунĕнчи уява аса илтерчĕ. Çав кун ирхине пĕтĕм станица ун тăрринче хĕрлĕ ялав уявла хаваслăн вĕлкĕшнине курса тĕлĕннĕччĕ. Гитлеровецсем, ялав патне хăпарма хăякан тупаймасăр, чиркӳ таврa çăмарта тума аптăранă чăх пек чупкаларĕç. Çамрăк офицер, çинçе сассипе путишле кăшкăрса, ялава тĕллесе, пистолетран печĕ.

Кам хăйнă-ши çавна тума? Тавçăруллă шухăш Марина пуçне сасартăк пырса кĕчĕ: ку никамăн та мар, Аким

ĕçĕ! Унăн Акимĕн! Халь тин ăнланса илчĕ çакна Марина. Уяв каçĕ Акимăн сĕтелĕ çинче хутпа тирпейлĕн чĕркенĕ хĕрлĕ хăмач тăрăхне асăрханăччĕ. Акă мĕншĕн кирлĕ пулнă вăл Акима!.. Уксахскер, хăех тапаçланнă-ши вара?

Акимах тунă. Анчах пĕччен мар, юлташĕсемпе, ятла тăркачах каçсерен килтен тухса кайса çухалатчĕ, таврăнасса тул çутăлас умĕн çеç таврăнатчĕ. Ирхине станицă çыннисем хӳмесем çинче хĕрлĕпе çырнă листовкăсем вулатчĕç. Çавсене пула лекрĕ те Аким. Пĕр ирхине полицайсем, тем тĕрлĕ усал сăмахпа ятлаça-ятлаça хӳмесем çумĕнчен листовкăсем тăпăлтарнă хыççăн, Фрола Аким килне виçĕ гитлеровеца ертсе пычĕ.

— Ку мĕн?

Вĕсем, чылайччен ухтарнă хыççăн, хутман кăмакаран пысăк хут тĕрки туртса кăларчĕç. Ку тепĕр ушкăн листовкăсем валли хатĕрленĕ хутчĕ. Фрола гитлеровецсем умĕнче тулнă кăмăлпа тем тĕрлĕ йăпăлтатса хуçкаланчĕ.

— Айта, пуçтарăн. Значăт, пĕрле кайăпăр,—терĕ вăл, хĕсĕк куçĕсене Аким çине хаяррăн çиçтерсе.

Вĕсем Акима тĕрткелесех илсе тухса кайрĕç.

Лăпкă кăмăллă, йăваш куçлă Аким ахальтен тăрăшман. Вăл аслă вырăс халăхĕ çĕнтерессе шанса, станицă халăхне хамăрăннисем килеççех тесе ĕнентеретчĕ, чăтăмлăн кĕтме, вăй тата пултарулăх çитнĕ таран тăшмана сиен кӳме чĕнетчĕ. «Тумлам та тумласан-тумласан чула шăтарать»,— тетчĕ вăл.

Аким Фрола капкăнне лекиччен ик эрне маларах хĕрлĕ çăлтăрлă самолетсем вĕçсе иртрĕç. Шăппăн, йăпшăнса ларакан пӳртсенчен халăх кĕпĕрленсе тухрĕ. Ачасем шăхăрса, хаваслăн кăшкăрашса, урампа чупрĕç. Ваттисем, аллисене куç тĕлне тытса, самолетсем вĕçсе кайнă еннелле темĕнччен пăхса тăчĕç.

— Тĕтĕмĕ пур, вучĕ те пулма тивĕç. Вутсăр тĕтĕм пулмасть. Самолечĕсем пур, хуçи те пурах,— терĕ Аким ун чухне.

«Эх, сывă ура парасчĕ мана, фашистсене хамăр çĕршывран хăваласа ярса тĕп тăвиччен те пулин!» Çак сăмахсене вăл час-часах калатчĕ.

Ачаранах уксах ӳснĕ Аким. Марина ăна ырă кăмăлĕшĕн, ăсĕшĕн юрататчĕ. Упăшкине мĕн таран юратнине вăл уйрăмах халь туйса илчĕ. Çук ĕнтĕ тек унпа пĕрле юратнă мăшăрĕ Аким. Йывăр сехетсенче унăн чĕрине лăплантаракан юлташĕ, хуйхăллă шухăшсемпе пусăрă-

накан чуна хавхалантарма пултаракан ҫывăх ҫын текех ҫук. Пурнăҫĕ питĕ йывăр, станицă ҫумĕпе юхса иртекен Кура шывĕ пекех пăтранчĕк. Ҫуралса ӳснĕ станицăра йыхравсăр килнĕ ҫичĕ ют ҫыннисем иртĕхеҫҫĕ. Пурнăҫ пурăнса ирттересси — уй урлă каҫасси мар, пĕччен пурнăҫ йывăр кунсенче чăтмалла мар кичем.

Марина ҫак шухăшсемпе пасар варрине пырса тухрĕ. Унта урамсенчи пекех шăплăх тăрать. Ни кулни, ни хаваслă сутăҫсем хăйсен таварĕсене мухтаса туянма сĕнни илтĕнмест. Мĕнле улшăннă пасар! Кунта ал арманĕпе авăртнă кукурузă ҫăнăхне, тăвара — пĕчĕк куркасемпе, ҫĕр улмине — шутпа сутаҫҫĕ. Кĕпе-йĕм, тумтир таврашне татăк ҫăкăрла улăштараҫҫĕ. Пасарти вырăс ҫыннисен пичĕсенче чуна хурлантаракан салхулăх ҫеҫ курма пулать. Ҫамрăк хĕр пысăк тĕкĕр тытса тăрать. Вăл, шурса кайнăскер, кирлĕ мар пулса тăнă тавара никама та сĕнмест, капăр рамкăллă тĕкĕрне шарламасăр тăсса, сайраран иртсе ҫӳрекенсене мĕскĕннĕн пăхса ăсатать. Ҫамрăк пуҫне йывăррăн уснă ҫинҫе пилĕклĕ чипер хĕр пĕрре сирсе сирĕлми хуйхăллă шухăшсемпе асапланнă пек, тепре тутлă аса илӳсемпе ҫупăрланнă пек туйăнать. Ахăртнех, ăна иртнĕ телейлĕ кунсенче юратнă каччине кĕтнĕ чух ҫак тĕкĕр ҫине пăхса юсанисем асне килеҫҫĕ.

Марина иртсе пынă чух хĕр тĕкĕрĕ ҫине пăхрĕ те хăйĕнчен хăй тĕлĕнсе кайрĕ: тĕкĕр ҫинче ватă сăнлă хĕрарăм. Унăн куҫĕсем путса кĕнĕ, сарлака ҫамки ҫине шур акăш тĕкĕ пек шуралнă ҫӳҫ пĕрчисем усăнса аннă. Марина хăех-ши вара ку? Хăех ҫав. Хуйхă тени такама та ватăлтарĕ.

Выҫăпа сăнран кайнă ҫынсем хушшинче гитлеровецсем хĕвĕшеҫҫĕ. Вĕсем вăрланă е кĕретĕнех туртса илнĕ япаласем сутаҫҫĕ. Ҫичĕ ютран хурахсем килсе тухас умĕн Аким Маринăна кил-ҫуртри хаклăрах япаласене, ҫав шутрах тумтир, кĕпе-йĕм таврашне те пахчана шăтăк алтсах пытарма хушнăччĕ.

— Мĕне фашиста пирĕн тумтирĕмĕр? — тенĕччĕ ун чухне Марина хăйĕн мăшăрне.

— А мĕне вăрра ют ҫын кĕлечĕ? — ответленĕччĕ Аким унăн ыйтăвне хирĕҫ. «Чăнахах та, Аким сăмахĕсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулчĕҫ»,— шухăшласа илчĕ Марина. Вăл сарлака хул-ҫурăмлă, хăнчăр куҫлă гитлеровец аллинче таҫта курнă пек костюм тата тĕрленĕ кĕпе асăрхарĕ.

— Мĕн хак тăрать сирĕн костюмăр? Аҫта, кăтартăр-ха.— Вăл костюмпа кĕпене аллине илчĕ. Гитлеровец Марина ҫине эрех шăршипе сывласа, йĕрĕнчĕклĕн, ҫӳлтен пăхса тăчĕ. Марина сăн-пичĕ хăймине пухнă сĕт пекех кăвакарса кайрĕ.— Ара, ку вĕт Аким костюмĕ!.. Кĕпи те ҫавăнах. Хам тĕрлесе панăччĕ. Кусем мĕн-ши — тĕттĕм хĕрлĕ пăнчăсем? Юн-ши?..

Марина пĕр хĕрелчĕ, пĕр кăвакарчĕ. Кăкăрĕнче тăвăл капланнине палăртасшăн мар пулса, вăл аллинчи кĕпен питĕлĕхне тишкеренҫи пулчĕ.

— Мĕн чухлĕ тăрать тетĕн? Кĕпине те илетĕп. Ме укҫине,— теейрĕ чĕтрекен сасăпа.

Унăн сăмахĕсем тăкăскăн тухрĕҫ. Марина юлашки укҫине хĕрхенмесĕр туяннă костюмпа кĕпене, ванма пултаракан япаласем пек, асăрхануллăн, тирпейлĕн чĕркерĕ. «Акă мĕнле вăхăтсем ҫитрĕҫ, хăвăн япалуна хăв укҫа парса илетĕн вĕт». Лачлаттарсах сурасшăнччĕ вăл пӳрнисене йĕпетсе укҫа шутлакан намăссăр гитлеровеца питĕнчен, анчах усăсăр пулассине ăнланса, урăх чаранса тăмарĕ, пасартан хăвăртах тухса кайрĕ. Унăн урисем вăйсăрланчĕҫ, пĕтĕм кĕлетки ҫемҫелчĕ. Аран-аран сулланса пычĕ вăл. Чĕринче тинĕс шывĕпе те сӳнтерме ҫук пысăк хуйхăн тăвăллă ҫиҫĕмĕ ялкăшса, ухмаха ертес пек асаплантарса ҫунчĕ, фашистсен малтанхи ирсĕрлĕхĕсене курсанах амаланма тытăннă курайманлăх хĕлхемĕ халь ĕнтĕ ҫулăмлансах кайрĕ. Ытла та нумай курчĕ, нумая ăнланчĕ вăл паян. Фашистсем килсе тухнăранпа станицă пурнăҫне кĕрхи сĕм-тĕттĕм каҫăн кичем чаршавĕ хупласа илнĕ пекех туйăнчĕ ăна.

...Юлашки кунсенче тăшман ҫарĕсем станицă витĕр час-часах иртме тытăнчĕҫ. Вĕсем пурте васкаҫҫĕ. Хăшĕпĕрисем ҫеҫ Воронцовкăра ҫĕр каҫма чарăнаҫҫĕ. Ҫавсен шутĕнчен пулнă та каҫ кӳлĕм Аким килне пырса кĕнĕ ултă гитлеровец. Вĕсем хăйсен килне кĕнĕ пекех хăюллăн, шавласа, кулса кĕчĕҫ. Кăвак шинеллĕскерсем, тӳрех тĕпеле иртрĕҫ. Марина ҫине пăхмарĕҫ те. Сĕнессе кĕтмесĕрех хăшĕ сĕтел хушшине, хăшĕ сарнă тӳшек ҫине ларчĕҫ.

Марина вĕсене ырă та, усал та чĕнмерĕ. Вăл тĕпелте туалет сĕтелĕ умĕнче хытса кайнă пек ним хускалмасăр чавсаланса ларчĕ. Унăн ҫырă куҫĕсем ҫеҫ кĕлеткинче пурăнăҫ пуррине пĕлтереҫҫĕ: вĕсем, хăйсенче курайманлăх пытарса, сĕтел ҫинчи пудрă коробкисемпе пушаннă

одеколон флаконĕсем урлă, чĕнмесĕр килнĕ çичĕ ют çыннисене сăнаса пăхаççĕ. Пĕтĕм çурт-йĕрĕн хуçи пулса Марина юлнă. Вăл ответлет халь хăйĕн пĕртен пĕр чĕчĕ ачишĕн те. Халь унăн никама та калама çук. Гитлеровецсем килсе кĕрсен, Маринăна хăйĕн килĕ те хăйĕн мар пек пулса тăчĕ. Пӳртре нӳрĕ тар шăрши кĕрет.

Лара-тăра пĕлмен пĕр фашисчĕ, Клаус ятли, Марина умне пырса тăчĕ. Кивĕ тутăр çыхнă, тĕссĕр платье тăхăннă пулсан та, Маринăн кĕлетки хитре курăнать. Клаус çакна асăрхарех. Вăл пĕр самант вырăс хĕрарăмĕ çине тинкерсе пăхса тăчĕ, лешĕ ун çине пăхманнипе-и, урăх сăлтавпа-и, пӳрнипе кăкăрĕнчен тĕкрĕ, хулĕнчен тытса ăна ура çине тăратрĕ. Гитлер салтакне вырăс çынни ура çинче итлемелле-мĕн. Вăл, вырăсла пĕленçи пек пулса, темиçе хутчен «русска свинья», тесе пакăлтатрĕ. Марина вăл пакăлтатнинчен çакна ăнланса илчĕ: Клаус хуппипе пĕçернĕ çĕр улмине салăпа çиме юратать-мĕн.

— Çук ман çĕр улми,— татсах каларĕ ăна Марина.

— Çук?

Клаус куçĕсем, вăкăринни пек, хĕп-хĕрлĕ хĕремесленсе кайрĕç.

— Çук тетĕн? — ыйтрĕ вăл татах.

Клаус пӳртре пĕр турам та улма тупаймарĕ. Тула тухрĕ, тепĕр самантран кăмăлĕ тулнăн кулкаласа каялла кĕчĕ. Маринăна хăлхинчен ярса тытрĕ, пĕчĕк ачана йĕкĕлтенĕ пек, хăлхинчен туртсах хăй хыççăн илсе тухрĕ.

— Акă, пĕçер.— Вăл чăланта выртакан улма миххи çине пуçĕпе сулчĕ. Ку Маринăн юлашки улмиччĕ.

— Вутă çук,— терĕ Марина, улмине тасатса пĕтерсен.

Клаус ăнланса илсенех пуртă тытрĕ, ун-кун пăхса илчĕ.

Унăн куçĕсем савăт-сапа шкапĕ çинче чарăнчĕç. Вăл шкапа йăпăр-япăрах йăвантарчĕ, ваклама тытăнчĕ. Темиçе çул хушши ларнă сăрăллă шкап вутă пулса тăчĕ. Юлташĕсем хырăмĕсене сăтăра-сăтăра ахăлтатрĕç, Клаус темĕн те шухăшласа тупма пултарнине мухтарĕç.

Тĕттĕм пулнă çĕре гитлеровецсем эрех ĕçрĕç, салăпа çĕр улми çирĕç. Шӳтлерĕç, кулчĕç, мухтанчĕç. Марина кухньăра хĕсĕнсе ларчĕ, ассăн сывлама та шикленчĕ. Тĕксĕм кĕркунне йывăç çинче пĕччен тăрса юлнă çулçă пек, çӳçенчĕклĕн чĕтре-чĕтре илчĕ. Кĕрхи сивĕ çил кăшт вĕрсенех хевтесĕр тăлăх çулçа пылчăк çине татса ӳкерме пултарнă пек, никамран ыйтмасăр, сĕмсĕррĕн хуçа пулса

тӑнӑ ҫичӗ ют ҫыннисем Маринӑна та халиччен пурӑннӑ тӑван килӗнчен пӗр сӑлтавсӑрах кӑларса сирпӗтме пултараҫҫӗ. Унтан та ытларах, ӳсӗрсен пуҫне темле усал шухӑш та пырса кӗрӗ.

Маринӑн, паллах, вилме юрамасть. Вӑл пӗччен мар. Амӑшӗ лӑпкӑн ҫывӑракан чӗчӗ ачи ҫине такам асӑрхасран шикленнӗ пек вӑрттӑн пӑхса илет. Полинка кӑкӑр ӗмнӗ пек пӗчӗк тутисене нӑҫлаттарса ҫывӑрать. Епле илемлӗ вӑл! Хӗрача пулсан та, вӑл пӗтӗмпех ашшӗне пӑхнӑ: пит-сӑнӗ те, чакӑр куҫӗсем те, кулли те — пурте, ӳкерсе илнӗ пекех, ашшӗнни евӗр.

Пӳртре чӑтма ҫук пӑчӑ. Марина кантӑка уҫса ячӗ те, ун питне юхан шыв енчен нӳрӗ сывлӑш килсе ҫапрӗ. Ҫапах та пӑчӑ. Сывлӑш аслатиллӗ ҫумӑр умӗн ҫавӑн пек йывӑрланать.

Тулта хӑрӑм пек хура каҫ тӑрать, куҫран йӗппе тирсен те курас ҫук. Кантӑкран пӑхсан, урамри ватӑ топольсене те уйӑрса илме хӗн. Хӗрӗнкӗ часовой, шнапс ӗҫме черет ҫитессе кӗтсе, ӳркевлӗ утӑмсемпе каллӗ-маллӗ ҫӳрет. Катара, Кура леш енче, тӗттӗме путнӑ улӑхсене ҫутатса, ҫиҫӗм йӑлтлатать. Ҫиҫӗм хыҫҫӑн аслати сасси хӑватлӑн кӗрлесе каять, такама кӳренсе таврана кисретет, вара тусем хыҫнелле янӑраса кайса, тепӗр ҫиҫӗм хыҫҫӑн ҫӗнӗ хӑватпа татах та ҫиллессӗн кӗрлеме пӗр саманта лӑпланать. Маринӑн ахаль те хаяр аслатие татах та хӑватлӑрах кӗрлеттерес килет. Паян унӑн чӗрине тӑвӑр, пӑчӑ. Мӗншӗн ҫав тери пӑчӑ-ши? Часрахчӗ тӑвӑллӑ ҫумӑр! Ҫутӑрччӗ вӑл чӗреслетсе, юхтарса каймалла!..

Гитлеровецсен ӗҫки-ҫики хӑй майӗпе пырать. Вӗсем ӗнтӗ палӑрмаллах ӳсӗрӗлчӗҫ. Сӗтел ҫине пӗр кӗленче пушаннӑ хыҫҫӑн тепри тухса ларать. Вӗсем шавлӑран шавлӑрах калаҫаҫҫӗ. Ҫамрӑкраххи вӗрсе каламалли ҫӑвар купӑсӗ кӑларчӗ те шӑхӑрткалама пуҫларӗ.

— Ӑҫта-ха пирӗн кил хуҫи арӑмӗ? — таҫтан аса илчӗ пӗри.

— Пыр, тупса йӑпат ӑна,— хӗтӗртрӗ юлташне ватӑ ефрейтор, йыт пулли пек йӑпӑлккаскер. Вӑл хӑй те вырӑс хӗрарӑмӗ тесен, тинӗс урлӑ каҫса кайма хатӗр, анчах паян кукурузӑ эрехӗ чылаях хӑватли тупӑннӑ-мӗн: шӑмшакӗ хускалмалла мар йывӑрланса кайнӑ, куҫӗсене пӗр мачча кашти иккӗ курӑннӑ.

Лешӗ ӳсӗр куҫӗсене тискеррӗн йӑлтӑртаттарса, кух-

ньăна тайкаланса кĕчĕ. Маринăна курса, аллисене кăнтарчĕ те ун патнелле ҫывăхарчĕ.

— Я любит русски женщин,— пакăлтатрĕ вăл.

Марина чĕрине ҫӳҫентерекен сулхăн пырса ҫапрĕ. Ой, ӳсĕр гитлеровец пушшех хăрушă. Мĕн кирлĕ ăна манран? Хăйĕнчен тӳсме ҫук эрех шăрши перет. Тăсмака аллисемпе ытакласа илме хăтлансан, Марина сасартăк сиксе тăчĕ, ирсĕре пĕтĕм вăйран чышса ячĕ. Лешĕ кутăнкутăн чакса, сулăнса кайрĕ те Полинкăн пĕчĕк койки ҫине пырса тăрăнчĕ. Полинка вăранса кайрĕ, ĕсĕклеме пуҫларĕ.

— Ан йĕр, хĕрĕм. Қил хам пата.

Марина, ачине тытса, тӳртĕн ҫаврăнса тăчĕ. Алăра чĕчĕ ачи пур ҫĕрте кирек мĕнле сĕмсĕр те, эхер вăл ҫын чĕреллĕ пулсан, пуҫсăрланса ҫыпҫăнмастех.

Қу вара пачах урăххисен йăхĕнчен пулчĕҫ.

— Охо, вырăс сысни! Қама чышма хăять!.. Тăхта-ха, эпĕ сана аслă рейхăн паттăр салтакне хисеплеме вĕрентетĕп...— ҫапла каларĕ унăн тăсмака сăн-пичĕ. Вăл сасартăк чĕчĕ ачине амăшĕнчен туртса илчĕ, ăна хăрах алли ҫине лартса, ывăҫ тупанĕ ҫинчи лĕпĕш ҫине вĕрнĕ пек вĕрчĕ те уҫă кантăкран урамалла ывăтрĕ. «Ах-х...» теме ҫеҫ ĕлкĕрчĕ амăшĕ. Тĕмĕсем хушшине, ҫĕре, ача лачлатса ӳкни илтĕнчĕ. Ачи патне чупса тухакан амăшĕнчен пысăк мыскара тунă пек шăлне йĕрсе, ахăлтатса кулса юлчĕ гитлеровец.

Марина Полинкăна тытас тесе пĕшкĕннĕччĕ ҫеҫ, хăлхине хупламалла янăратса, автомат тăрăлтатрĕ те, темиҫе пульă пĕр айăпсăр чунăн — чĕчĕ ачин ачаш ӳтне тирĕнчĕҫ. Мĕскĕн ача! Амăшĕ аллинче пĕр·ик хутчен туртăнкаларĕ те ҫавăнтах шăпланчĕ, ҫемҫелсе кайрĕ. Ҫиллессĕн хĕреслетсе, ҫывăхрах ҫиҫнĕ ҫиҫĕм ҫутинче амăшĕ Полинкăн чăлт шурă кĕпи ҫине хура лаптăксем сиксе тухнине асăрхарĕ. Алли ҫине вĕри шĕвĕ юн, тăван ачин тăван юнĕ, йăрăлтатса юхса анчĕ. Амăшĕ чăтаймарĕ, ача пек ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.

Ҫав вăхăтра аслати, пĕтĕм тĕнчене кисретсе, ҫинеҫинех авăтса тăчĕ, аҫа ҫапса шартлатрĕ, вара сасартăк шалкăм ҫумăр тăкса антарчĕ. Чĕрене сехĕрлентерсе, хаяр ҫиҫекен ҫиҫĕм ҫутийĕ урамра пĕр самантрах пухăннă шыв кӳлленчĕкĕсем ҫинче сиввĕн йăлтăрани вĕҫĕмсĕр курăнса тăчĕ. Ахăр самана ҫитнĕ пек, пĕтĕм ҫутҫанталăк, ишĕлсе анассăн туйăнса, хăрушшăн тулашрĕ, йĕчĕ, хă-

йён куççулĕпе, çумăр шывĕпе, çĕр питне çиллессĕн чӳхерĕ. Вутлă-тăвăллă аслати, çĕр те пĕр урапапа пысăк кĕпер урлă каçнă пек, хыттăн, татти-сыпписĕр кĕмсĕртетрĕ.

Марина, мĕн пур телейсĕрсен ячĕпе ылханса, татăлса ӳксе йĕрет. Унăн куççулĕ хăй тăрăх юхакан çумăр шывĕпе хутшăнса, хура çĕр çине тăкăнать.

— Аçтан килсе тухрăр-ши эсир, йытă йăхĕсем? Сире путлĕ ама çуратман, ырă вилĕм ан лектĕр сире, сĕмсĕр кашкăрсем! Ылтăн пек ачама вĕлернĕшĕн, этем йăхне тивĕççĕр ĕçĕрсемшĕн сире утнă çĕрте мур тивтĕр, çӳренĕ çĕрте çĕр çăттăр!

Çапла каласа ылханчĕ Марина, кантăк умĕнче автомат тытса тăракан гитлеровецпа унăн юлташĕсем еннелле пăха-пăха. Вĕсем Маринăна этем сăнарлă тискер чĕрчунсем пек туйăнчĕç. Вăл, йĕре-йĕре ылханса, ачине çĕклерĕ те, часовой умĕнчен хăвăрттăн иртсе, кил картинелле кĕрсе çухалчĕ.

Марина, алăка хуллен уçса, путвала кĕчĕ. Пĕр кивĕ тумтир тупрĕ, унпа ачин ӳтне чĕркесе вырттарчĕ. Хăй, аллине пуртă тытса, ачин пуçĕ вĕçне ларчĕ. «Кĕрĕр кăна ман патăма, ирсĕрсем,— хăмсарчĕ вăл пуртăпа тĕттĕмре.— Ку пуртăпа Аким вутă çуратчĕ, унпах сирĕн сĕмсĕр пуçăра çапса тĕпрететĕп!» Нумайччен ларчĕ вăл çапла, тем тĕрлĕ те шухăшларĕ. Маринăн та, ыттисем пекех, пурăнас килет. Пурнăç вăл пуриншĕн те хаклă. Анчах нимĕç хурахĕсен пусмăрĕнчи мăшкăллă пурнăç — пурнăç мар. Ун пек пурнăçпа пурăниччен юн ĕçенсемпе кĕрешсе вилни темиçе хут лайăхрах.

— Тавăрмалла тăшмана, епле пулсан та — тавăрмаллах!

Çак шухăш ăна лăплана пĕлмесĕр асаплантарчĕ, пĕтĕм чун-хавалне тыткăна илчĕ. «Е тăшмана тĕп тăвам, е хам та вилем»,— шухăшлать Марина. Вăл краççын бидонне хыпашласа тупрĕ, краççын мĕн чухлĕ юлнине чухласшăн, ăна чӳхентерсе илчĕ.

Аслатиллĕ çумăр иртрĕ. Çанталăк майĕпен-майĕпенех лăпланчĕ. Ӳсĕр фашистсем ăшă ыйха путрĕç. Пахчаран урамалла пĕр хĕрарăм мĕлки шăвăнса тухрĕ, йĕри-тавра çивĕччĕн пăхкаларĕ те тӳрех вата тополь çумне таяннă часовой патнелле йăпшăнса пычĕ. Вĕри курайманлăхпа, тавăру хавалĕпе вăйланнă алăри çивчĕ пуртă пĕрре çапсах часовой пуçне салатса пăрахрĕ, ылханлă гитлеровец пĕр сас-чĕв те кăларса ĕлкĕреймерĕ. «Ку маншăн тавă-

ру пуçламăшĕ пултăр»,— терĕ Марина шăппăн. Вăл ун-кун пăхрĕ: кантăкран урама, пылчăк çине, тăваткăл çутă ӳкнĕ, сас-чĕв илтĕнмест, пурте çывăраççĕ, ахăр. Вара васкамасăр, шăв-шав пуласран асăрханса, кантăк хуп-писене, тимĕр хăлăпĕсене ярсах, хупса çаврăнчĕ.

Пӳрте кĕресшĕнччĕ, анчах шалтан питĕрсе хунă-мĕн. Марина тарăхмаллипех тарăхрĕ. «Часовой тăратнă хăй-сем, апла пулин те питĕрĕнсе сывăраççĕ. Мулкачсем...» Ним тума аптăрарĕ хĕрарăм. Йӳле пилĕкĕн, аллине пур-тă тытса çӳрет вăл тăван килĕ таврашĕнче. Пĕрре алăка çапса ватма, тепре кантăк ӳкерсе кĕме шухăшлать. Питĕрнĕ пек кăна туйăнмарĕ-ши тесе, алăка тепĕр хут туртса пăхать. Акă, Марина алăк хăлăпне тытнăччĕ, шалта тахăшĕ кăштăртатни илтĕнсе кайрĕ, пĕри «каçхи ĕçпе» е постри юлташне улăштармашкăн тухма хатĕр-ленет ахăр. Ура сассисем алăк патнелле пычĕç, питĕркĕç туртăнчĕ те, алăкран гитлеровец пуçĕ курăнчĕ. Çав са-мантрах Марина пуртине пĕрех сулса ячĕ, лешĕ пусас умĕн пуçĕнчен çапса минĕретнĕ вăкăр пек, чĕркуçленсе ларчĕ, йăванса кайрĕ. Марина ăна пуртă çивĕчĕшпе мă-йĕнчен тепре начлаттарчĕ, вара вилене аяккарах сĕтĕрсе пăрахрĕ.

Вăл, хĕрарăм пулсан та, çаксене шикленмесĕр, хăюл-лăн турĕ. Чĕтремерĕ унăн алли, иккĕленмерĕ унăн чĕри те. Иккĕленсе тăрсан, кирлĕ пек тăваймасан, вăл хăй те пĕтме пултарнине лайăх туйрĕ. Тата мĕн манчĕ-ха вăл? Çăра? Путвал çăри юрать. Ача путвалрах вĕт, ăна илсе тухас

Вăл пӳрт алăкĕ патне пырса, итлесе тăчĕ. Шалтан харлаттарса çывăрнисĕр пуçне нимĕн те илтĕнмерĕ.

— Пулăш мана, ырă турă,— терĕ Марина хăй ăшĕн-че.— Вăл, краççын бидонне йăтса, шăппăн пӳрте кĕчĕ. «Сиссен — хам пĕтĕп, сисмесен — вĕсем пĕтĕç». Мĕн пур хăюлăхне пухса, урайĕнче выртакан ӳсĕрсем тавра краç-çын тăкса çаврăнчĕ. Çакна питĕ асăрханса турĕ. Мари-нăна шăрпăк чăлтлатса тивни те пăшал пенĕ пекех ту-йăнчĕ, вăл хăвăртрах шăрпăкне краççын тăкнă çĕрелле тăсрĕ. Ялт! туса сиксе тухрĕ вут, вăл хăвăрт сарăлса, урайне тăсса пăрахнă тӳшеке хыпса илчĕ, стенасем пат-нелле кармашса, урай тăрăх урăм-сурăм çатăлтатса явкаланма тытăнчĕ. Марина вара часрах пӳртрен вăр-кăнса тухрĕ, уççисĕр питĕрĕнекен çăрапа алăкне пĕр самантрах питĕрсе лартрĕ.

...Асар-писер çулăм çĕкленсе, пĕлĕте тискер хĕрлĕ çутă ӳкнĕ çĕре Марина вăрмана пырса кĕчĕ. Кунта йывăçсем çинчен çумăр шывĕ лăпкăн шăпăртатса тумлать. Халь ĕнтĕ станицăра тапраннă шăв-шав хыçала тăрса юлчĕ. Вăл мăйĕнчен уртăнакан автоматне, часовойăн пулнăскере, майлаштарарах çакрĕ. Çăмăллăн та хăюллăн утрĕ Марина нӳрлĕ сукмакпа. «Тупатăпах партизансене»,— терĕ вăл, ирсĕр фашистсем персе вĕлернĕ ачине хăй çумне чăмăртарах тытса.

Тӳпере çав-çавах юн пек хĕрлĕ çулăм сарăлать, унăн шевли йывăç тăррисем çине ӳкрĕ. «Ку пуçламăшĕ çеç,— шухăшларĕ Марина,— манăн вĕсене ытларах тавăрмалла. Юншăн — юн! Вилĕмшĕн — вилĕм!» Унăн чĕринче курайманлăх вучĕ вăйлăран вăйлă çунса çĕкленчĕ. Çав курайманлăх ăна васкарах утма хистет, сукмакпа вăрмана, шалтан шала, çăлăнăçшăн çапăçакансем патне хăюллăн илсе пырать...

*1945 çул.*

# Манăн янташ Санька

## I.

Çанталăк пĕр килмест çав. Вăл çакнашкал улшăнасса батальонра никам та кĕтменччĕ. Икĕ эрне хушши сывлама çук сивĕ тăчĕ, çиллес çил каскăнланса шинель витĕр хĕрхенӳсĕр касрĕ. Паян вара çанталăк йăлтах улшăнчĕ, çуркуннехи пек çурма ăслăрах пулса тăчĕ тесен те йăнăш пулас çук: самаях ăшăтрĕ, çăмăрпа хутăшлă нӳрлĕ юр çукаласа илчĕ. Ун хыççăн катаран çӳллĕ мар хĕвел йăлтăрти питне кăларса пăхрĕ те, кăчăр юр куçа йăмăхтараракан пулса тăчĕ.

Ватăрах салтаксем темле паллăсем тăрăх эрне малтан часах наступлени пуçланасси çинчен калаçни тĕрĕсе тухрĕ. Салтак чунĕ наступлени пуçланасса чăнах та малтанах сиссе тăрать иккен.

Артподготовкă тул çутăласпа пуçланчĕ.

— Турттар пĕрре, Пожеданов...

Ефрейтор Александр Родионов аллине юлташĕн табак енчĕкĕ патне тăсрĕ. Вăл халиччен пачах туртман. Чикаркка çавăрма хăнăхман пӳрнисем хуçине пĕртте итлесшĕн мар. Тем тери тăрăшсан та, Санька чикаркки-не тикĕс çавăраймарĕ, хутне çыпăçтараймасăр чылай аппаланчĕ. Пĕрремĕш хут тĕтĕм сывласа илсен, чыхăнса кайрĕ.

— Хаяр табак туртатăн эсĕ,— терĕ вăл, пырĕнче тĕтĕм лĕклентернине аран-аран çĕнтерсе.

— Ийя, хӳхĕм... Килтен посылкăпа ярса панией-ха ку,— хуравларĕ Пожеданов.

Каччă пирвайласа туртнине вăл пĕлменçи пулчĕ, куçĕсем çеç тарăн йĕрсем ӳкнĕ çамки айĕнчен вăрттăн кулăпа çутăлса илчĕç.

Командă пуласса кĕтекен салтаксем, Санька сăмаха ăста çапнине пĕлсе, ун патнелле туртăнчĕç.

— Қаласа кăтарт хăв мĕнле авланни çинчен,— хĕтĕртрĕ ăна пĕри.

— Э, çук, авланман эпĕ,— пуçларĕ Санька. Хăй хăмăр куçĕсене чеен хĕссе хучĕ.— Авлантарасшăнччĕ мана вун иккĕре чухне. Ку чăнах та пулнă. Атте вилчĕ мар-и... Кукка мана кӳршĕ яла хăтана илсе кайрĕ. Çул тăршшĕпе вĕрентсе пычĕ: апат çиме ларсан ан ĕмĕтсĕрлен, тет. Эпĕ сана урăнтан тĕкĕп, вара сып. Анчах ас ту, кашни тĕкмессерен пĕрер çеç сыпмалла, тет.

Эпĕ, вун иккĕри каччă, вун саккărти хĕрпе сĕтел хушшинче юнашар ларатăп. Çăмарта яшки илĕртӳллĕн пăсланать. Акă, кукка кăлт тапрĕ урараи, савăнсах кайрăм. Турилкке çинчен тӳрех аш татăкне çавăрса тытрăм. Çăвар патне илсе пынăччĕ — чăма пачĕ ман алăран сĕтел айне.

Санька васкамасăр чикарккине ĕмсе илет.

— Эс малаллине кала! — хистет ăна Пожеданов.

— Сĕтел айĕнче йытă выртнă-мĕн. Эпĕ ăна пĕлмен. Унччен те пулмарĕ, тытăнчĕ кукка ман урана кăлтлаттарса тапма — сыпса ĕлкĕрейместĕп. Авăсатăп кăна. Кукка кашăка туртса илчĕ те лăш хучĕ сĕтел çине. Эпĕ тĕлĕнсех кайрăм: хăй тапать, хăй çиме чарать. Хайхи сĕтел айне пăхрăм: йытă аш татăкне ярса илнĕ те хӳрипе пăлтăртаттарса кăшласа выртa парать. Эпĕ кукка тапать тесе...

Итлекенсем сасăпах ахăрса кулса ячĕç. Вĕсен куллине «Малалла!» командă татрĕ.

Çапла тĕл пултăм эпĕ пĕрремĕш хут гварди ефрейторне, хамăн янташа Санькана. Шӳтник иккен эсĕ, терĕм эпĕ ун чухне хам ăшра.

## II

Те хăйсем пултарайманран, те гитлеровецсем сыхă тăнăран, разведчиксем юлашки вăхăтра çине-çинех пушă алăпа таврăнчĕç. Тен, çавăнпа пулĕ, икĕ кун çухалса пурăннă хыççăн, тĕтрелле ирпе, кĕçĕн сержант Родионов тăшман офицерне лектерсе килни пĕтĕм батальоншăн

мухтанса калаçмалли хыпар пулчĕ. Санька «чĕлхене» ыттисем пек михĕпе йăтса мекеçленмен. Юн пĕрĕхесле хĕрлĕ питлĕ офицер, чылаях хулăнскер, кĕçĕн сержант умĕн хăех сурăх пек йăваш утнă, хушăран çеç вăрăлла ун-кун пăхкаласа пынă.

Санька хăйĕн кутамккине офицер çине çакнă, ун çинех ула-чăла плащне уртса янă. Лешĕ, шăпипе килĕшнĕ ашакла, хирĕçлемесĕр йăтса пырать.

— Ку ашак хăв утлансан та аптăрамĕ! — терĕм эпĕ янташа батальон штабне кĕнĕ чухне.

«Чĕлхешĕн» хĕпĕртенĕ комбат тыткăнри гитлеровеца пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанне çити, ура тупанĕнчен пуç тӳпи таран куçпа виçсе тухрĕ. Унтан пуçне кĕçĕн сержант енне пăрчĕ:

— Мĕн вăл аллисене кăвапи тĕлĕнчен пĕртте илмест?

Тавăрса каласса кĕтмесĕр комбат гитлеровец аллисене вăйпа айккинелле сирчĕ те, ак тамаша: лешĕн йĕмĕ анчĕ-ларчĕ. Вăрăм френч айĕнчен çăмламас урасем курăнчĕç.

— Унăн тӳмисене эпĕ веçех касса татрăм...

Штабрисем пурте ахăлтатса кулса ячĕç. Пуçтах фашист акă мĕншĕн йăвашланнă иккен! Йĕммипе тăлланса ӳкесрен хăранă...

Çапла тĕл пултăм эпĕ иккĕмĕш хут гварди кĕçĕн сержантне, хамăн янташа Санькана. Эсĕ шӳтник çеç мар, мыскараçă та иккен, терĕм эпĕ ун чухне хам ăшра.

## III

...Куçпа виçсе илейми анлă ыраш уйĕ ытарайми илемпе хумханать. Санька тин çеç вырса çыхнă кĕлте çинче ларать. Пиçнĕ ыраш шăрши каччă сăмсине кăмăллăн кăтăклантарать, ăна канлĕн тĕлĕрттерет. Пĕр енчен кăна хытă хăмăл хăрах хулне лексе, чĕпĕтнĕ пек ыраттарать. Санька çакна асăрхаманçи пулма тăрăшать. Вăл вырнă чухне çурлапа хăрах пӳрнине касса татнă. Звеньевой — савнă хĕрĕ Галя ăнланмалла мар ăшă сăмахсем каласа, каччă аллине шурă бинтпа пиелет. Хĕр унпа юнашарах, сасси вара таçта аякра пек илтĕнет. Вăл калакан сăмахсене уйăрма та йывăр. Çитменнине тата паян тӳпери хĕвелĕ питĕ хĕрӳллĕн пĕçертет. Унăн çăвара типĕтекен вĕри пайăркисем пĕтĕм ӳт-пĕве витĕр шăтарса тухаççĕ. Хăть пĕр çăвар сивĕ шыв пулинччĕ!

— Хăть пĕр çăвар çеç! — сасăпах каласа ярать вăл.

Такам çăвар патнех пăккине уçнă флягă тăсать. Шывĕ флягăра кăшт кăна, унран спирт шăрши кĕрет. Санька çăтăхса флягăра мĕн пур пеккине йăлтах ĕçсе ярать, вара часах ӳт-пӳ тăрăх ырă туйăм электричествă токĕ пекех хăвăрттăн сарăлса каять.

Галя хăй ĕçнех тăвать.

— Ан пăшăрхан. Ан кулян, авланиччен пĕтĕмпех тӳрленет,— тет вăл каччăна лăплантарса.

Галя çав тери васкавлăн ĕçлет, ыратакан сурана çыхать. Ĕçленĕ майăнах çепĕççĕн, ачашшăн калаçать.

— Мĕн калас, татăк пӳрнеллĕскере качча тухма хăв та килĕшес çук вĕт, Галя! — тет Санька, касăлнă пӳрни тӳсмелле мар ыратать пулин те шӳтлĕ сасăпа.

— Пӳрнӳ кăна мар, аллу ванса кайнă. Пульă кăкăрна шăтарса тухнă,— хуравлать ăна çепĕç хĕр сасси.

Тăхта, Санька ку сасса таçта илтнĕ. Вăл сасартăк тăна кĕчĕ, ерипен куçне уçрĕ, хăй çывăхĕнчи çынсем çине пĕр вăхăт мăчлаттарса пăхрĕ те куçĕсене каллех хупрĕ. Йывăр аманнă сержант шинель тăхăннă Гальăна, рота командирне тата Пожеданова палласа илчĕ.

— 19 фашиста кăнтнă вăл. Юриех шутласа пăхрăм,— тет Пожеданов.

Санька каллех куçне уçать.

— Пысăк тав сана, Родионов. Орден пама тăрататпăр. Часрах сывал. Тата санитаркă Галина Петрова: сана паллатăп, хамăр ялсем вăл, тет. Суранусене çав çыхрĕ. Вăл пирĕн ротăна эсир разведкăра чухне килчĕ.

Рота командирĕ татах, татах калаçрĕ, хăюллă сержантăн паттăр ĕçне ырларĕ, анчах Санька тем ун сăмахĕсене ăнланми пулса пычĕ. Пожеданов сăмахĕсем аманнăскерĕн хăлхине таçтан-аякран илтĕнеççĕ пек, юлашкинчен, акă, вĕсем ăна пĕр кĕвĕллĕ юрă евĕр туйăнма тытăнчĕç. Санькан куç хупанкисем йывăрланнăçемĕн-йывăрланчĕç, такам çывăрма хистесех хистерĕ пек.

Сержант каллех тăнне çухатрĕ.

— Санька! — хăраса кăшкăрса ячĕ Галя,— Санька, тусăм!

Аманнă салтак ун сассине илтеймерĕ ĕнтĕ.

Санитаркă Галя вара сержантăн юнпа пĕвеннĕ гимнастерки кĕсйинчен хăй ячĕпе çырнă çыру кăларчĕ те унти йĕркесене, пичĕ çинчи куççулĕсене пĕчĕк тутăрĕпе шăла-шăла, вула пуçларĕ.

Çапла тĕл пултăм эпĕ виççĕмĕш хут гварди сержантне, хамăн янташа Санькана. Шӳтник те мар, мыскараçă та мар, чăн-чăн паттăр иккен эсĕ, терĕм эпĕ ун чухне хам ăшра.

Унпа тăваттăмĕш хут курнăçма тĕл килмерĕ. Галя та ăна урăх тĕл пулайман. Вăл госпитальре операци тунă чухне вилсе кайрĕ.

Санька сăнĕ халĕ те ман куç умĕнчех, ячĕ те асран тухмасть. Хамăн янташ аса килсен, эпĕ «Вăр-хурах империалистсене çăварлăхласчĕ, вĕсенĕ вăрçă урапи çине ларма текех ирĕк парас марччĕ»,— тетĕп.

*1946 çул.*



ТУПМАЛЛИ

Усăк хăлхасĕм . . . . . . . 3
Ҫапла тата лайăхрах . . . . . . 13
Пукра . . . . . . . . . 18
Пурте йĕркеллех . . . . . . . 21
Марье Марак . . . . . . . . 30
Пуҫлăхра чухне . . . . . . . 40
Ҫыхман ҫапă шăпăр мар . . . . . 47
Кĕлĕм, Энтри тата Чăрăш. Легендă . . 70
Кипарис мĕншĕн хӳхĕм? Юмах . . . 72
Юрă хăвачĕ. Лирикăлла новеллă . . . 79
Тавăру . . . . . . . . . 84
Манăн янташ-Санька . . . . . 97

Иван Яковлевич Тенюшев

**РЫБА В РЕКЕ — НЕ В РУКЕ**

**РАССКАЗЫ**

На чувашском языке

Художник В. И. Агеев
Редактор Ф. Е. Уяр
Художественный редактор М. А. Ильин
Технический редактор Г. П. Петров
Корректор З. И. Герасимова

НТ 03570. Сдано в набор 18-VI-1965 г. Подписано к печати 20-VIII-1965 г. Изд. № 48. Физич. печ. л. 3,25: Условный печ. л. 5,46. Учетно-изд. л. 5,30. Заказ 2690: Тираж 4000 экз. Цена 26 коп.

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, К. Маркса, 36

Типография № 1 Управления по печати
при Совете Министров ЧАССР
Чебоксары, Володарского, 5.

## ХИСЕПЛЕ ВУЛАКАНСЕМ!

Чăваш кĕнеке издательстви сире валли юлашки вăхăтра çакăн пек кĕнекесем пичетлесе кăларчĕ:

Агаков Л. Салтак ачисем. Повеç. 304 стр. Хакĕ 60 пус.

Акимов М. Вăхăтсăр вилĕм. Драмăсем. 80 стр. Хакĕ 20 пус.

Антонов С. Асли. Ленин çинчен çырнă калавсем. 60 стр. Хакĕ 9 пус.

Артемьев А. Çунатлă çуралнисем. Повеçсем. 268 стр. Хакĕ 62 пус.

Белов М. Аксусем. Повеç. 116 стр. Хакĕ 28 пус.

Железников В. Улттăмĕш «Б» класри мыскараçă. Калавсем. 184 стр. Хакĕ 37 пус.

Иванов-Таçук Т. Талпиçен. Сăвăсем. 66 стр. Хакĕ 11 пус.

Коллектив. Юрăсем. 128 стр. Хакĕ 47 пус.

Козлов М. Çутçанталăк вăртгăнлăхĕсем. Калавсем. 32 стр. Хакĕ 10 пус.

Малгай И. Атăл çилĕ. Сăвăсем. 68 стр. Хакĕ 10 пус.

Никитин Н. Хамăр хушăра. Шӳтле калавсемпе сăвăсем. 116 стр. Хакĕ 23 пус.

Юхма М. Çăлтăрсем чĕнеççĕ. Повеç. 120 стр. Хакĕ 30 пус.

Ухсай Я. Ту урлă çул. Поэмă. 312 стр. Хакĕ 84 пус.

Асăннă кĕнекесене книготорг, потребсоюз магазинĕсенче тата союзпичет киоскĕсенче туянма пулать.

Цена 26 коп.